к 83.8
М 54
ч-43133

А. И. Мефодьев

# ЧӐВАШ АЧА-ПӐЧА ЛИТЕРАТУРИ

## 20–30-МĔШ ÇУЛСЕМ

*Вĕренӳ пособийĕ*

Шупашкар
2010

А. И. Мефодьев

# ЧӐВАШ АЧА-ПӐЧА ЛИТЕРАТУРИ

## 20–30-МӖШ ҪУЛСЕМ

*Вӗренӳ пособийӗ*

Шупашкар
2010

Раççей Федерацийĕн вĕрентӳпе ăслăлăх министерстви
Федераллă вĕрентӳ агентстви

Аслă професси пĕлĕвĕ паракан
патшалăх вĕрентӳ учрежденийĕ
«И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх
педагогика университечĕ»

**А. И. Мефодьев**

# ЧĂВАШ АЧА-ПĂЧА ЛИТЕРАТУРИ

## 20–30-МĔШ ÇУЛСЕМ

*Вĕренӳ пособийĕ*

Шупашкар
2010

УДК 821.512.111–93(075.8)
ББК 83.83 (2 Рос – Чув) 6я73
М – 549

**Мефодьев, А. И. Чувашская детская литература. 20–30-е годы** : учебное пособие / А. И. Мефодьев. – Чебоксары : Чуваш. гос. пед. ун-т, 2010. – 144 с.

Печатается по решению ученого совета ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И. Я. Яковлева»

В работе впервые основательно освещена история чувашской детской литературы 20–30-х годов XX века.

Научный редактор доктор филологических наук, профессор П. Н. Метин.

Рецензенты:

*В. П. Никитин,* канд. филол. наук, доцент кафедры чувашской литературы ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И. Я. Яковлева»;

*Н. Н. Осипов,* канд. филол. наук, доцент кафедры чувашской литературы ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И. Я. Яковлева»;

*В. Г. Кошкин,* доцент Чебоксарского кооперативного института (филиала) АНО ВПО ЦС РФ «Российский университет кооперации»;

*Г. Л. Никифоров,* учитель высшей категории чувашского языка и литературы МОУ «Лицей-интернат им. Г. С. Лебедева г. Чебоксары».

© Мефодьев А. И., 2010
© ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И. Я. Яковлева», 2010

# УМСĂМАХ

20-30-мĕш çулсем унчченхи Совет Союзне кĕнĕ мĕнпур союзлă тата автономиллĕ республикăсенче, çав шутра чăваш тăрăхĕнче те, чĕрĕлӳпе çĕкленӳ тапхăрĕ пулнипе палăрса тăраççĕ. Ăна 1917 çулхи Аслă Октябрь пăлхавăрĕ çуратнă. Татăклă ырă улшăнусем экономикăпа социаллă пурнăçăн, культурăн пур енĕнче те пулса иртнĕ. Пĕтĕм чăваш литературипе пĕрлех унăн уйрăлми пайĕ шутланакан ача-пăча сăмахлăхĕ те çĕнелӳпе çитĕнӳсен çулĕ çине тăнă.

Чăваш ачисен литературине тĕпченин пĕлтерĕшĕ каламасăрах паллă, мĕншĕн тесен вăл тахçантанпах ĕнтĕ тăван çырулла сăмахлăхăн чи кирлĕ те пĕлтерĕшлĕ юпписенчен пĕри шутланать. Ку литература ачасен ăс-хакăл пурнăçĕнче питех те кирлĕ вырăн йышăнать. Анчах та, тĕлĕнмелле пулин те, чăваш филологи ăслăлăхĕнче ку таранччен те ача-пăча литературин историйĕн, çавăн пекех унăн поэтикин ыйтăвĕсемпе те пĕр пĕтĕм тулли тĕпчев çук-ха. Шăпах çав сăлтав пире çак ĕçе çырма хистерĕ те ĕнтĕ.

Тăван халăх ачисен литератури çуралса йĕркеленнине эпир «Чувашская детская литература. Истоки, возникновение, формирование» кĕнекере (Шупашкар, 2008) çырса кăтартнăччĕ. Хальхинче вара унăн 20-30-мĕш çулсенчи аталанăвĕ пирки чарăнса тăрасшăн.

Аслă Октябрь пăлхавăрĕ хыççăнхи тапхăрта чăваш ача-пăча литературине йĕркеленсе çитме партипе комсомолăн тата патшалăхăн культура енĕпе кăларнă йышăнăвĕсем пысăк витĕм кӳнĕ. Уйрăмах партин XI–XIII съезчĕсен (1922–1924) йышăнăвĕсем, Тĕпкомăн «Партин литература тĕлĕшĕнчи политики çинчен» (1925) тата «Çамрăксен тата ачасен пичетне лайăхлатмалли меропри

ятисем çинчен» (1928) документчĕсем пĕлтерĕшлĕ пулнă.

Вăтăрмĕш çулсен пуçламăшĕнче ВКП(б) Тĕп комитечĕ совет ача-пăча литератури пирки ятарласа икĕ йышăну кăларать: «Çамрăк гварди» издательство çинчен» (1931) тата «Ачасен литературин издательстви çинчен» (1933). Комсомол та айккинче тăрса юлмасть. ВЛКСМ Тĕпкомĕ ача-пăча литератури енĕпе Пĕрремĕш канашлу ирттерет (1936). ВЛКСМ IX съезчĕ (1931), комсомол Тĕпкомĕн X пленумĕ (1939) çак ĕçе хăйне евĕр витĕм кӳреççĕ.

1934 çулта Мускавра совет çыравçисен пĕтĕм союзри пĕрремĕш съезчĕ пулса иртет. Унта А. М. Горький совет литературин аталану малашлăхĕ çинчен доклад тăвать. Вăл ăсчахсемпе инженерсене, педагогсемпе ытти паллă çынсене ачасем валли хайлавсем çырма чĕнсе калать. Съездра С. Я. Маршакăн ача-пăча литератури тата ăна малалла ярас тĕлĕшпе тăракан задачăсем çинчен тунă докладне итлесе сӳтсе яваççĕ. Съезд йышăнăвĕсенче ача-пăча литературине массăллă тиражпа пичетлесе кăлармалли малашлăх планне тумаллине кăтартса хăвараççĕ, çав плана пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе татăклă ĕçсем тума палăртаççĕ.

Горький хăйĕн статйисенче яланах ача-пăча литературин хăйне евĕрлĕхĕ çинчен аса илтерет, «вăл сăнарсен чĕлхипе калаçмалли, илемлĕ те сăнарлă пулмалли пирки» астутарать. «Пире хаваслă, вăйă-кулăллă та йăпатуллă, ачан шӳтпе кулăш туртăмне аталантаракан кĕнеке те кирлĕ», – тет. Унăн шучĕпе, «ача-пăча литературине килекен автор вулаканăн çул хисепĕпе çыхăннă мĕн пур уйрăмлăхне асра тытса тăма тивĕçлĕ. Çавна пурнăçламасан унăн кĕнеки адрессăр, ни ачана, ни çитĕннине кирлĕ мар пулса юлать». Çапла вара, аслă классик писательсене ача-пăча литературин хăйне евĕрлĕ уйрăмлăхĕсем пуррине яланах асра тытма

хистенĕ. Горький çĕр-шыври вырăс мар халăхсен çыравçисемпе, çав шутра чăваш писателĕсемпе те, çыхăну тытнă, çырусем те çӳретнĕ. Вĕсене куллен канашсем парса, пулăшса пынă. Çавăн пекех çак тапхăрта Н. Крупская, В. Маяковский, С. Маршак, К. Чуковский тата ыттисем те çĕнĕ ача-пăча литературишĕн çине тăрса кĕрешнĕ.

Парти обкомĕ те чăваш ача-пăча литературине аталантарма хăйĕн тӳпине хывать. 1932 çулхи раштавра «Ачасен литературине пичетлесе кăларасси мĕнле пынине» ятарласа бюро ларăвĕнче сӳтсе яваççĕ, малашлăхра ку енĕпе нумай тĕрлĕ ĕçсем ирттерме палăртса хураççĕ. ВКП(б) обкомĕн секретарĕ Я. Павлов 1940 çулхи раштавра «Чăваш коммуни» хаçатра «Ачасен илемлĕ литератури çинчен» пысăк статья кăларать.

20-мĕш çулсен варринче çыравçăсен «Канаш» пĕрлешĕвĕ ку ыйтупа пуçласа хăйĕн сассине парать. Çак союз бюровĕн отчечĕ тăрăх йышăннă резолюцире çапла çырса хураççĕ: «Ача-пăча кĕнеки кăларнă чух вырăсларан çеç куçармалла мар, оригинал та пулмалла»[1].

30-мĕш çулсен пуçламăшĕнче чăваш ача-пăча литературине халалланă официаллă документсен йышĕ самаях хутшăнать. Вĕсенче, тĕпрен илсен, ачасемпе çамрăксен литератури «идеологи фронтĕнче большевикла çивĕч хĕç-пăшал пулмалла» текен шухăш никĕсре тăрать. Партин çак идейисене çирĕплетсе Чăваш писателĕсен ассоциацийĕ (каярахпа – оргкомитечĕ), «Канаш» хаçат редакцийĕ тĕрлĕ йышăнусем тăваççĕ. ЧАПП IV съезчĕн постановленийĕнче çак йĕркесене вулатпăр: «Культура революципе колхоз строительстви, пилĕк çуллăх плана туса çитерессипе класс тăшманĕсемпе кĕрешесси, интернационалла вĕрентӳпе политехнизм

---

[1] Сунтал, 1925, 8№, 12 с.

ыйтăвĕсем йăлтах ача-пăча литературинче тивĕçлĕ вырăн йышăнмалла»[2]. А. Отачкинăн ЧППА Пленумĕнче тунă доклачĕн тезисĕсемпе паллашар-ха тата: «Ача-пăча кĕнеки коммунистла воспитани парас ĕçре паллă оруди пулса тăрать. Вăл пролетарилле литературăн татăлми пайĕ пулмалла. Ача-пăча литератури ачасенчен çĕнĕ çынсем, активлă строительсем, ударниксем тума пулăшмалла... Произведенисенче социализм строительствин паянхи задачисем çителĕклĕ уççăн палăрса тăмаççĕ. Хăш-пĕр авторсем коммунизмла воспитани ыйтăвĕсене тĕп-тĕрĕс марксистла-ленинла çутатса парайманни палăрать. Класс кĕрешĕвĕ чылай произведенисенче тĕрĕс çутатăнмасть... Коллективлă геройсене кăтартакан интернационаллă воспитани паракан произведенисем пĕрех те çук»[1]. Тепĕр çĕрте Чăваш совет писателĕсен оргкомитечĕ пионерсемпе писательсене тата педагогсене çапларах чĕнсе калать: «Ачасене ӳссе пынă çĕрте социализм тăвас ĕçе çыпăçтарса тăракан, строительствă ĕçĕшĕн кĕрешекен, ачасен творчестви ĕçне çитĕнтерекен, активлăха хăпартакан, вĕсен обществине пуянлатса материализмлă мировоззренине ӳстерекен литература кирлĕ пире»[2].

ВКП(б) Чăваш обкомĕн секретарĕ Я. Павлов «Ачасен илемлĕ литератури çинчен» статьяра «ача-пăча литератури, çитĕннисен литератури пекех, – ăслă учитель, пурăнма, социализмшăн кĕрешме вĕрентекен учиетль пулмалла; кашни произведенирех пурнăçри явленисем çине большевиксен куçĕпе пăхни кирлĕ; ачасен илемлĕ литературине тăвас ĕçре сталинла тăрăшни кирлĕ»[3], тет.

---

[2] Сунтал, 1930, 10–11№, 40 с.
[1] Чăвашсен халӗхи ача-пăча литератури // Сунтал, 1931, 11№, 29–30 с.
[2] Сунтал, 1933, 8№, хуплашкан шал енĕнче.
[3] Чăваш коммуни, 1940, декабрь, 19.

Официаллă органсем хыççăн уйрăм çыравçăсемпе тĕпчевçĕсем те хăйсен статйисенче çав шухăшсенех çине тăрса сараççĕ. Вĕсем мĕн калас тенине материалсен ячĕсенченех туйса илетĕн: «Большевикла ача-пăча литературишĕн» (И. Яковлев, Л. Агаков), «Ачасене – большевикла кĕнеке» (Л. Агаков), «Эпир хĕрлĕ кĕнекесемшĕн» (В. Сергеев), «Ачасене пролетарилле çĕнĕ юрăсем парассишĕн» (Ф. Меценатов).

20-30-мĕш çулсенчи ача-пăча литератури çинчен ăслăлăх теорийĕ çине таянса профессиллĕ шайра çырнă пысăкрах ĕçсем вара совет саманин чылай каярахри тапхăрĕнче çуралаççĕ. Ку енĕпе уйрăмах М. Сироткинпа В. Канюков тĕпчевĕсем палăрса тăраççĕ. М. Сироткинăн «Чăваш совет литератури 30 çул хушшинче» статйинче çакнашкал йĕркесем пур: «20-мĕш çулсенче чăваш литературинче ача-пăча литератури пуçланса каять. Ку тĕлĕшпе чăваш халăх поэчĕ Н. И. Полоруссов-Шелепи, Трубина Мархви, Л. Я. Агаков активлă ĕçлеççĕ. Каярахпа çав ĕçе К. Чулкаç хутшăнать»[1]. Тепĕр çирĕм çул иртнĕ хыççăн паллă ăсчах хăйĕн çав шухăшĕсене тата сарарах калать: «Пĕтĕм литературăпа пĕр пек идейăллă пулнипе пĕрлех унăн хăйне уйрăм тематика та, сăнарсен хăйнеевĕрлĕхĕ те пулнă. Н. Шелепи юрри-сăввисенче, Хумма Çеменĕн, Трубина Мархвин тата ытти ача-пăча писателĕсен калавĕсемпе пьесисенче пуринчен ытларах ачасем общество ĕçне явăçни çинчен, малтанхи пионер отрячĕсен ĕçĕ-хĕлĕн хаваслăхĕ çинчен калани тĕп вырăнта тăнă. Ача-пăча валли ятарласа çыракан малтанхи совет писателĕсен пултарулăхĕн новаторла енĕсенчен пĕри вăл ӳссе пыракан çамрăк ăру общество пурнăçне активлă хутшăннине кăтартса пани пулнă»[2]. Çав вăхăтрах çакна та каласа хăвармалла:

---

[1] Чăваш совет литературин хрестоматийĕ. – Шупашкар, 1948. – 23 с.

[2] Чăваш совет литератури. – Шупашкар, 1972. – 46 с.

М. Сироткин, ача-пăча литератури аталанăвĕн пĕтĕмĕшле çул-йĕрне тĕрĕсех палăртнипе пĕрлех, хайлавсен пахалăхне палăртнă чух ытларах вĕсен воспитани пĕлтерĕшĕн шайне тĕпе хума тăрăшать-ха, сăнарлăхпа илемлĕх ыйтăвĕсем пирки ытлашши чарăнсах тăмасть.

Пĕчĕккисен 20-30-мĕш çулсенчи литературине тарăнрах та тĕплĕнрех тĕпчекенĕ В. Канюков шутланать. Вăрçă хыççăн вăл «Чăваш ача-пăча литератури аталанăвĕн тĕп тапхăрĕсем» монографи хатĕрлет. 1954 çулта ун тăрăх кандидат диссертацийĕ хӳтĕлет. Çак ĕçре вăл наци ача-пăча литературин 20-30-мĕш çулсенчи утăмĕсем пирки тĕплĕнрех чарăнса тăрать. Çамрăк ăсчах тепĕр пилĕк çултан чăваш ача-пăча сăмахлăхĕн классикĕ çинчен «Трубина Мархви» (1959) кĕнеке кăларать. Каярахпа вăл «Вăтăрмĕш çулсенчи чăваш литератури» очеркра çак вăхăтри пĕчĕккисен сăмахлăхĕ пирки пĕлтерĕшлĕ пĕтĕмлетӳсем тăвать: «Идейăлăхпа ăсталăх тĕлĕшĕнчен çирĕпленсе пыракан чăваш литературинче çамрăксем валли ятарласа çырас туртăм палăрмаллах аталанать, ача-пăча литератури вăй илет»[1] тет. Пултаруллă ученăй хăйĕн ĕçĕнче «Ачасене социализмлă çĕр-шыв пурнăçĕпе паллаштаракан, самана утăмĕпе тан пыма хавхалантаракан произведенисем тухнине, ялти колхоз строительствипе класс кĕрешĕвĕ, çамрăксем ялта çĕнĕ культурăшăн кĕрешни, граждан вăрçи паттăрĕсем тата ытти темăсем мала тухса пынине, парти çул пуçĕсен, революционерсемпе çар пуçĕсен сăнарĕсене сăнлакан биографилле произведенисене ачасем валли чăвашла куçарас ĕçе йĕркеленине, ача-пăча поэзийĕ вăй илнине, ачасем валли хывнă халăх сăмахлăх жанрĕсем литературăна çул тупнине, куçару ĕçĕ аталаннине»[2] тĕрĕс палăртать. Çапах та В. Канюков та,

---

[1] Чăваш совет литератури. – Шупашкар, 1972. – 107 с.
[2] Çавăнтах.

М. Сироткин пекех, ача-пӑча литературин историне, тӗпрен илсен, идейӑлӑх, тематикӑпа сюжет енчен пӑхса ҫырас ҫулпах каять-ха. Литература ӳсӗмне, аталанӑвне палӑртнӑ чух уншӑн та, совет саманинчи ытти нумай литературоведсемпе критиксемшӗнни евӗрлех, хайлава хакламалли тӗп виҫе ҫыравҫӑсем унта илемлӗх тӗнчине, ҫамрӑк геройсен сӑнарӗсене мӗнлерех мелсемпе калӑплани мар, пӗчӗк туссен чунне, ӗмӗт-шухӑшне еплерех уҫса пани мар, вӗсем партилӗхпе класлӑх ыйтӑвӗсене, коммунизмпа социализм идейисене ҫӳллӗ шайра ҫутатни шутланать-ха. Вӑл тӗпчевӗсенче «социализмла реализм», «социализмла чӑнлӑх», «коллективлӑ ӗҫ», «революцилле аталану», «коммунизмла воспитани», «чӑвашсен буржуалла националисчӗсем» ӑнлавсемпе час-часах ахальтен усӑ курмасть ӗнтӗ. Ачасемпе ҫамрӑксен литератури ҫинчен ҫырнӑ тӗпчевӗнче критик ялта класс кӗрешӗвне, кулак сӑнарне схемӑласа сӑнланӑ хайлавсене – Трубина Мархвин «Мучар» повеҫӗпе И. Ивникӑн «Павлик Морозов» поэмине, ҫавӑн пекех ҫак сӑвӑҫӑн совет саманинчи чӑнлӑха ытлашши хитрелетсе ӳкернӗ «Телей ҫулӗ» юмахне – сӑлтав ҫук ҫӗртенех чи пахисен шутне кӗртет.

Юлашки ҫирӗм ҫул хушшинче ҫӗр-шывӑн социаллӑ-экономикӑллӑ тата культура пурнӑҫӗнче улшӑнусем нумай пулса иртрӗҫ. Ӑслӑлӑхпа тӗпчевре те паян ҫӗнӗлле курӑм чи кирлӗ задачӑсенчен пӗри пулса тӑрать. Историпе литература аталанӑвӗн пур енӗсене те халӗ урӑхларах куҫпа тиркевлӗ пӑхса тухса хаклама тивет. Ку чухнехи наука сӑмахлӑхпа ӳнерти юхӑмсене класлӑх тӗлӗшӗнчен ҫеҫ тишкерес ҫултан хӑтӑлма хушать. Хальхи ӑслӑлӑх стереотипсене, хатӗр схемӑсене, идеологипе политика формисене йышӑнмасть, тӗпчевсенче пӗтӗм этемлӗх ячӗпе ҫыхӑннӑ чи кирлӗ ыйтусене пӑхса тухассине мала хурать.

Ҫавна май паян чӑваш ӑслӑлӑхӗнче те ача-пӑча

литератури историйĕн кашни тапхăрне, çав шутра унăн 20-30-мĕш çулсенчи аталанăвне те, çĕнĕлле тĕпчесе хаклас проблема çивĕччĕн тăрать.

Кĕнеке авторĕ хăй умне 20-30-мĕш çулсенчи ача-пăча литературин кун-çулне, тĕпчевçĕсен çак ыйтупа ку таранччен кăларнă ĕçĕсене тепĕр хут тиркевлĕ куçпа пăхса, паянхи литературоведени хушнисене асра тытса, поэтика ыйтăвĕсене тĕпе хурса çĕнĕлле тишкерес тĕллев лартать. Вăл чăваш литературине вăтам тата аслă шкулсенче вĕренекенсемпе вĕрентекенсене, наци ача-пăча сăмах ӳнерĕпе кăсăкланакансене усă кӳрессе шанать.

Кĕнеке 4 сыпăкран тăрать. Вĕсенчен пĕрремĕшĕнче 20-мĕш çулсенчи ача-пăча литературин аталану уйрăмлăхĕсене пăхса тухма палăртнă. Иккĕмĕш сыпăкра 30-мĕш çулсенчи ача-пăча литературинчи жанрпа стиль шыравĕсене тĕпчеме шухăш тытнă. Виççĕмĕш сыпăкра Н. И. Полоруссов-Шелепин çак сăмахлăхри вырăнне сăнама тĕллев лартнă. Тăваттăмĕш сыпăк «Ача-пăча журналĕпе хаçачĕ» ятлă. Унта «Хатĕр пулпа» «Пионер сассин» çав тапхăрти ĕçĕ-хĕлне тишкернĕ.

Автор хăйĕн кĕнекинче 20–30-мĕш çулсенчи ача-пăча литературин историне хатĕрлессине, унти туртăмсене уçса парассине тĕпĕ-йĕрĕпех татса парас тĕллев лартмасть. Унăн тĕпчевĕ çак ĕçре никĕсре тăмаллисенчен пĕри пулмалла тесе шутлать. Кĕнекере хускатнă ыйтусене ăсчах малалла анлăраххăн та тарăнраххăн тĕпчеме кирлине палăртать.

# I СЫПĂК

## 20-МĔШ ÇУЛСЕНЧИ АЧА-ПĂЧА ЛИТЕРАТУРИН АТАЛАНУ УЙРĂМЛĂХĔСЕМ

Коммунистсен партийĕн XI–XIII съезчĕсен, Тĕпкомăн 20-мĕш çулсенче литература ыйтăвĕпе тухнă йышăнăвĕсем çĕр-шыври халăхсен çак тапхăрти ача-пăча çырулла сăмахлăхĕпе ӳнерĕн кун-çулĕнче паллă вырăн йышăнни çинчен маларах каланăччĕ ĕнтĕ. Партипе пĕрлех çак ĕçе патшалăх та хутшăнмасăр юлмасть. 1919 çултах ĕнтĕ Наркомнац (Национальноçсен ĕçĕсем енĕпе туса хунă Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи Чăваш уйрăмĕ) тăван чĕлхепе «Ача-пăча кĕнеки» ярăм кăларса тăма йышăнать. Каярахпа çак серипе 20 ытла кĕнеке кун çути курать. Пĕтĕмпе вара 1919–1929 çулсенче Мускавра, Шупашкарта тата Хусанта ачасем валли 47 чăвашла кĕнеке тухать. Вĕсенчен 30-шĕ – вырăсларан куçарнисем, ыттисем – оригиналлă кĕнекесем. Куçарусем нумайтарах пулни, пĕр енчен, чăваш çыравçисен ача-пăча хайлавĕсем çырас хăнăхăвĕпе опычĕ çителĕксĕррипе, тепĕр енчен, вĕсен тĕнче тата вырăс классикисене тăван чĕлхепе вулакансем патне çитерес туртăмĕ пысăк пулнипе, XIX ĕмĕрте пуçланнă çак ырă йăла-йĕрке малалла çирĕппĕн тăсăлса пынипе çыхăннă. Куçарăвĕсем вара пурте тенĕ пекех вырăс литературин паха тĕслĕхĕсем. Вĕсем шутĕнче – Л. Толстойăн «Ачасем валли çырнă калавсем», А. Купринăн «Слун», «Шурă йытă», А. Чеховăн «Хăравçă Палля», «Хуйхă», М. Салтыков-Щедринăн «Пĕр мужик пĕччен икĕ генерала тăрантарса усрани çинчен», В. Короленкон «Макар тĕлĕкĕ», «Шартлама сивĕ», Д. Мамин-Сибирякăн «Кайăкçă Емел», «Кăвак мăй», М. Горькин «Челкаш», «Эрхип асаттепе Лявук» хайлавĕсем. Тăлмачисенчен чылайăшĕ – çав вăхăт тĕлне

самаях палăрнă çыравçăсем: И. Тăхти, Н. Полоруссов-Шелепи, М. Юман, Н. Ваçанкка, С. Лашман, В. Алакĕр, М. Юрьев т. ыт. те. Вĕсем куçару ĕçне хутшăннă май çĕр-шыври ача-пăча классикĕсен пуян опытне те куллен ăша хывса пынă, хăйсен çырав ăсталăхне туптанă.

Чăваш пурнăçĕпе çыхăннă кĕнекесен пĕтĕм пĕчĕк йышĕ, тĕпрен илсен, юмахсемпе халапсенчен тăрать. Сăлтавĕ – иккĕ. Пĕрремĕшĕнчен, чăваш писателĕсен ачасене халалланă оригиналлă хайлавсем пулман-ха, юмахсем вара кăштах та пулин çав пушăлăха чакарма пулăшнă. Иккĕмĕшĕнчен, пирĕн ача-пăча литературинче революцичченех фольклор хайлавĕсем хисепре тăнă. И. Я. Яковлев букварĕсенчех вĕсем çулран-çул йышлă тухса пынă. Çавăн пекех пĕчĕк вулакансемшĕн М. Федоров, И. Юркин, К. Иванов, Н. Шупуççынни, Н. Полорусов-Шелепи тата ыттисем çырса илнĕ, якатнă, çĕнетнĕ юмахсем паллă пулнă ĕнтĕ. Çапла вара, ачасене юмахсемпе тата халапсемпе, халăх сăмахлăхĕн ытти хайлавĕсемпе тивĕçтерес революцичченхи туртăм совет саманин малтанхи çулĕсенче ырă йăла пулса малалла тăсăлнă. Çавăн пекех вăл çыравçăсене хăйсене те оригиналлă юмах-халап çырма хавхалантарнă.

1919–1925 çулсенче чăвашла 5 юмах кĕнеки тухнă. Вĕсенчен иккĕшĕ – чăваш, пĕри – чăвашпа вырăс халăхĕсен юмахĕсем. Тăваттăмĕш кĕнекине К. Ивановпа Н. Шупуççынни, пиллĕкмĕшне Трубина Мархви çырнă фольклор хайлавĕсем кĕнĕ. Совет саманинче пĕрремĕш çакнашкал кĕнеке 1919 çулта Хусанта «Чăваш юмахĕсем» ятпа çапăнса тухнă. Унта тĕрлĕ ӳсĕмри ачасене вулама халăх хушшинче анлă сарăлнă 6 паллă хайлав кĕнĕ: «Ухмах ача», «Амаçури», «Пукане», «Чее тилĕ», «Уйăх çинчи хĕр», «Вилме каякан пуйса килнĕ, пуйма каякан вилсе килнĕ». Трубина Мархви пухса

çак ятпах 1924 çулта Шупашкарта кăларнă кĕнекене ку текстсемсĕр пуçне тата 4 юмах хушса кĕртнĕ: «Тӳнине шыракансем», «Икерчĕ çинĕ чух», «Хăрăк хурăн» тата «Ухмахсем». Юмахĕсем çамрăк туссене ăс-тăн пухма, таса та тӳрĕ чунлă пулма, çынсене (чи малтан аслисене) хисеплеме, çуралнă çĕршывпа халăха юратма, çутçанталăка упрама, хурапа шурра уйăрма, пур чухне те тимлĕ те таçăруллă пулма вĕрентеççĕ. Тĕслĕхрен, «Ухмах ача» хайлав геройĕ – 17-ри Тăрнаккай, пурнăç тути-масине туймасăр, çăмăллăн та черчен ӳснĕскер, халăх хушшине тухсан кашни утăмрах йăнăшсем тăвать, çавна май инкек хыççăн инкек курать. Ку юмах пĕчĕк вулакана кашни ĕçех тĕплĕн шухăшласа тĕрĕс тума, пур çĕрте те яланах асăрхануллă пулма хушать.

Шкулта вĕренекен ачасемпе халăха вулама тесе кăларнă «Юмахсемпе калавсем» кĕнеке (1923) 17 хайлавран тăрать. Вĕсем шутĕнче чăвашлисем те, куçарусем те пур. Ăна хатĕрлесе кăларма Чĕкеç (Хумма Çеменĕ – А.М.) хастар хутшăнни сисĕнет. Кĕнекери «Палля» калава вăл çырнă, «Шăши çурчĕ» калава вара вăл сăвăласа куçарнă тесе кăтартнă.

20-мĕш çулсенче чăваш юмахĕсем уйрăм кĕнекен çеç мар, хаçат-журналта та тăтăшах пичетленеççĕ. Сăмахран, «Сунталра» «Ăслă хĕр», «Ĕмĕтсĕр пуп», «Эсрел» (1924, 6№), «Шурăм пуç» журналта «Кукша Иван» (1921) юмахсем çапăнса тухаççĕ.

Трубина Мархви, Н. Полоруссов-Шелепи, Ç. Элкер тата ытти çыравçăсем халăх сăмахлăхне пухма, çĕнетсе йĕркелеме, ют чĕлхерен куçарма тата пичетлесе кăларма хастар хутшăннă май хăйсем те халăх пултарулăхĕн илемлĕх мелĕсене алла илме тăрăшаççĕ, ытларах та ытларах çакăн йышши хайлавсем çырас енне туртăнаççĕ. Трубина Мархви 1925 çулта уйрăм юмах кĕнеки кăларни пирки

асăнтăмăр ĕнтĕ. «Ачасем валли çырнă юмахсем» ятпа тухнăскере, «Анкарти кĕтессинче», «Шĕшкĕ» юмахсемпе «Аслати» калава кĕртнĕ. Çавăн пекех 1926 çулта Н. Полоруссов-Шелепин «Кушакпа автан» пьеса-юмахĕ те вулакансем патне уйрăм кĕнеке халлĕн çитет. Икĕ çул маларах (1924) çак автор М. Матерлинкăн халапне куçарса уйрăм кĕнекен чăвашлатса кăларать. «Сунтал» журналта Шелепин «Эссепе» (1925, 9№), «Йăваш Мишук» (1925, 4(10)№), «Пӳлере илни çинчен» (1925, 10№), С. Элкерĕн «Улăп» (1927, 10№) халапĕсем пичетленеççĕ.

Трубина Мархвин «Анкарти кĕтессинче» (каярахри ячĕ «Вĕренепе куршанкă») тата «Шĕшкĕ» хайлавĕсем тытăмĕпе тата шухăшĕпе халăх юмахĕсене çывăх. Вĕсенче тĕп вырăнта – этемпе çут çанталăк. Пĕрремĕш юмахăн геройĕсем – пĕр-пĕринпе хирĕçсе пурăнакан вĕренепе куршанкă. Автор çапла каласшăн: çутçанталăкра пурте хăй еккипе пулса пырать, ун саккунне пăсмалла мар, килĕштерсе пурăннине нимĕн те çитмест. Иккĕмĕш юмахăн персонажĕ шĕшкĕ те этем пекех шухăшлать, калаçать, хăйне хуçса амантса хăварнăшăн кулянать. Çыравçă хамăр таврари уйрăм пулăма ӳкерчĕклесе кăтартса, пĕчĕккисене пурнăça ăнланма, тавçăруллă пулма, пур япалана та шутласа тума, ырăпа усала уйăрса илме вĕрентет. Ăна малтанхи çак оригиналлă вĕрентӳллĕ хайлавсене çырма И. Яковлевăн Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн ырă йăла-йĕрки, Л. Толстойпа К. Ушинский никĕсленĕ вырăс ача-пăча классики витĕм кӳнĕ. Тĕслĕхрен, «Вĕренепе куршанкă» сюжечĕ Л. Толстойăн «Как ходят деревья» тата «Дуб и орешник» калавĕсенчи ĕç-пуça кĕретех аса илтерет.

Н. Полоруссов-Шелепин «Эссепе», «Пӳлере илни çинчен», С. Элкерĕн «Улăп» халапĕсем – жанр тĕлĕшĕнчен эпосла поэмăсем. Поэтсене кĕçĕн тата вăтам сыпăкри ачасене халалланă çак сăвăлла халапсене çырма

тăван халăхăн сăмахлăхĕнчи улăп сăнарĕ хавхалантарнă. Вĕсенче фольклорти эпосăн кĕввисем самаях сисĕнеççĕ. Çыравçăсем, çав жанрпа усă курса, йăх ташăмăрсене, чи малтан, паллах, ачасемпе çамрăксене, халăхăмăрăн аваллăхĕ çинчен каласа пама, вĕсен наци мăнаçлăхĕпе патриотлăх туйăмне хăпартма тĕллев тытнă. Сăмахран, çамрăк вулакансем С. Элкерĕн халапĕнчи Ахрат-улăп сăнарне хапăл туса йышăнаççĕ. Вăл – тĕлĕнмелле капмар кĕлеткеллĕ, вăйлă, çирĕп, чăтăмлă та тӳсĕмлĕ, тавçăруллă та ăслă, харсăр этем. Çынсемшĕн Ахрат-улăп яланах ырă та сапăр, тăшмана тĕл пулсан – хаяр та каçарусăр. Вăл чи малтан хăй çине «кашкăрла сиксе ӳкнĕ» Эсреметпе унăн Хăямат ятлă йыттине тата эшкерне пуçĕпех çапса салатать. Çавăн пекех ытти усал вăйсене – вутăша, тигрсене, эсреле, çичĕ пуçлă çĕлене – леш тĕнчене ăсатать. Автор хăй шухăшласа тупнă пулăмсемпе халăх эпосĕнчен илнĕ вырăнсем (тĕслĕхрен, Улăп ача чух хирте çĕр ĕçлекен вĕтĕ çынсене кĕсьене чиксе килсе амăшне кăтартни, ăна итлесе кайран вĕсене каялла кайса яни) халапра тачă шайлашура тăраççĕ. Çакнашкал пĕрлĕхлĕ сюжет хайлава çамрăк ăрушăн килĕшӳллĕ те илĕртӳллĕ, ĕнентерӳллĕ тăвать. Ачасем, поэмăна вуласа, Улăп чăваш халăхĕн ывăлĕ, унăн паттăрĕ пулнишĕн савăнаççĕ, мăнаçлăх туйăмĕпе çунатланаççĕ. Халапăн поэтики те, чĕлхипе стилĕ те вĕсен чунне çывăх. Хайлава илемлĕхпе витĕмлĕх кӳмелли тĕрлĕ мелсемпе тата хатĕрсемпе – метафорăпа, эпитетпа, сăпатлантарупа, танлаштарупа тата ыттипе те – туллин усă курса çырнă, халăх поэзийĕн çичĕ сыпăклă сăвă виçипе кĕвĕленĕ.

Çапла вара, Аслă Октябрь пăлхавăрĕ хыççăнхи çулсенче чăваш ача-пăча çыравçисемшĕн ăсталăхăн пĕрремĕш шкулĕ куçару ĕçĕ шутлансан, иккĕмĕш шкулĕ вĕсем фольклор хайлавĕсем çырма, çĕнетсе якатма, куçарма хутшăнни пулса тăнă. Халăх сăмахлăхĕ

писательсене ачасем валли çырмалли хайлавсен темисемпе сюжечĕсене тупма, сăнарĕсене пĕчĕк вулакансен кăмăлне тивĕçтермелле калăплама май пană.

## Поэзи

20-мĕш çулсенче, уйрăмах вунă çуллăхăн малтанхи çурринче, çулталăкăн тĕрлĕ вăхăтне сăнлакан сăвăсем чылай тухаççĕ. Авторĕсем – Хумма Çеменĕ, Г. Тал-Мăрса, Н. Полоруссов-Шелепи, И. Викторов, Н. Ваçанкка, С. Элкер, Ухсай Яккăвĕ т. ыт. те. Календарь поэзийĕнче çуркуннепе çуллана халалланă сăвăсем ытларах. Çулталăкăн çак тапхăрĕсен илемлĕ портретне тунă май сăвăçсем революцичченхи поэзин çырав меслечĕсене ăша хывнине сисетĕн. Паллă ĕнтĕ, К. Иванов, çут çанталăк диалектикине пăхăнса, хăйĕн «Нарспи» поэминче çуркуннене сăнарлассине хĕвеле ӳкернинчен пуçласа ярать: «Пуш уйăхĕн вĕçĕнче хĕвел пăхрĕ ăшăтса». Каярахри сăнсем пурте унпа çыхăнуллăн çуралаççĕ: «юрĕ ирĕлетваскаса», «тусем-сăртсем хуралаççĕ», «курăк çăп-çăра тухать...». Çут çанталăкри пулăмсен çавнашкал йĕркине эпир поэтсен 20-мĕш çулсенче çырнă сăвви-юрринче те асăрхатпăр. Çав сăвăсем ачасемшĕн, уйрăмах кĕçĕн çулхисемшĕн, питех те меллĕ, килĕшӳллĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ каярахпа вĕренӳ кĕнекисене, хрестоматисене ахальтен кĕмеççĕ, ачасен юратнă сăввисем пулса тăраççĕ. Пĕчĕк туссем çав хайлавсене пăхмасăр калама вĕренеççĕ.

Акă Чĕкеçĕн (Хумма Çеменĕн – А.М.) «Çуркунне умĕн» сăвви (1920) çапла пуçланать:

Ир иртет те каç пулать,  
Çуркунне те çывхарать.  
Куллен кунах ăшăтать,  
Хĕвел çутти сарăлать.

Малалла сюжетлӑ ҫак сӑвӑра хӗвел ӑшшӑн пӑхнӑ май «сӑрт тӑррисем, вӑрмансем, пӗтӗм ҫуна ҫулӗсем хурални», «ҫурт-йӗр, хапха тӑрӗнчен тумла юхни», «хытнӑ шӑна ураланни», «ҫӳҫесен кӑчкисем ҫурӑлни» ҫинчен каланӑ. Ҫутҫанталӑк чӗрӗлнине кура ҫитӗннисенчен ытларах «ялти пӗчӗк ачасен хӗпӗртеҫҫӗ чӗрисем» (астӑвӑр-ха, «Нарспире» те ҫавӑн евӗрлӗччӗ: «Ачи-пӑчи выляса чупса ҫӳрет урамра»). Сӑввӑн виҫи те К. Ивановӑнни пекех: 4-шар йӗркеллӗ ҫаврасем, 7-шер сыпӑклӑ, 3 пусӑмлӑ йӗркесем. Сӑпатлантарусем пур: «хӗл иртет», «ҫу килет», «ҫуркунне ҫывхарать». Шухӑша вӑйлатма пулӑшас тӗллевпе автор пӗр йышши сӑмахсене умлӑ-хыҫлӑ лартса ҫырать: «юхать, патлатать», «ураланать, чунланать». Рифмисенчен ытларахӑшӗ глаголпа япала ятӗнчен пулнӑскерсем, уҫӑ сасӑллӑ сыпӑксемпе вӗҫленекенскерсем: «каҫ пулать – ҫывхарать – ӑшатать – сарӑлать», «вӑрмансем – ҫулӗсем – хӗл иртет – ҫу килет». Сӑввӑн ҫепӗҫлӗхӗ, кӗвӗлӗхӗ, ансатлӑхӗ ачасене хӑй патне туртать, хӑйне пӑхмасӑр калама вӗренме хавхалантарать.

Н. Полоруссов-Шелепипе И. Викторов та хӑйсен «Ҫуркунне» ятлӑ сӑввисене хӗвеле сӑнланинченех пуҫлаҫҫӗ.

Тепӗр чухне поэтсем К. Иванов сӑмахӗсене хӑйсен сӑввисене тӳррӗн кӗртсе лартаҫҫӗ. Тӗслӗхрен, Трубина Мархви «Ҫуркунне» сӑвӑра (1921) аслӑ поэтӑмӑрӑн йӗркинчи «хӗвеле» «чӗрем» сӑмахпа ылмаштарса, ҫапла ҫавӑрса хурать: «Чӗрем савать тӗнчене».

Кӗҫӗн тата вӑтам ӳсӗмри ачасем С. Элкерӗн «Ҫуллахи ир», «Ҫу кунӗ», «Ҫуллахи ҫумӑр», Н. Ваҫанккан «Ҫуллахи ир», Н. Полоруссов-Шелепин «Ҫулла», И. Викторовӑн «Ҫуллахи ир», «Ҫуллахи каҫ» сӑввисене хапӑл туса йышӑнаҫҫӗ. Ҫут ҫанталӑкӑн ҫак илемлӗ вӑхӑчӗ ҫинчен ҫырнӑ хайлавсенче,

революцичченхи сăвă-юрăри пекех, çынсен кăмăл-туйăмĕ çутçанталăкри илемпе тачă шайлашура тăрать.

Поэтсем 20-мĕш çулсенче, М. Федоровпа К. Иванов тата Н. Шупуççынни пекех, халăх сăмахлăхĕнчи кĕвĕсемпе, илемлĕх мелĕсемпе, çут çанталăка чĕрĕлетсе кăтартас мелпе тухăçлă усă кураççĕ. Уйрăмах С. Элкерĕн сăввисем хăйне евĕрлĕхпе, ăрасналăхпа уйрăлса тăраççĕ. Сăмахран, унăн «Çуллахи ир» сăввинче икĕ пĕрлĕхлĕ ӳкерчĕк сăнланнă: ирĕн çут çанталăкри («шупка шурăмпуçĕ шуса хăпарать») тата чăн пурнăçри («çерем çине анчĕç уйри кĕтӳсем») сăн-сăпачĕ, сăвă вĕçĕнче çавна туйса тăракан геройăн çĕкленӳллĕ кăмăлĕ («хĕвел курăнайчĕ – çĕршыв савăнать»). Сăвă 5-шер сыпăклă, 3-шер пусăмлă çăмăл çемĕллĕ йĕркесенчен тăрать. Унăн кĕвви вырăс классикинчи паллă кĕвве сывăх. «Çу кунĕ» ятлă сăввине (1925) вара поэт вырăссен аслă сăвăçи И. Никитин майлă çырнă:

Ирĕклĕ, уçă-çке ырă çу кунĕ!
Имлĕхлĕ çутă туртса чĕннипе...

«Çуллахи çумăр» сăвăра (1923) «шăпăр-шăпăр çăвакан ăшă çумăр тата ун пĕрчисене çăтса хăвăрт пĕве ярăнакан» йывăç-курăк куç умне чĕррĕн тухса тăраççĕ. Унта, Г. Хлебников ăсчах калашле, чăнах та «çумăр çунă май ритм ташлать, хресчен чĕринчи хаваслăха туйтарать»[1]. Автор сăвва чĕрĕлĕх кĕртес тĕллевпе сăпатлантарусемпе питĕ пĕлсе усă курать: «Çумăр çĕр кăкăрне шăварать», «йывăç-курăк пĕве ярăнать», «вăрман лăстăртатса силленет», «çаран чечексемпе витĕнет», «çумăр тыр уйсене шăварать». «Çуллахи çумăр» халĕ те ачасен юратнă сăвви ахальтен шутланмасть ĕнтĕ.

[1] Чăваш совет литератури. – Шупашкар, 1972. – 166 с.

Н. Ваçанккан «Çулла» сăвви те пĕчĕккисен вулавĕнче хисеплĕ вырăн йышăнать. Унта çут çанталăкри тата кил-тĕрĕшри пулăмсем пĕр пĕтĕм килĕшӳллĕ çыхăнура ӳкерĕннĕ:

Вăш-вăш туса çил вĕрет,
Хĕвел тухăç хĕрелет,
Çутă уйăх пытанать,
Çăлтăр сӳнет, çухалать.
Ялта ирех чи малтан
Ылтăн тĕпек сар автан
Киккириккук! авăтать,
Хăй кил йышне вăратать.

20-мĕш çулсенче кĕçĕн тата вăтам сыпăксенчи ачасене вулама юрăхлă хир-вăрманпа, йывăç-курăк тĕнчипе çыхăннă темиçе сăвă кун çути курать. Çавăн йышши малтанхи хайлавсенчен пĕрне – «Хирте» ятлăскерне (1920) – Г. Тал-Мăрса çырнă:

Куçпа виçейми,
Вĕçне çитейми,
Хĕрри-йĕррисĕр
Ыраш хумханать.

Çапла пуçланса каять 7 çавраллă савăк çемĕллĕ сăвă. Унăн кĕввинче – пиçсе çитнĕ ыраш пуссинчи ăшă çил варкăшĕ, ылтăн хумсен чуппи, çӳл тӳперен тăкăнакан хĕвел хĕлхемĕ, путене-юрăçăн тулли пучахсене ачашласа хресчене çутă ĕмĕт сĕнекен сасси. Витĕмлĕ танлаштарусем («аслă тинĕс пек», «канлĕх пĕлмест пек», «ылтăн тинĕс пек», «сĕм вăрман пек»), эпитетсем («аслă тинĕс», «ылтăн хум», «тулли пучах», «ăш çил», «çутă хĕвел», «ыр ĕмĕт»), сăпатлантарусем («ылтăн хумĕпе хумне хăвалать», «çил чуптăвать»,

«сасси ачашлать»), ç – т – р – с – х сасăсен вылявĕ сăвва çĕкленӳлĕхпе янăравлăх кӳреççĕ, ăна кĕçĕн тата вăтам классене çӳрекенсен кăмăлне каймалла тăваççĕ.

И. Викторовăн «Уйра» (1925), Ухсай Яккăвĕн «Юратрăм эп, хирсем, сире» (1929), Н. Полоруссов-Шелепин «Хирте» (1928) сăввисем те, чăваш çыннин, уй-хир сăн-сăпатне ăстан çырса кăтартнăран тата сăнарлă, сĕтеклĕ чĕлхеллĕ, çăмăл та ансат кĕвĕллĕ пулнăран, ачасен чунне çывăх.

Йывăç тĕнчине халалланă поэзин пĕчĕк хайлавĕсенчен Хумма Çеменĕн «Хĕллехи вăрман» (1921) тата «Вăрманта» (1922) сăввисем уйрăлса тăраççĕ. Пĕрремĕш сăввинче çыравçă тӳлек çанталăкри хĕллехи вăрманăн чĕрĕ сăнарне ансат сăрăсемпех курăмлă та асра юлмалла ӳкернĕ. Çав илем çамрăк çын чун-чĕринче темĕнле çутă та ырă туйăмсем çуратать:

Çаппа çара йывăççем
Шарламасăр лараççĕ.
Пас айĕнчи туратсем
Темле мăннăн курнаççĕ.
Унта-кунта кĕрт çинче
Тилĕ чупни палăрать.
Сукмак пекки пур çĕрте
Йĕлтĕр йĕрри тăсăлать.

Ку хайлава пĕр хутчен çеç мар чăваш ачисен вĕренӳ кĕнекисене, ача-пăча хайлавĕсен пуххисене кĕртнĕ.

Трубина Мархви те хăйĕн пултарулăхĕн малтанхи тапхăрĕнче чи пĕчĕккисене паха сăвăсем парнелет. «Автан автать» (1922), «Марук чăххи» (1924) сăвăсенче кайăк-кĕшĕк сăнарĕсемпе пĕрлех ачасене хăйсене те курма пулать. Пĕрремĕш сăввинче çыравçă çамрăк туссене тăван халăхăн ырă енĕсене – хастарлăхпа

тăрăшулăха т. ыт. те – мĕн пепкерен ăша хывса аталантарса пыма чĕнет:

Автан автать, тул çутăлать,
Ачасене вăрататъ.
Ĕçлĕр тесеваскатать.
Вăранăр-ха, ачасем!
Тăрăшăр-ха, паттăрсем!
Пит çывăрсан ял кулать,
Кам ĕçлекен ыр курать.

Сăвва фольклорти кĕвĕлĕх витерсе тăрать. Халăх калаçăвĕ, ваттисен сăмахĕсем («Автан автать, тул çутăлать», «Пит çывăрсан, ял кулать», «Кам ĕçлекен ыр курать») унăн сăнарлăхне ÿстерессĕ.

Иккĕмĕш сăввинче поэт пĕчĕк туссене кил-çуртра ашшĕ-амăшне пулăшма, ĕçпе туслă пулма йыхăрать:

Пĕчĕк Марук чăххине
Амăшĕпе тыр паратъ.
Кашни кунах ирхине
Чăпар чăхха йыхăрать.
– Чип-чип, чип-чип, чăпаркка,
Кил хăвăртрах тыр çиме.
– Кăт-кăт-кăтик! Марука
Туса патăм маттине.

Ялти кулленхи чăн пурнăçран илнĕ ÿкерчĕк... Амăшне килти ĕçсене тума пулăшакан хастар Марук. Хĕрачапа чăпар чăххăн ăш-пиллĕ калаçăвĕ. Сюжета сăнарлăх кÿрекен евĕрлев сăмахĕсем... Çаксем пурте ачасемшĕн ăнланмалла, килĕшÿллĕ.

Çыравçă «Куян юрри» сăвва та (1924) çакнашкал мелпех ăста калăпланă. Ун урлă вăл пĕчĕк туссене пурнăçра йывăрлăх килсе тухсан чăтăмлă пулма,

чăрмавсене çĕнтерсе пыма вĕрентет.

Вăхăт иртнĕçемĕн Трубина Мархвин çырас пултарулăхĕ те пĕчĕккĕн малалла туптанать. 20-мĕш çулсен пуçламăшĕнче вăл ачасене тӳррĕн чĕнсе калас меслете тĕпе хуратчĕ пулсан, çак вунă çуллăхăн вĕçнелле кун курнă сăввисенче вара вĕсене ӳкерчĕк урлă йыхăрас çул çине куçать. Ку енĕпе уйрăмах «Шăнкăрч вĕлли» (1929) паллă:

Мĕкĕте ăста аллипе
Майлать шăнкăрч вĕллине.
Килĕр, килĕр, шăнкăрчсем,
Кунта тăвăр йăвасем...
Ача пăхать кантăкран,
Курать шăнкăрч вĕçнине,
Итлет унăн юррине...

Ача юлашкинчен хăй тунă ĕçĕн уссине курса киленет. Мĕкĕте сăнарĕ куç умне чĕррĕн те ĕнентерӳллĕн тухса тăрать. Чăнлăхпа тĕрĕслĕх – авторăн тĕп пултарулăх меслечĕ. Реализм йĕрĕсем сăввăн тулаш паллисем урлă çеç мар, геройăн шалти ăш-чикки урлă та палăраççĕ. Ку хайлав çыравçă пĕчĕккисен чунне туйма-сăнама пĕлнине, текстра илемпе вĕрентĕве (педагогикăлăха) ăнăçлă сыпăнтарнине, ĕç пархатарне витĕмлĕ ӳкерчĕклеме пултарнине кăтартса парать.

Кĕçĕн çулхисен кулленхи ĕçне-хĕлне, вăййи-куллине, шухăш-кăмăлне сăнарлакан сăвăсем хушшинче çавăн пекех Хумма Çеменĕн «Кĕтӳç», Мĕтри Васлейĕн «Йĕлтĕрпе» хайлавĕсем палăрулла. Хумма Çеменне хăйĕн çав сăввине çырма К. Ивановăн «Нарспи» поэминчи ача-кĕтӳçĕ сăнарĕ витĕм кӳни кĕретех сисĕнет. Иккĕшĕн те геройĕсем ачасем, кĕтӳ кĕтеççĕ,

шăхличĕ калаççĕ. Анчах та Хумма Çеменĕн персонажĕ «Нарспири» «хырăмĕ пит выçнипе» тăван ялĕ еннелле пăхакан ача мар ĕнтĕ. Вăл, сăрт çинче лараканскер, хаваслăхпа ирĕклĕх юрри шăрантарать. Кунта, М. Сироткин калашле, «уйрăм çыннăн туйăмĕсем çут çанталăк пурнăçĕпе, халăх кăмăлĕпе, халăх пурнăçĕпе çыхăнса тăни палăрать»[1].

Мĕтри Ваçлейĕ «Йĕлтĕрпе» сăвăра (1929) хĕл ытамĕнче савăнса ярăнса çӳрекен ачана сăнласа парать. Çак хайлав каярахпа мĕнпур ăрури ачасен юратнă сăвви пулса тăрать:

Йĕлме йĕлтĕр –
Йăлтăр-йăлтăр,
Шуса тухрăмăр хире.
Юр пĕрчийĕ –
Хĕл мерченĕ,
Эх, илемлĕ-çке ирпе!
Уçă сывлăш
Ирхи сывлăш
Чупса кĕчĕç ман хĕве.
Те вылясшăн,
Те куласшăн
Кăтăклаççĕ-çке пĕве.

Ачасен кулленхи пурнăçĕнчен илнĕ ахаль ӳкерчĕк, çут çанталăкри илемпе ача чунĕнчи ачашлăхăн шайлашуллă пĕрлĕхĕ, ăшă туйăмлă шӳт, сăввăн ансат та кĕвĕллĕ кӳлепи, пĕр йышши Й, Л, Р, Ш, В, Т хупă сасăсен вылявĕ текста килĕшӳллĕ те илĕртӳллĕ, çĕкленӳллĕ тăваççĕ, янрав тĕлĕшĕнчен сулăмлăхпа сулмаклăх кӳреççĕ.

20-мĕш çулсен пуçламăшĕнче чăваш литературинче, çав шутра ача-пăча сăмахлăхĕнче те, тăван халăхпа

[1] Сироткин М. Чăваш литератури. – Шупашкар, 1977. – 97 с.

унӑн чӗлхин малашлӑхӗшӗн хыпӑнса ҫунакан сӑвӑҫ-патриот Ҫеҫпӗл Мишшин йыхравлӑ сасси хӑватлӑн янӑраса каять. «Чӑваш чӗлхи» (1920), «Чӑваш ачине» (1920), «Хурҫӑ шанчӑк» (1921), «Чӑваш!.. Чӑваш!..» сӑвӑсем ҫамрӑк ӑрӑва хамӑр йӑха юратма, чӗлхемӗре упрама, мӑнаҫлӑх туйӑмне хӑпартма, пурнӑҫра хӑюллӑ та маттур пулма чӗнеҫҫӗ. Сӑвӑҫӑн ҫулӑмлӑ сӑмахӗсем ача-пӑчапа яш-кӗрӗмшӗн халал пек илтӗнеҫҫӗ:

> Чӑваш чӗлхи, чӑваш чӗлхи,
> Хӗвел кӑварӗпе вутлан,
> Ҫӗкле часрах тӑван ҫӗре.
>
> («Чӑваш!.. Чӑваш!..)

Ҫак ҫулсенче ачалӑхӑн чӑн тӗнчине ҫутатакан поэзин пӗчӗк хайлавӗсемпе пӗрлех плакат сӑррипе пӗвеннӗ агитаци туртӑмӗллӗ сӑвӑ-юрӑ та тухкалать-ха. «Октябрь ҫулӑмӗ» (1923), «Октябрь хисепне» (1927) сӑвӑ пуххисенче мӗнле шухӑш тӗпре тӑнине вӗсен ячӗсенченех туйса илме пулать. Юпа уйӑхӗнчи пӑлхавӑр пулса иртнӗренпе 6 тата 10 ҫул ҫитнӗ ятпа уяв ирттернӗ чух усӑ курма май килтӗр тесе кӑларнӑ ҫак кӗнекесем революци сӑввисемпе юррисенчен тӑраҫҫӗ. Вӗсен авторӗсем – Н. Шупуҫҫынни, Г. Тал-Мӑрса,Н. Ваҫанкка. Политика сӗткенӗпе шӑварӑннӑ хӑш-пӗр сӑвӑсем Чӗкеҫӗн «Юрӑ-сӑвӑсем» кӗнекинче те (1922) пур: «Хӗрлӗ ялав» (1920), «Ҫил-хаяр» (Коммунизм хӗлхемӗ, 1921).

20-мӗш ҫулсен варринче ача-пӑча поэзийӗнче пионер теми вӑй илет. Ӑна Н. Ваҫанккапа Н. Евдокимов тата Мӗтри Ваҫлейӗ кӑмӑлларах параҫҫӗ. Содержанийӗпе ку сӑвӑ-юрӑ класлӑх туртӑмӗллӗ. Унта ҫакнашкал йӗркесем тӗл пулаҫҫӗ: «Кулаксене тӗп тума пӗрле тӑма кирлӗ», «Патша, улпут тин пулас ҫук, пуп таврашӗ пуҫ пулас ҫук», «Мулӑн леш тӗп никӗсне вӑхӑт ишме-аркатма» (Н. Ваҫанкка); «Ҫӗрӗк мулӑн

тĕнчинчен çут хĕвеле пӳлĕпĕр» (Н. Евдокимов); «Тăшмана таптатпăр эпĕр пĕтĕмпех, çапăçатпăр эпĕр, çапăçу пĕтмен» (Мĕтри Васлейĕ). Кĕввипе ку сăвăсем марш евĕрлĕ илтĕнеççĕ. Хушса юрламаллисене ачасене харăс-харăс пусса утма меллĕ тума тăрăшнă:

Ян-янах кайтăр
Пионер юрри,
Тĕнчипех çутаттăр
Советсен çутти.

(Н. Васанкка. Малалла пăхатпăр)

Тăрна, тăрна,
Тăрна мăй,
Тăрна мăйĕ
Кукăр мăй.

(Н. Васанкка. Тăрна)

Тап-тап,
Çирĕп ут!
Пуян ачи
Пире ют!

(Н. Евдокимов. Пионер юрри)

Чăваш сăвăçисем пионерсем çинчен çырнă чух час-часах вырăс поэчĕсенчен тĕслĕх илнĕ. Сăмахран, Н. Васанкка «Пионерсен клубнелле» сăввине (1925) Д. Бедныйăн «Проводы» кĕввипе хайланă. «Вĕлкĕштерĕр ялава» (1924), «Тăрна» (1924) сăвăсем те вырăсларан илсе чăвашлатнăскерсем. Пионерсене халалланă «Линка-линка авкаланма» (1924) сăвва хывнă чух поэт çав ятлă халăх юррипе вырăнлă усă курнă. «Çĕнĕ çул çинче» сăвва (1924) фольклорти «Касрăм, касрăм пĕрене», «Пĕчĕк çеç пионера» сăвва (1924)

«Пĕчĕк çеç путене» юрă кĕввипе çырнă.

Çĕр-шыври совет литературинче сарăлнă лениниана 20-мĕш çулсен варринче чăваш ача-пăча поэзине те пырса кĕрет. Кунта уйрăмах 3 сăвă паллă: Н. Полоруссов-Шелепин «Ленин» (1924), С. Элкерĕн «Хурçă карап» (1925), Уйăп Мишшин «Ленин мавзолейĕнче» (1926). Антив, çав хайлавсенче тĕнчери пролетариат çул пуçне, пĕтĕм совет литературинчи пекех, искусствăлла ытлашши пысăклатса, турă вырăнне хурса кăтартнă пултăр, анчах та сăнарлăхĕпе илемлĕхĕ енĕпе вĕсем чăннипех те çӳллĕ шайра тăраççĕ. Вĕсем пирки чăваш çыравçисемпе ăсчахĕсем ырă сăмахсем сахал каламан ĕнтĕ. Тĕслĕхрен, П. Хусанкай С. Элкерĕн «Хурçă карапне» «хамăр поэзи историйĕнче чи хăватлă, чи тарăн шухăшлă, чи ăста калăпланă сăвăсенчен пĕри, – тет. – ...Хăйĕн поэтика çĕнĕлĕхĕпе вăл Çеçпĕл теорине чăнлать. ...Çеçпĕлĕн «Хурçă шанчăкĕпе» Элкерĕн «Хурçă карапĕ», маншăн пулсан, пĕр вĕркĕчпе вĕрĕнсе, пĕр вучахра шăраннă чăннипех тимĕр татмалли сăмах хĕçĕсем. Çеçпĕлĕн амфибрахийĕ кĕскерех йĕркеллĕ пĕр-пĕрин çумне тачăраххăн хĕсĕнсе, пĕр-пĕрин «чавсине сиссе» утăмлакан салтаксем пек, Элкерĕн амфибрахийĕ, – темине кура, – сарлака, мăнаçлă, аславлă, тейĕттĕм эпĕ»[1]. В. Долгов критик та «Хурçă карап» сăвва «чăваш поэзийĕн ылтăн фондне кĕрсе вырнаçнă произведени»[2] тесе палăртать. Г. Орлов çыравçă Уйăп Мишшин «Ленин мавзолейĕнче» сăввине пысăка хурса хаклать, çав хайлав «поэтăн малтанхи сăввисенчен чылай лайăхрах, илемлĕрех пулса тухнине, ăна шкул программисемпе хрестоматисене кĕртнине»[3] палăртать.

---

[1] Хусанкай П. Ăсталăхпа чăнлăх. – Шупашкар, 1964. – 158–159 с.

[2] Долгов В.А. Ленин сăнарĕ – халăх чĕринче. – Шупашкар, 1972. – 16 с.

[3] Орлов Г. Уйăп Мишши (Çуралнăранпа 60 çул çитнĕ май) // Ялав, 1971, 11№. – 24 с.

# Проза

20-мӗш ҫулсенче ачасем валли прозӑпа драматурги хайлавӗсем, поэзиннипе танлаштарсан, сахалтарах ҫуралаҫҫӗ. Октябрь революцийӗ хыҫҫӑнхи хутлӑхра проза тивӗҫне, тӗпрен илсен, куҫарусемпе юмахсем пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Оригиналлӑ хайлавсем вара, Хумма Ҫеменӗпе Трубина Мархвин уйрӑм япалисене шутламасан, ҫукпа пӗрех.

Ҫакӑ, чи малтан, пирӗн литературӑра поэзи традицилӗхӗ вӑйлӑрах пулнипе тата прозаиксемпе драматургсен ача-пӑча хайлавӗсем ҫырас опычӗ ҫителӗксӗррипе ҫыхӑннӑ. Пыра-киле вара, куҫару ӗҫне хастар хутшӑннӑ май, вӗсен ӑсталӑхӗ те ерипен ӳссе пырать. Прозаиксем чӑваш пурнӑҫӗнчи пулӑмсем тӑрӑх калавсемпе повеҫсем ҫырма тытӑнаҫҫӗ. 20-мӗш ҫулсен варринелле вӗсен йышӗ самаях пысӑкланать.

Ача-пӑча литературинче ҫак пулӑма вӑйлатма чӑваш тӑрӑхӗнче обществӑпа политика, экономикӑпа культура енӗпе ырӑ улшӑнусем пулса иртни те пулӑшать. 1920 ҫулта чӑваш халӑхӗ область, 1925 ҫулта республика статусне илет. Автономи ертӳҫисем тӑван сӑмахлӑхпа ӳнере аталантарасси ҫине тимлӗрех пӑхма пуҫлаҫҫӗ. Ҫыравҫӑсен «Канаш» пӗрлешӗвӗ те (1923 ҫулта йӗркеленнӗскер) ку енӗпе тӑрӑшарах ӗҫлеме тытӑнать. 1929 ҫулта чи лайӑх ача-пӑча хайлавӗсен пӗрремӗш конкурсне йӗркелеҫҫӗ.

Ҫав тапхӑрта чӑвашла ҫӗнӗ пичет кӑларӑмӗсем йышлӑ ҫуралаҫҫӗ. «Канаш» (1918), «Чухӑнсен сасси» (1918), «Ҫӗнӗ пурнӑҫ» («Ҫутталла», 1918), «Хӗрлӗ салтак» (1919), «Хӗрлӗ Урал» (1920), «Ҫӗнӗ ял» (1925), «Ҫамрӑк хресчен» (1925) хаҫатсем, «Ана» (1918), «Ҫӗр ӗҫлекен» (1919), «Шурӑмпуҫ» (1919), «Атӑл юрри» (1920), «Ӗҫлекенсен сасси» (1922), «Пирӗн юлташ» (1922), «Сунтал» (1924), «Капкӑн» (1925), «Халӑха

вĕрентес ĕç» (1926), «Чăваш ялĕ» (1927), «Утăм» (1928), «Ялкор» (1928), «Ĕçхĕрарăмĕ» (1928), «Пирĕн çул» (1929), «Хатĕр пул» (1929) журналсем тухса тăраççĕ. Шупашкарта кĕнеке издательстви никĕсленет (1921). Ачасене хутла вĕрентес, вĕсем валли шкул кĕнекисем кăларас ĕç çĕнĕ шая çĕкленет. Çакă тата культура тĕлĕшĕнчи ытти ырă пулăмсем чăваш ача-пăча литератури аталанăвĕшĕн пĕлтерĕшлĕ пулнă.

20-мĕш çулсенче тĕрлĕ ӳсĕмри ачасене проза хайлавĕсемпе тивĕçтересси еплерех пынă-ха? Шкул çулне çитичченхисемпе пуçламăш классене çӳрекенсем валли ытларах юмахсем тата куçарнă хайлавсен кĕнекисем кăларнă. Оригиналлă япаласем тухсах кайман. Уйрăм калавсенче, калăпăр, Трубина Мархвин «Лапчăк пӳртре» хайлавĕнче (1921), пĕчĕккисен сăнарĕсем пулкаланă-ха. Анчах та вĕсем кĕçĕн çулхисен вулавне кĕртмелĕхех пусăма çитеймен.

Вăтам сыпăкри ачасен ыйтăвне тивĕçтересси вара чылай ăнăçуллăрах пулса пынă. Çак ӳсĕмрисем Трубина Мархвин «Аслати» (1924), «Хĕрлĕ галстук» (1925), «Вупăр» (1927), «Хĕллехи каçсенче» (1929), «Марине» (1929), Хумма Çеменĕн «Палля» (1923), «Çĕтĕк сăхман» (1926), «Выçлăх çулсем» (1924), «Ача чухнехи» (1929–1931), С. Ялавинăн «Кавруç» (1929), С. Шăпчăкăн «Верук» (1929), М. Данилов-Чалдунăн «Тилĕ хыççăн» (1929) калавĕсене хапăл туса кĕтсе илнĕ.

Çапла вара, 20-мĕш çулсенче партипе патшалăх ача-пăча кĕнекисем кăларас ĕçе ертсе пырассине хăйсен аллине илни, пĕр енчен, чăваш ачисен литератури аталанăвĕшĕн усăллă пулнă: вунă çуллăхăн варринелле прозăна талантлă çамрăк вăйсем килсе кĕнĕ, вĕсем ăна çĕнĕ хайлавсемпе пуянлатнă. Тепĕр енчен, кунта сиенĕ те çук мар. Влаç çыравçăсене хăйĕн интересĕсемшĕн ĕçлеттернĕ, пултарулăхра партилĕхпе класлăх ыйтăвĕсене тĕпе хума, идеологи сĕмлĕ схемăллă-шаблонлă хайлавсем çырма хистенĕ.

Çыравçăсем час-часах хăйсен геройĕсене ирĕксĕрлесе класс кĕрешĕвне хутшăнтараççĕ, вĕсене хăйсен чун-чĕрипе килĕшсе тăман ĕçсем тутараççĕ. Тĕслĕхрен, Трубина Мархвин «Малалла» калавĕнче (1925) Наçтук пуян ачипе Василипе туслă. Сасартăк вăл çынсем урлă Василин тетĕшĕпе инкĕшĕ килĕштерсе пурăнманнине, упăшки арăмне хĕнесе тертлентернине пĕлет те, пуян таврашĕпе çывăхланас мар тесе, савнă çыннинчен уйрăлса каять, парнисене каялла тавăрса парать.

Прозаиксем чылай чухне ачасене халалланă хайлавсенче геройсене класс тăшманĕсемпе кĕрештереççĕ, вĕсен хура ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларттараççĕ. Сăмахран, Трубина Мархвин «Хĕллехи каçсенче» калавĕнче (1929) пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн çамрăк хĕр-пуçлăхĕ Кулюк «ял активĕпе хытă тăрăшса колхозри юрăхсăр çынсене – кулаксене ... сирпĕтет». Уйрăм хайлавсенче класс тăшманĕсемпе пионерсем хĕрӳ тытăçăва кĕреççĕ. Çак тĕлĕшрен Трубина Мархвин «Хĕрлĕ галстук» калавĕ (1925) уйрăмах палăруллă. Кунта пионерсене хăйсен çулне кура мар хастарлă та пуçаруллă, ăслă та тавçăруллă туса кăтартнă. Вĕсем, кивелнĕ тесе, ял-йышăн ку таранччченхи йăли-йĕркисене пĕтересшĕн, çĕнĕлле культура йĕркелесшĕн, яла кулаксемпе куштансенчен тасатасшăн.

Çав вăхăтрах 20-мĕш çулсен вĕçĕнчи ача-пăча прозинче политикăран уйрăларах тăракан чăнлăхлă ырă юхăм та палăрать. Писательсем çав хайлавсенче уйрăм ачан çăмăл мар шăпине, кун-çулне çырса кăтартассине мала кăларса тăратаççĕ. Ку вăл ячĕсенченех курăнса тăрать: Хумма Çеменĕ хăйĕн калавĕпе повеçне «Палля» (1923) тата «Тимуш» (1929), калавсене С. Ялавин «Кавруç» (1929), Трубина Мархви «Марине» (1929), С. Шăпчăк «Ваççа» (1930) тесе ят панă. Вĕсенче тĕп геройĕсем те ачасем хăйсемех. Çамрăк туссем çав саманан синкерлĕ тапхăрне (тăлăх-туратлăх, выçлăх-

тертлĕх, çапкаланчăклăх, вăрçă-харçă) тӳссе ирттереççĕ, ун витĕр пиçĕхсе-тĕрекленсе тухаççĕ... Ку хайлавсенче революцичченхи литературăранах куçнă реализмла сăнлăх туртăмĕ уççăнах сисĕнет. «Маринепе» «Кавруç» республикăри ача-пăча кĕнекисен конкурсĕнче мала тухаççĕ, 2-мĕшпе 3-мĕш премисене тивĕçеççĕ. Çак кĕнекесенче класлăх шăрши палăрсах каймасть. Çав вăхăтрах пионер юхăмĕн сĕмĕ кунта та сисĕнет-ха.

Вăтам çулсенчи ачасем валли çырнисем хушшинче Хумма Çеменĕн «Палля» калавĕ чи лайăххисенчен пĕри шутланать. Хайлавран вулакан умне ХХ ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенчи ирĕк чунлă, мал ĕмĕтлĕ, çирĕп шухăш-кăмăллă чăваш ачин сăнарĕ туллин тухса тăрать. Çав пĕчĕк герой писателĕн «Кĕтӳç» сăввинчи ачана аса илтерет. Пĕр пекех вĕсем, анчах хальхинче автор ăна проза мелĕпе усă курса сарарах, тĕплĕрех ӳкерсе кăтартнă. Палля – çурма тăлăх. Амăшĕпе кăна пурăнать. Ашшĕ тата хăйпе пĕр тăван пиччĕшĕ тĕнче вăрçинче вилнĕ. Тăххăрти ача хăй амăшĕн пĕртен-пĕр тĕрекĕ пулса юлнине лайăх ăнланать. Ăна мĕн май килнĕ таран пулăшасшăн вăл, кĕтӳ кĕтме çӳрет.

Прозаик хăйĕн калавне романтикăпа реализм мелĕсемпе çураçуллă усă курса чуна пырса тивмелле витерӳллĕ çырнă. Хайлав ирхи хĕвеле сăнласа панипе пуçланать те хĕвел çутипе çыхăннă ӳкерчĕкпех вĕçленет. Автор ачан портретне ĕненмелле калăпланă: «Урисенче шурă пир-тăла, çĕнĕ çăпата, йĕмне кăвакартса тунă пиртен çĕлесе панă, кĕпине шурă пиртен пит илемлĕ тĕрлесе панă, пуçĕнче çĕнĕ картус»[1]. Паллян, пĕчĕк пулсан та, амăшĕ хушнă ĕçшĕн яваплăх туйăмĕ пысăк. Хăй килте пĕртен-пĕр арçын пулнине туять вăл. «Хутаçне хулпуççи çинчен çакнă, сăхманне хулпуççи урлă

---

[1] Хумма Çеменĕ. Палля // Юмахсемпе калавсем. Шкулта вĕренекен ачасемпе халăха вуламалли кĕнеке. – Шупашкар, 1923. – 74–75 с.

янӑ, вӑрӑм чӑпӑрккине пӗр ҫӗре пуҫтарса сылтӑм аллине тытнӑ» Палля кӗтӳ кӗтме кайнӑ май ҫул ҫинче хӑйне ҫитӗннисем евӗр тыткалать. «Вӑл тӳрех, пысӑк ҫынсем калаҫнӑ пек, сассине пысӑклатать те, кашни ыйтан ҫыннах:

– Ут кӗтӳ пӑхма каятӑп, – тет.

Ҫынсем Палляна чӑр-чар пӑхса ирте-ирте каяҫҫӗ.

– Ытла та ҫамрӑк-ҫке вӑл! Ҫапах пысӑк ҫын пекех таклаттарса пырать...»[1].

Палля тимлӗ те туйӑмлӑ ача. Тавралӑх илемӗпе киленме, йӑпанма пӗлет вӑл. Ӑна ҫутҫанталӑкри пулӑмсем кӑсӑклантараҫҫӗ. «Утнӑ май вӑл симӗс калчасем ҫинелле пӑхса савӑнать. Тӑрисем епле сывлӑш тӑрӑх ярӑнса пынине курать, вӗсем епле уҫҫӑн юрланине тӑрсах итлет. Тӑрисем юрланӑ чух Паллян хӑйӗн те юрласси килсе каять. Палляпа пӗрлех хӗвел ҫутти те (каллех «хӗвел» – А.М.) калча ҫинче ҫутӑлса пырать. Хӗвел ҫутти ҫутӑлса пыни Палляна тӗлӗнтерсех ярать.

– Мӗн-ши ку? – тет вӑл хӑй ӑшӗнче.

Аптӑранӑ енне, йӑлкӑшакан ҫутӑ вырӑнне Палля тӑпра мӑклашкине персе пӑхать. Пенинчен ним те пулмасть: ҫутӑ ҫаплах Палля ҫулӗ айӑккипе йӑлкӑшса пырать»[2].

Калав вӗҫӗнче вулакан умӗнче 5 ҫул иртнӗ хыҫҫӑнхи Палля. Халӗ вӑл хӑй валли ҫирӗп тӗллев палӑртса хунӑ: «Ҫӗнӗ илемлӗ пурӑнӑҫ тӑвӑпӑр...».

Ҫапла вара, Хумма Ҫеменӗ чӑннипех те ача чунне, унӑн психологине туйса паха хайлав ҫырма пултарнӑ. Илемлӗ пайрӑм («хӗвел»), геройсен калаҫӑвӗ, пейзаж, тӗлӗк, юрӑ-сӑвӑ, тропсен тӗрлӗ тӗсӗсем –

[1] Хумма Ҫеменӗ. Палля // Юмахсемпе калавсем. Шкулта вӗренекен ачасемпе халӑха вуламалли кӗнеке. – Шупашкар, 1923. – 74 с.

[2] Ҫавӑнтах.

çаксем тата ытти сăнарлăх мелĕсем автора çамрăк ăру юратмалла калав калăплама май панă.

Трубина Мархвин Марини 9 çултах тăлăха тăрса юлать, хулара пуçтарса çӳреме тытăнать, аслăрах çулсенчи çапкаланчăксем пусахланипе вăрă ĕçне явăçать, милици урлă ача çуртне лекет, специальность туянать, ял хуçалăх ĕçне йĕркелеме вĕренсе тăван тăрăха таврăнать. Марине ялта хĕрарăмсен хастар ертӳçи пулса тăрать. Вĕсенчен пахча çимĕç çитĕнтерекен бригада йĕркелет. Тавçăруллă та çаврăнăçуллăскер, вăл малашлăха курса ĕçлет, мĕнле тусан тупăш ытларах пуласса туять. «Эпĕр кăçал хĕрарăмсем ушкăнланса хăяр акрăмăр, – тет вăл. – Хăяр питĕ нумай пулмалла. Çапла шут турăмăр: хăяра пирĕн чĕрĕлле сутас мар, тăварласа сутас терĕмĕр. Çав ĕçпе вĕт-ха Хусана каятăп»[1]. Автор хăйĕн геройĕн хăтланăвĕсене тĕплĕн сăлтавласа парать. Хайлава сăнарлăхпа витĕмлĕх кӳмелли майсемпе тата хатĕрсемпе пĕлсе усă курать. Пейзаж (Атăла, çутçанталăка, хĕвел аннине-тухнине сăнлани), килĕшӳллĕ те çыпăçуллă диалогсем, психологилĕх (çапкаланчăк ачан Федькăн синкерлĕ вилĕмне чуна пырса тивмелле ӳкерни), топонимсем (Хусан, Чулхула, Çĕрпӳ, Сĕнтĕрвăрри, Лаиш, Вăтакас, Хурамал ту), тропсен тĕрлĕ тĕсĕсем – çаксем пурте калава витĕмлĕ те илĕртӳллĕ тăваççĕ. Çыравçă тĕп геройăн портретне ăста калăпланă. Вулакан умне вăл хăйĕн çул шутне кура тĕрлĕ вăхăтра ăрасна сăнпа ĕнентерӳллĕ тухса тăрать. Сăмахран, ача çуртĕнче чух вăл çапларах: «Марине шакла пуçлăскер, вăр-вар çеç чей хатĕрлесе хучĕ. Парлаттарса ĕçлесе çӳрет. Мăйĕнчи хĕрлĕ галстукĕ вĕçкелесе кăна тăрать. Çĕмĕрт пек куçĕсем ăслăн та çивĕччĕн пăхаççĕ»[2]. Çитĕнсе хĕр пулнă Маринене ӳкерме вара автор урăхларах

[1] Трубина Мархви. Марине. Калав. – Шупашкар, 1929. – 6 с.
[2] Çавăнтах. – 5–6 с.

сăрăсемпе усă курать: «Шурă тутăрлă, хура ҫивĕтĕ хулпуҫҫи ҫинерех пынă. Ҫивĕтĕ вĕҫĕ кăтрарах. Хĕрлĕ ҫавракa питлĕ, хура куҫлă, 18–19 ҫулсенче пур»[1].

С. Ялавин хăйĕн «Кавруҫ» хайлавĕн жанрне калав тесе кăтартать. Анчах та унта повесть паллисем те сисĕнеҫҫĕ. Геройсен йышĕ пысăкки (10 ҫын тавра), ĕҫсем вăрăм вăхăтра (5–6 ҫул хушшинче) тата анлă хутлăхра (тăван ялта, Шупашкарта, Мускавра) пулса иртни т. ыт. те «Кавруҫа» эпика прозин калăплăрах форми енне туртаҫҫĕ.

Хайлавăн тĕп геройĕ – Кавруҫ. Унăн шăпи чылай енчен Трубина Мархвин Маринине ҫывăх. Пуҫламăшĕнче пирĕн умра – ҫиччĕ тултарса саккăра кайнă ача. Вĕҫĕнче – выҫлăхпа тиф хăрушлăхĕ витĕр тухнă, Мускаври ача ҫуртĕнче ӳссе ҫитĕннĕ, тăван яла таврăнса ĕҫе хастарлăн пуҫăннă, Шупашкар рабфакне вĕренме кĕме хатĕрленекен мал ĕмĕтлĕ каччă. Прозаик Кавруҫăн ачалăхне асра юлмалла сăнлать. Вăл – тыткаларăшĕпе, шухăшлавĕпе чăн-чăн чăваш пепки, К. Ивановăн Сенттине аса илтерет. Унăн тусĕсем нумай. Вĕсемпе кунĕн-ҫĕрĕн урамра чупса ҫӳрет. Тавралăхри пулăмсемпе кăсăкланать. Пурне те курасшăн-пĕлесшĕн. Акă вăл ашшĕпе пĕрле хире кайнине кăтартакан ӳкерчĕк: «Кавруҫ урапа ҫинче йĕри-тавра пăхкаласа пырать. Темиҫе ҫухрăм пулĕ хир тап-таса. Таҫти инҫетри япаласем курăнса выртаҫҫĕ.

– Атте, мĕн вăл а-а-в лере инҫетре чăпар курăнать? – тесе тăсса кăтартать Кавруҫ.

– Кĕтӳ вĕт вăл, ҫавна паллаймастни?

– Ма вак вара ĕнесем? – тĕлĕнет Кавруҫ.

– Инҫетрен ҫапла курăнать вăл, айван, – тет вăл кун хыҫҫăн. – Тăпр-у-у! Стать! – туртса чарчĕ вăл

[1] Трубина Мархви. Марине. Калав. – Шупашкар, 1929. – 3–4 с.

лашине»[2].

Прозаик «чăваш ачин хăрах ури сăпкара, тепри – сухара» текен халăх сăмахне асра тытса, Кавруç пĕчĕклех ĕçе çыпăçма хăтланнине ĕнентерӳллĕ ӳкерет: «Кавруç хура, нӳрлĕ тăпра ашса плуг авринчен тытса пырать. Вăл урине ярса пуссанах плуг каснă çĕр пайăрки ун ури çине килсе пусать. Малтан хăнăхиччен пĕр-иккĕ ӳкрĕ те, кайран хăнăхрĕ, плугран каярах юлса, сыхланса пыма вĕренчĕ. Ун хыççăн, прусна тăрăх пĕр вĕççе, пĕр тăрса хура кураксем пыраççĕ, анчах Кавруç халиччен курман вĕсене, пĕлмест, çавăнтах ашшĕнчен ыйтать. Çерçие пĕлет вăл, шăнкăрча, чĕкеçе, чакака тата ыттине те пĕлет, кăсене курман халиччен.

– Мĕн шыраççĕ вĕсем, атте? – ыйтать ашшĕнчен пӳрнине тăсса кăтартса.

Э-э! Хура кураксем-и? Хурт-кăпшанкă пуçтараççĕ вĕсем, – тет ашшĕ. – Плуг хуртсене çавăрса кăларать те, вĕсем суйласа пыраççĕ»[1].

Çапла, пĕчĕк Кавруç ашшĕ-амăшĕ ăнлантарнипе тата ялти çынсем пулăшнипе çут çанталăкри пулăмсене ерипен ытларах та ытларах ăнкарма пуçлать. Çавăнпа пĕрлех ăна çынсем хушшинчи ĕçсем те шухăша яраççĕ. Ашшĕн килĕнчи пурнăç начарланнине те сисет вăл. Хирĕ япăх. Тухăçĕ сахал. Тырă илме укça пултăр тесе ашшĕ ĕнине сутать. Ăна шеллесе ача виçĕ кун хушши йĕрет. Каярахпа çичĕ пăт ырашла лашине те сутса яраççĕ. Тиф чирне пула амăшĕпе йăмăкĕ вилсе выртаççĕ. Çука ернĕ ашшĕ çурта хупса пĕчĕк ывăлĕпе ыйткалама тухса каять... Мускаври ача çуртне лекни çеç ачана пулас инкекрен çăлса хăварать.

---

[2] Яковлев С. (С. Ялавин – А.М.). Кавруç. Калав. – Шупашкар, 1929. – 10 с.

[1] Яковлев С. (С. Ялавин – А.М.). Кавруç. Калав. – Шупашкар, 1929. – 11 с.

А. Талвир та «Хĕллехи сивĕре» калавра (1929) икĕ тăлăх ачан шăпипе паллаштарать. Пĕртăван Терккапа Çерук ашшĕпе амăшĕ вилнĕ хыççăн йывăрлăха лекеççĕ, ашшĕн тетĕшĕ Кăлтăрма Михали патĕнче тертленсе пурăнаççĕ. Чи малтан асли Теркка, ют килти асаппа мăшкăла чăтаймасăр, хулана пăрахса тарать, çапкаланса çӳрекенсен хушшине лекет. Каярахпа Çерук та тетĕшĕ хыççăн тухса каять, ăна шыраса тем тĕрлĕ нуша курса пĕтет. Ачасене ăнсăртран милици тытса каять. Унта вĕсем пĕр-пĕрне палласа илеççĕ. Пĕртăвансене ача çуртне ăсатаççĕ. Унта вĕсем тинех хăйсен телейне тупаççĕ. Калава, писателĕн пĕрремĕш пичетленнĕ кĕнеки пулнă май, сюжет хиврелĕхĕ те, сăнарсен туллилĕхĕ те, конфликт витĕмлĕхĕпе композици уйрăмлăхĕ те çитсех кайман-ха. Çапах та вăл тема кирлĕлĕхĕпе хăй вăхăчĕшĕн пĕлтерĕшлĕ шутланнă. Халăх пурнăçĕ, çĕр-шыври лару-тăру тем пек йывăр пулсан та ачасене пăрахмалла маррине, вĕсемшĕн тăрăшмаллине аса илтернĕ.

20-мĕш çулсенчи ача-пăча прозинчи çыравçăсем хускатнă тепĕр ырă шухăш вăл – ачасене вĕренме, кĕнекепе туслашма йыхăрни. Ку енĕпе Г. Комиссаров-Вантерăн «Вĕренӳ çулĕпе» (1929) калавĕ палăрса тăрать.Унта Укçук ятлă хĕрачана сăнласа панă. Ашшĕ, Иван Микулайĕ вĕрентӳçĕ ӳкĕтленипе, тĕттĕм çынсен сăмахне итлемесĕр ялта чи малтан хăйĕн хĕрне шкула çӳреме ирĕк парать. Укçукĕ вара питĕ лайăх вĕренсе пырса ял-йыша тĕлĕнтерме пуçлать. Ашшĕ-амăшне те пĕлĕвĕпе савăнтарать, ял хушшинче те аван енчен палăрать. Ăна кура шкула хирĕç пыракан ытти хресченсем те хăйсен шухăшне улăштараççĕ. Калав «Вĕрентӳ çутти Тилпеш тĕттĕмлĕхне çĕнтере пуçларĕ»[1] тенипе вĕçленет.

20-мĕш çулсен варринче ача-пăча литературинче

[1] Утăм : альманах. – 1929. – 28 с.

М. Данилов-Чалтун ячĕ куранса каять. Вăл, граждан вăрçипе партизансен юхăмĕ витĕр пиçĕхсе тухнăскер, вăтам сыпăкри ачасене хăй чăтса-тӳссе ирттернĕ ĕçсене сăнлакан хивре сюжетлă калавсемпе тыткăна илет. «Вăхăтсăр вилĕм» (1924), «Ирĕклĕхшĕн çапăçакансем» (1927), «Тилĕ хыççăн» (1929), «Шахтăра» (1929), «Ункăран» (1930) хайлавсем çамрăк вулакансене кĕтмен çĕртен сиксе тухнă тĕлĕнтермĕш пулăмсемпе, çут çанталăкăн, уйрăмах тайган, романтикăллă ӳкерчĕкĕсемпе, калавçăн сĕтеклĕ те çыпăçуллă чĕлхипе туртса тăраççĕ.

20-мĕш çулсен варринче аслă классене çӳрекенсем валли Хумма Çеменĕ прозăлла хайлавсем нумай çырать. Маларах асăннă писательсен пултарулăх эткерĕнче палăрнă идеологи туртăмĕсем унăн калавĕсемпе повеçĕсенче те сисĕнеççĕ-ха. Геройĕсем – пионерсемпе комсомолецсем. Вĕсем Хĕрлĕ Çара çырăнаççĕ, кулаксемпе тата куштансемпе çапăçаççĕ, ялти пурнăçа çĕнĕлле йĕркелессишĕн кĕрешеççĕ. Çав вăхăтрах партилĕх витĕмĕллĕ çак хайлавсенче наци ача-пăча прози аталанăвĕшĕн, поэтика ӳсĕмĕшĕн усăллă, пĕлтерĕшлĕ пулăмсем те çук мар. «Пирĕн вăй!.. Вăй!..» калавăн (1924) тĕп геройĕ – Куçук. Вăл ялти шкулта вĕренет, комсомолец. Ача, Лариван сутуçă-усламçă йышшисен элекĕ хыççăн кайнă ашшĕн хĕсĕрлевне пăхмасăр, ялти ытти хастар çамрăксемпе пĕрле комсомолецсен пухăвне çӳрет, çĕннине ура хуракан кив тĕнче хӳрешкисемпе кĕрешет, культурăпа çутĕç ĕçне туса пырас енĕпе тимлĕх кăтартать. Калавăн тытăмĕ пиçĕ те тăпăл-тăпăл. Чĕлхи сĕтеклĕ те çемçе. Кашни герой хăйне евĕр сăнарлă, ăрасна чĕлхеллĕ. Пуплевĕсем халăх калаçăвне çывăх: ансат та чĕрĕ, çивĕч. Акă, хăш-пĕр тĕслĕхсем: «Кӳр кĕнекӳне: халех çунтарса ярам, çын ан куртăр», «Çамрăк турат вăл авкаланма юрататъ», «Куçук кĕтет. Кĕнекине вулать... Татах кĕтет», «Патакпа çӳреме кунта сурăх кĕтĕвĕ мар»,

«Куçукĕ ĕнертенпе ăша çăкăр яман», «Ман килес... Мĕн çĕмĕрлетĕр?», «Вил пĕреххут, çăва патне кайманскер!». Автор текстра тропсемпе, сăвă-юрăпа меллĕ усă курать. Вăл пуян-куштансен ачи-пăчи килсе тапăннăран хăраса-чĕтресе вулав çуртĕнче çĕр каçнă çамрăксем ире савăк кăмăлпа кĕтсе илнине икĕ-виçĕ йĕркепех çут çанталăк пулăмĕсемпе çураçуллăн асра юлмалла ӳкерет: «Çĕмрĕк кантăк витĕр ирхи хĕвел çути кĕчĕ... Пӳртри ачасем татах хавасланса кайрĕç. Куçук ăшĕнче: «Пирĕн вăй!.. Вăй!..» – тесе, урай тăрăх аллинчи хаçатпа уткаласа çӳрет»[1].

«Çĕтĕк сăкман» калавра та (1926) çыравçă çавнашкал ачанах сăнласа парать. Вăл – Ваçук. Ăна та ашшĕ килĕнчен хăваласа кăларса янă. Халĕ вăл Шупашкара коммуна шкулне вĕренме килнĕ. Хайлавăн малтанхи пайĕнчех çыравçă ун сăнарне куç умне курăмлăн кăларса тăратать: «Параход ... часах пристане çитсе ларчĕ. Пароходран, ытти çынсемпе пĕрле, пĕр çĕтĕк сăкманлă лутра сарă ача вĕçтерсе тухрĕ. Майне лучăрканса пĕтнĕ хĕрлĕ хăмаçпа çавăрса çыхнă. Аллинче пушă çăкăр хутаççи. Çĕтĕк сăкманне йӳле янă. Çынсем ăна чăр-чар пăхса илеççĕ.

– Пионер-и эсĕ?

– Пионер.

– Ăçта каятăн?

– Шупашкара килтĕм.

Пионер паттăр калаçать. Хăрамасть, ютшăнмасть, Кулкалать кăна.

– Мĕн ятлă?

– Ваçук. N ялĕсем, Çĕрпӳ уезчĕ. Атте килтен хăваласа ячĕ... Ăçта кунта Обкомол?»[2]. Çулĕпе çамрăк пулин те, Ваçук ку таранччен тем те курма-тӳсме

---

[1] Хумма Çеменĕ. «Пирĕн вăй!.. Вăй!..». – Шупашкар, 1983. – 34 с.

[2] Хумма Çеменĕ. Калавсем. – Шупашкар, 1940. – 66–67 с.

ӗлкӗрнӗ: чухӑн ҫемьере ҫуралнӑ, 7 ҫултах амӑшӗсӗр тӑрса юлнӑ, килте тарҫӑ вырӑнӗнче пулнӑ. Ашшӗ ирӗк памасӑрах шкула ҫӳреме пуҫланӑ. Выҫлӑх ҫулӗсенче Мускаври ача ҫуртне кайнӑ. Яла таврӑнсан малалла вӗреннӗ, комсомола кӗнӗ. Ҫавӑншӑн кайран ашшӗн патакне ҫиме пуҫланӑ.

Ку хайлавӑн жанрне калав-очерк теме пулать. Мӗншӗн тесен автор унӑн сюжетне чӑн пурнӑҫран илнӗ. Текста тӗрлӗ документсене – характристикӑна, ҫырӑва т. ыт. те – вырӑнлӑ кӗртсе лартнӑ.

20-мӗш ҫулсенчех Хумма Ҫеменӗ ача-пӑча литературине повесть жанрӗпе пуянлатать. Ҫак формӑпа икӗ хайлав ҫырать. Пӗри – «Штрум» (1920), тепри – «Тимуш» («Ача чухнехи», 1924–1931). Пӗрремӗшне ҫитӗннисем валли ҫырнӑ. Анчах та унта Михаляпа Пракуш ҫамрӑксен граждан вӑрҫин синкерлӗ ҫулӗсенчи пӑлханулла шухӑш-кӑмӑлне сӑнланӑран, хайлав хӗрӳллӗ те эмоциллӗ поэтикӑллӑ пулнӑран повеҫе аслӑ ҫулсенчи ачасен вулавне те кӗртме май пур. «Штрум», шухӑшӗпе политика туртӑмӗллӗ пулсан та, сӑнарлӑхӗпе илемлӗхӗ енӗпе питӗ ҫӳллӗ шайра тӑрать. Ӑна М. Сироткин профессор та тӗрӗс кӑтартса хӑварнӑ: «Повеҫӗн пӗтӗм стилӗ хумханулла, событисен хаярлӑхне, вӗсен мӑнаҫлӑхне палӑртма май паракан стиль»[1], – тет вӑл. Хайлавра уйрӑм геройсен шӑпипе килӗшӳллӗн йӗркеленӗ ҫирӗп сюжет курӑнмасть. Малти вырӑна автор халӑха лартать. Михаля ӗҫӗ-хӗлӗпе шухӑш-кӑмӑлӗ халӑхӑн пӗтӗмӗшле сӑнарне уҫӑмлатма май парать. Прозаикӑн ҫынсен чун ыратӑвне, кӑмӑл пӑлханӑвне палӑртмалли тӗп мелӗ – ҫут ҫанталӑк ӳкерчӗкӗсем: «Пӗлӗчӗсем хура, хаяр, кӑвак», «Хӗвел куҫӗ темрен хӑраса хура пӗлӗт айнелле кӗре-кӗре пытанать», «Ҫил сиввӗн, выҫӑ кашкӑр пек уласа ҫӳрет», вӑрманӗ

[1] Сироткин М.Я. Чӑваш литератури. 9-мӗш класра вӗренмелли кӗнеке. – Шупашкар, 1977. – 102 с.

хăрушшăн кашлать: «Каш-каш!.. Каш-каш!..». Ыйтуллă, чĕнӳллĕ, кăшкăруллă кĕске пуплевсем, темиçе хут каланисем, инверсисем, эпитетсем, метафорăллă çаврăмсем т. ыт. те – повеçĕн хăйне евĕрлĕ стильне йĕркелеççĕ. Вăл ачасен кăмăлĕпе килĕшӳллĕ.

«Ача чухнехи» – çамрăк ăру валли ятарласа çырнă пĕрремĕш повесть. Унта вăтам тата аслă сыпăксенчи вулакансем 13 çулхи Тимушăн пурнăçĕпе паллашаççĕ. Прологра амăшĕ ăна вăрманта çуратнине кăтартакан сцена пур. Вăл чăваш ачин шăпи синкерлĕ пуласса малтанах систерет. «Тимуш амăшĕ çакна асăрхарĕ, – тет çыравçă, – хĕвел пĕрре тĕксĕм пĕлĕт татăкĕ айне кĕрет те, пĕлĕт татăкне хура сăн çапать. Унтан хĕвел пĕлĕт айĕнчен тухать те, тепĕртак тăрсан, каллех пĕлĕт айне кĕрет. Çавăн пек темиçе хут та пулчĕ»[1]. Кайран, чăн пурнăçра та ачан кун-çулĕ тикĕсех шуса пыманнине куратпăр. Пиллĕкре чухнех Тимуш шыв хуранĕ çине ӳксе пуç чашкине амантать, саккăр-тăххăрта сысна кĕтĕвне кĕтсе çӳрет, амăшне хăй валли кĕпе туянмалăх укçа туса парас тесе пуçтарнă çырлине хăй çиес вырăнне тутарсене сутать. Хăйĕнчен кăшт кăна аслăрах Наçтук аппăшĕ тертленсе вилнине те чăтса ирттерет ача, инкеке лекнĕ хуçалăха ура çине тăратас шанчăка çухатнă ашшĕ ĕçке ернине, амăшĕпе йăмăкне нушалантарнине курса та чунне ыраттарать. Пĕчĕк ăсĕпе, ирĕк чунĕпе кунĕн-çĕрĕн патак çиекен амăшĕпе куççуль юхтаракан йăмăкне шеллесе ашшĕнчен уйрăм вăрманта пӳрт лартса пурăнас тесе те шутласа пăхать. Малтанласа пĕчĕкскер нумай япалан тупсăмне пĕлсех çитерейместха. Пыра-киле вара, пысăкланнăçемĕн, амăшĕпе Егор Павлович вĕрентӳçĕ пек ырă çынсем пулăшнипе, шкулпа тата кĕнекепе туслашнипе унăн тавракурăмĕ ӳссе пырать. Ашшĕ чухăн пурăннăран, çук

[1] Хумма Çеменĕ. Ача чухнехи // Хумма Çеменĕ. Пирĕн вăй!.. Вăй!.. – Шупашкар, 1983. – 147 с.

пурнăç çине тарăхса эрех тыткăнне лекнине, арăмĕ çине алă çĕкленине чухлама пуçлать.

Ача ачах. Тимуш та, автор пулăшнипе, унăн тĕнчинчех пурăнать. Çулла урама выляма тухать, вăрмана çырлана çӳрет, хĕлле çунапа ярăнма каять, çуркунне шыв юххисем çине армансем лартать. Çав вăхăтрах килти ĕçе те тăвать, ашшĕне ака-сухара пулăшать. Повесть вĕçнелле, хăйĕн ӳсĕмне кура, ытти ачасем хушшинче чăрсăртарах тытасси те пур унăн. Çапла вара, Тимуш вулакан умне хăйĕн пĕтĕм тыткаларăшĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе, савăнăçĕпе, хуйхи-суйхипе, шухăшĕ-ĕмĕчĕпе чĕррĕн те курăмлăн тухса тăрать.

Повеçре амăшĕн сăнарĕ паллă вырăн йышăнать. Хветле – чăн-чăн чăваш хĕрарăмĕ. Хамăр халăхăн наци паллисем пурте пур унта: тĕлĕнмелле ĕçченлĕхпе хастарлăх та, чăтăмлăхпа тӳсĕмлĕх те, сăпайлăхпа сапăрлăх та, аптраманлăх та, тасалăхпа тӳрĕлĕх те. Вăл хăйĕн ачисен телейĕшĕн чунне пама, кирек мĕнле хĕн-асапа та йышăнма хатĕр.

Повеçĕн малтанхи пайĕнче ĕçсем логикăлла тĕрĕс çулпа аталанса пыраççĕ. Анчах та варринелле çывхарсан çав туртăм вăйсăрланать пек. Сăлтавĕ – автор совет идеологийĕ хыççăн кайса чăваш тĕнчине икĕ хире-хирĕçле пая уйăрса кăтартас енне сулăннинче (пуян Митюкпа пачăшкă тавращĕсем тата Уçăппа Чукмар Иванĕ йышши чухăнсем), сюжета ирĕксĕрлесе революципе социаллă танмарлăх ыйтăвĕсем еннелле çавăрнинче (Егор Павлович хăйĕн хваттерĕнче чухăнсене пуçтарса вăрттăн пухусем ирттерет, халăх хушшинче ăнлантару ĕçне туса пырать. Çав кружока ялти чухăнсемпе пĕрлех Тимуш та çӳрет. Сăмахран, пĕр çĕрте вăл учитель хваттерĕнче «Хыпар» хаçатра Балти халăхĕсем «улпутсен çĕрне туртса илессишĕн пăлханни çинчен вуласа ларать». Тимуш вĕрентекенĕн «çĕрпе ирĕкшĕн ... халăх пурнăçне аванлатассишĕн пурин те

хытă тăрăшмалла» тенĕ сăмахĕсем пирки шухăша каять).

Повеçĕн чĕлхи сăнарлă та илемлĕ. Вăл халăх калаçăвĕнчи пуплевсемпе, сăмах çаврăнăшĕсемпе, ваттисен сăмахĕсемпе, каларăшсемпе пуян («Пирĕн пурнăç – йытă пурнăçĕ», «Пуян çыннăн куç выçă», «Унăн йытти тилĕ тытать, теççĕ», «Ытла хăрасан ухмаха ерет, теççĕ», «Пӳрмен çăкăр çăвартан тухса ӳкет», «Пуйма кайнă – пĕтсе килнĕ» т. ыт. те). Хайлавра пейзаж пĕлтерĕшĕ пысăк. Автор çурхи вăрмана, çанталăка, ирхи хĕвеле хитре сăнлать. Геройсен портретне кашнине хăйне евĕрлĕ ӳкерет. Тĕслĕхрен, Тимуша вăл çапларах сăнарлать: «Тăхăнасса хура тăла сăхман, хура путек тирĕнчен çĕлетнĕ калпак тăхăннă. Класра хĕрлĕпе кăвак çипрен тĕртсе тунă кĕпепе те кăвак йĕмпе ларать. Хăш чух тата улача кĕпе тăхăнать. Хура çӳçне нихçан та çитĕнме памасть, ӳснĕ пеккине хачăпа кастарать»[1]. Хумма Çеменĕ – психологи ăсти. Хайлавра вăл Наçтук вилĕмне чуна тивмелле çырса кăтартать: «Наçтук ун чухне вуннăра пулнă. Пĕр эрне хушши пĕрмай юнлă хутăш юхтарса пурăнчĕ вăл. Апат тавраш çимест. Лупасайне каятчĕ те:

– Анне, ан кай! – тесе макăра-макăра яратчĕ.

Наçтук ... чĕрĕлеймерĕ. Вăл пĕтнĕçем пĕтсе пычĕ. Тĕпелти сак çинче чипер выртнă çĕртех авкаланса хуçланма тапратрĕ.

– Епле те пулсан чĕртеймĕр-ши? Чĕртеймĕр-ши? – тенĕ пек, пурин çине те йăваш тулли куçĕсемпе тилмĕре-тилмĕре пăхрĕ. Пĕтĕм вăйне пухса юлашки хут çӳлелле авкаланса илчĕ. Аллисене чăмăртаса кăкри çине çапăнтара-çапăнтара, вирлĕн иккĕ-виççĕ сулса ячĕ те урисене тăсса пăрахрĕ, шăпăрт пулчĕ: сасси çĕтрĕ, сывлăшĕ тухрĕ... Наçтук вилчĕ»[2].

---

[1] Хумма Çеменĕ. Ача чухнехи // Хумма Çеменĕ. Пирĕн вăй!.. Вăй!.. – Шупашкар, 1983. – 168 с.
[2] Çавăнтах. – 155 с.

# Драматурги

20-мĕш çулсенчи ача-пăча драматургийĕ поэзипе тата прозăпа танлаштарсан чылай вăйсăртарах-ха. Маларах систернĕччĕ ĕнтĕ, ку вăл, чи малтан, революцичченхи тапхăрта наци драматургийĕ начар аталаннипе, çак енĕпе ĕçлекен чăваш çыравçисен опычĕ сахалтараххипе çыхăннă. Çав çулсенче Н. Полоруссов-Шелепи сăвăç хăй вăйне драматургире тĕрĕслесе пăхма шутлать. Пĕчĕккисем валли «Кушакпа автан» сăвăлла юмах (1926) тата «Çулталăк хушши» литературăпа музыка хайлавĕ (1926) çырать. Вырăсларан та куçарать.

Аслă çулсенчи ачасен вулавне М. Данилов-Чалтунăн «Тайгара» (1928), Н. Полоруссов-Шелепин «Шуррисем килсен» (1925), Трубина Мархвин «Çĕр чĕлхи» (1927), Кăтран «Ăнлантарчĕç» (1929) пьесисене кĕртме пулать. Анчах та вĕсем ытла та идеологизациллĕ. Пĕрремĕшпе иккĕмĕшĕнче граждан вăрçи событийĕсене, хĕрлисемпе шуррисем хушшинче пыракан çапăçусене ÿкерсе кăтартнă. Виççĕмĕшпе тăваттăмĕш пьесăсенче пионерсемпе комсомолецсем хресченсене пĕрлешÿллĕ хуçалăха явăçтарас тĕлĕшпе ĕçленине, кулак-куштан таврашĕпе кĕрешнине сăнласа пама тăрăшнă. Ку пьесăсем шухăшĕ-тытăмĕпе, сюжечĕпе, сăнарсен йĕркипе, сăнлав меслечĕпе 20-мĕш çулсенчи совет драматургийĕнчи агитаци театрне аса илтереççĕ.

20-мĕш çулсенчи ача-пăча литератури пирки пĕтĕмлетсе çавна каламалла. Çак хутлăхра, ун умĕнхи тапхăртипе танлаштарсан, ачасем валли хайлавсем самаях нумай пичетленеççĕ. Вĕсем уйрăм кĕнекен те, хаçат-журналта та йышлă тухаççĕ. Ытларахăшĕ – куçарусем (вырăс тата тĕнче классикисен тĕслĕхĕсем). Оригиналлă хайлавсем сахалтарах-ха. Вĕсем, тĕпрен илсен, вунăçуллăхăн варринчен тытăнса курăнкалама тытăнаççĕ.

20-мĕш çулсенче кĕнекесемпе хайлавсем пур ӳсĕмри ачасем валли тухма пуçлаççĕ. Кĕçĕн çулхисене вулама ытларах юмахсемпе куçарусем пичетленеççĕ. Вăтам тата аслă сыпăксенчисен вара, вĕсемсĕр пуçне, чăваш писателĕсем çырнă хайлавсемпе те паллашма майсем пулаççĕ. Темипе сюжечĕ, шухăшĕ тĕлĕшпе вĕсенчен ытларахăшĕ политика туртăмĕллĕ. Çак хайлавсенче класс кĕрешĕвĕ, чухăнсемпе пуянсем, хĕрлисемпе шуррисем хушшинчи тытăçусем, çĕннипе киввин, хальхипе ĕлĕкхин, шуррипе хурин хирĕçтăрăвĕ, пионерсемпе комсомолецсен чăрсăр кĕрешĕвĕ малта тăраççĕ. Çав авторсен стилĕшĕн сюжета, сăнара хатĕр схема-штамп ăшне вырнаçтарас туртăм палăруллă. Çыравçăсем хăйсен çамрăк геройĕсене (нумай чухне – пионерсене) граждан вăрçипе партизансен юхăмне хутшăнтараççĕ, класс кĕрешĕвне, хут пĕлменлĕхе пĕтерес тата çĕнĕ культура йĕркелес ĕçсене явăçтараççĕ. Çав геройсемшĕн ашшĕ-амăшĕпе çемйи, килĕ-çурчĕ мар, коллектив, ушкăн, йыш, пионерпа комсомол организацийĕсем хаклăрах. Тепĕр чухне вĕсем, авторĕсем хистенĕрен, хăйсен çул шутне кура мар тĕлĕнтермĕш ĕçсем те тăваççĕ.

Çав вăхăтрах çак хайлавсем ача-пăча литературине малалла кайма та пулăшман мар. Вĕсем пĕчĕккисен сăмах ӳнерĕн аталанăвĕшĕн пĕлтерĕшлĕ пулăмсене çуратсах тăнă. Çав шутра: приключенилĕхпе романтика (Л. Агаковпа М. Данилов-Чалтун), психологилĕх, геройсен чун хусканăвне çутçанталăкри пулăмсемпе çураçуллăн çутатни (Хумма Çеменĕ, Трубина Мархви, М. Данилов-Чалтун), ачасен шăпине, кулленхи ĕçне-хĕлне, вĕренĕвне, вăййи-куллине, шухăш-кăмăлне çырса кăтартма тăрăшни (Трубина Мархви, С. Ялавин, С. Шăпчăк, Г. Комиссаров-Вантер т. ыт. те). Ача-пăча хайлавĕсен поэтики пуянланма пуçлани те палăруллă пулăм.

Çак тапхăрта пĕчĕккисем валли çырас тĕлĕшпе революцичченех ят илнĕ писательсенчен Н. Полоруссов-Шелепи, Трубина Мархви, Г. Комиссаров-Вантер тимлĕх кăтартаççĕ. Литературăна çĕнĕ çамрăк вăй килсе кĕрет. Çав шутра: Хумма Çеменĕ, С. Ялавин, С. Шăпчăк, М. Данилов-Чалтун. Ача-пăча литературинче повесть жанрĕ çуралать («Тимуш», «Штрум», «Кавруç»).

## *Ыйтусемпе ĕçсем*

1. Çĕр-шывăн тата Чăваш Енĕн Октябрь пăлхавăрĕ хыççăнхи тата 20-мĕш çулĕсенчи обществăпа политика, экономикăпа культура лару-тăрăвне хак парăр.

2. Ача-пăча литературине ертсе пырассине патшалăх хăй аллине илнин ырă тата сивлек енĕсем.

3. Тĕнче тата вырăс ача-пăча классикисен тăван чĕлхене куçарнă хайлавĕсен тата халăх юмахĕсен чăваш ачисен вулавĕнчи пĕлтерĕшĕ.

4. Трубина Мархвин совет ача-пăча литератури кунçулĕн пуçламăшĕнчи вырăнĕ.

5. Хумма Çеменĕн сăввисемпе калавĕсен, «Тимуш» повеçĕн сăнарлăхĕпе хăйнеевĕрлĕхĕ, нацилĕх паллисем.

## *Усă курмалли литература*

Арзамасцева, И. Н. Детская литература : учебник. – 3-е издание, переработанное и дополненное / И. Н. Арзамасцева, С. А. Николаева. – М. : Изд. центр «Академия», 2005. – С. 271–369.

Русская литература для детей : уч. пособие. – 2-е издание, исправленное / под ред. Т. Д. Полозовой. – М. : Изд. центр «Академия», 1998. – С. 272–317.

Рогачев, В. А. Проблемы становления и развития русской советской детской поэзии 20-х годов / В. А. Рогачев. – Свердловск, 1990.

Штейнер, Е. Авангард и построение нового человека: искусство советской детской книги 1920-х годов / Е. Штейнер. – М., 2002.

Сироткин, М. Я. Очерк истории чувашской советской литературы / М. Я. Сироткин. – Чебоксары, 1956.

Чăваш совет литератури. – Шупашкар, 1972.

Канюков, В. Я. Основные этапы развития чувашской детской литературы / В. Я. Канюков. – М., 1954.

Канюков, В. Я. Трубина Мархви. Пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен çырнă очерк / В. Я. Канюков. – Шупашкар, 1959.

Петров, Н. Хумма Çеменĕ тата унăн пултарулăхĕ / Н. Петров // Ялав. – 1963. – 3№.

## II СЫПĂК

## 30-МĔШ ÇУЛСЕНЧИ АЧА-ПĂЧА ЛИТЕРАТУРИНЧИ ЖАНРПА СТИЛЬ ШЫРАВĔСЕМ

30-мĕш çулсем – ача-пăча литературишĕн çĕнĕ çĕкленӳ тапхăрĕ. Çак хушăра вăл хайлавсен шучĕ енĕпе те, илемлĕх шайĕпе те малалла татăклă утăм тăвать. 1930–1939 çулсенче ачасем валли чăвашла 141 кĕнеке 748400 экз. тиражпа тухать. Ку кăтартусем унччехи вунăçуллăхрипе танлаштарсан виçĕ хут ытла пысăкрах. Кĕнекесенчен 100-ĕшĕ – вырăсларан куçарнисем, 41-ĕшĕ – чăваш писателĕсем çырнисем. Оригиналлă хайлавсем халĕ унчченхинчен 4 хут ытла нумайрах. Çав пĕтĕм хисепрен 26-ăшĕ – проза, 11-ĕшĕ – поэзи, 4-ăшĕ – драматурги кĕнекисем. Чăваш авторĕсем çырнисем пур сыпăкри ачасем валли те пур, вăтам тата кĕçĕн ӳсĕмрисем валли ытларах, аслăраххисем валли сахалтарах. Вĕсем хушшинче – икĕ повесть, икĕ поэма, тăхăр юмах. Куçарусемпе оригиналлă хайлавсем ачасен ӳсĕмне кура ятарлă ярăмсемпе тухса тăраççĕ. 1938 çулта чи пĕчĕккисем валли «Тетте-кĕнеке» ятпа алă лаппи пысăкăш 10 çӳхе кĕнеке кун çути курать. Вĕсем, тĕпрен илсен, вырăс ача-пăча классикĕсен Л. Толстойăн, К. Чуковскин, Л. Квиткон, А. тата П. Бартосен, Н. Забилан тата ыттисен хайлавĕсем. «Шкул ачисен библиотеки. Классиксем» ярăма тĕнчери тата çĕршыври паллă çыравçăсен В. Шекспирăн, Ж. Мольерăн, М. Коцюбинскин, Л. Толстойăн, М. Горькин, М. Лермонтовăн, В. Гаршинăн тата ыттисен, «Шкул ачисен библиотеки. Чăваш писателĕсем» ярăма К. Ивановăн, Хумма Çеменĕн, Трубина Мархвин, Иван Мучин хайлавĕсене вырнаçтарнă. «Кĕнеке хыççăн кĕнеке» рубрика пуринчен те ытларах тĕл пулать. Унта 24 кĕнеке пичетленнĕ.

Ăна кĕçĕн тата вăтам çулхисене халалланă. 30-мĕш çулсенче çавăн пекех ача-пăча кĕнекисене «Шкул ачисен библиотеки», «Шкул библиотеки», «Пионерсен библиотеки», «Пĕчĕк библиотека», «Ачасен библиотеки» ярăмсемпе кăларса тăнă.

Революцичченех ят илнĕ Н. Полоруссов-Шелепипе Трубина Мархви тата совет влаçĕн малтанхи тапхăрĕнче çырма пуçланă Хумма Çеменĕ, М. Данилов-Чалтун, С. Ялавин, С. Шăпчăк тата ытти хăш-пĕр писательсен çумне халĕ çĕнĕ талантлă вăй хушăнать. Çав ушкăнра – Л. Агаков, А. Талвир, Ухсай Яккăвĕ, К. Чулкаç, В. Алакĕр, И. Ивник, Мĕтри Ваçлейĕ, Иван Мучи, Уйăп Мишши, Хĕв. Çитта, М. Нямань тата ыт. те. Тăван халăхăн сăмах вĕççĕн çӳрекен пултарулăхĕ, тĕнче тата совет классики çамрăк авторсемшĕн ăсталăха туптамалли чăн-чăн шкул пулса тăрать. Куçару ĕçне хастарлă хутшăнни те вĕсене çырас хăнăхусене ӳстерсе пыма пулăшать. Çамрăк писательсем литературăн виçĕ тĕп ретĕнче те тĕрлĕ жанрсене хăюллăн алла илсе пыраççĕ.

Çак тапхăр илемлĕх шыравĕсен нумай енлĕхĕпе, çырав стилĕсен ăрасналăхĕпе, сюжетпа тематика анлăлăхĕпе тата тарăнлăхĕпе уйрăлса тăрать.

30-мĕш çулсенче çĕршывра, çав шутра республикăра та, ача-пăча литературине аталанмашкăн меллĕ лару-тăру йĕркеленет. Çак хутлăхра çамрăк ăрăва ертсе пырассине, унпа çыхăннă мĕнпур ыйтусене татса парассине партипе патшалăх, унчченхи пекех, хăйсен аллинче çирĕп тытса тăраççĕ, ача-пăча литературине те хăйсен куçĕнчен вĕçертмеççĕ.

Ачасемпе çамрăксен литературине аталантарас тĕлĕшпе çĕршыв шайĕнче туса ирттерекен йĕркелӳ ĕçĕсем ку енĕпе Чăвашъенре те татăклă хускану тума май параççĕ. ЧАППăн IV съездĕнче (1930), ЧАПП правленийĕн пленумĕн анлă ларăвĕнче (1931), Чăваш

писателĕсен I съездĕнче (1934) наци ача-пăча литератури ыйтăвĕсене пысăк тимлĕх уйăраççĕ.

1933 çулхи авăнра Чăваш уйрăмĕн оргкомитечĕ ачасем валли çыракан писательсен канашлăвне ирттерет. ВКП(б) обкомĕн бюровĕ «Ача-пăча литературине кăларасси çинчен» хăйĕн 1932 çулхи раштавăн 16-мĕшĕнчи ларăвĕнче сўтсе явни, ку енĕпе республикăра çывăх вăхăтра пысăк ĕçсем туса ирттерме палăртни çинчен маларах каланăччĕ ĕнтĕ. Çав ĕçсем хушшинче, сăмахран, çаксем пур: ача-пăча литератури кăлармалли çулталăк планне çĕнĕрен пăхса тухса пысăклатасси, унти оригиналлă хайлавсен шутне ўстересси; шкул çулне çитменнисем валли кĕнекесем, çавăн пекех пĕчĕккисем валли пьесăсем, сăвă-юрăпа вăйă-кулă пуххисем ытларах кăларасси; кĕнеке хатĕрлекен çыравçăсемпе художниксен ăсталăхĕпе пĕлўлĕхне хăпартасси; çулсеренех чи лайăх ача-пăча хайлавĕсем çырас тĕлĕшпе конкурс йĕркелесси; тĕп ача-пăча библиотекипе вулав çуртне уçасси; ача-пăча литературин коллекторне туса хурасси; ача-пăча валли çыракан авторсен конференцийĕсене ирттересси тата ыт. те[1].

Наци ача-пăча литературин кун-çулĕнче тăван чĕлхепе кăларакан пичет кăларăмĕсен тўпи те пĕчĕк мар. 30-мĕш çулсенче ачасем валли «Хатĕр пул» журналпа (1929–1941), «Пионер сасси» хаçат (1930–1941) тухса тăраççĕ. Кунсăр пуçне çитĕннисен хаçачĕсемпе журналĕсенче çитĕнекен ăру валли хайлавсем нумай пичетленеççĕ. Сăмахран, журналсенчен «Капкăнпа» «Ĕç хĕрарăмĕ» ятарласа «Ачасен страници», «Вăтам Атăл», «Ачасен литератури» ярăмсем кăларса тăраççĕ.

30-мĕш çулсенче ача-пăча литературине малалла кайма пулăшнă пулăмсен шутне çавăн пекех тĕнче тата совет классикине чăвашла куçарас ĕç анлăн сарăлса

---

[1] ЧР кучухнехи историйĕн патшалăх архивĕ, I фонд, 13 опись, 40 ĕç, 232 çыхă, 315–316 листасем.

кайнине, наци ача-пӑча литература критики ҫуралнине, 1932 ҫулхи чӳк уйӑхӗнче Шупашкарта ҫамрӑксен театрӗ уҫӑлнине, пӗчӗккисем валли радиокӑларӑмсем парса тӑнине тата ыт. те кӗртмелле.

## Поэзи

20-мӗш ҫулсенче кӑларнӑ 11 оригиналлӑ кӗнеке хушшинче сӑвӑласа ҫырнисем пӗрре те ҫукчӗ. Халӗ вара 41 кӗнекерен 11-ӗшӗ – поэзи япалисем. Вӗсенчен 5-ӗшне кӗҫӗн ҫулхисене халалланӑ. 1931 ҫулта Чӑваш издательстви Н. Пиктемирӑн «Колхоз ачисем», Н. Янкасӑн «Виктӑрпа шӑнкӑрч» кӗнекисене кун ҫути кӑтартнӑ. Вӗсене 7–10 ҫулхисем валли кӑларнӑ. «Виктӑрпа шӑнкӑрч» – сюжетлӑ сӑвӑ. Вӑл ҫурхи илӗртӳллӗ ире, ҫывракан ача вӑраннине сӑнланипе пуҫланать:

Пӳрте уҫӑ кантӑк витӗр
Ҫур хӗвелӗ ярӑмланчӗ.
Паян пирӗн пӗчӗк Виктӑр
Ыйхӑран ирех вӑранчӗ...

Илӗртӳллӗ сӑнарлӑ параллельлӗх: каҫ иртсе кайнӑ хыҫҫӑн ҫур хӗвелӗ те ӗҫе тытӑннӑ, «ярӑмланса» шевлине таврана сапалать. Виктӑр та вырӑн ҫинчен ҫӗкленсе хӑйӗн маларахах палӑртса хунӑ тӗллевне пурнӑҫлама тытӑнать. Вӑл хӑйӗн ҫунатлӑ тусӗ валли вӗлле ӑсталать, туса пӗтерет те йывӑҫ тӑррине ҫакса хурать. Кайран пӳрте кӗрсе кантӑкран пӑхса сӑнать: шӑнкӑрчи унӑн ӗҫне тиркемӗ-ши? Вӗҫен кайӑк вӗллене хапӑлласа йышӑнать. Виктӑр та хӑй тунӑ усӑллӑ ӗҫшӗн чӗререн хӗпӗртет.

Сӑвӑ айӗнче «Кайӑк-кӗшӗк – пирӗн тус» калуллӑ йыхрав пур. Вӑх хайлавӑн витӗмлӗхне татах та

ӳстерет. «Мĕнпур пионерсемпе шкул ачисен те çак Виктăр пекех тума тăрăшмалла, – тенĕ унта. – Кайăксене çулла çаванашкал йăвасем туса панисĕр пуçне – вĕсене тата хĕлле те пулăшмалла. Хĕлле, май килнĕ таран, тăрантарас пулать. Кăна валли кормушкăсем тумалла ... Вĕсене ĕрчеме май памалла...»[1]. Кĕнекене чăваш халăх художникĕн М. Спиридоновăн ӳкерчĕкĕсемпе илемлетнĕ. Çакă та ăна ачасемшĕн илĕртӳллĕ те ĕнентерӳллĕ тăвать.

«Колхоз ачисем» сăвăсен пуххи те ачасемшĕн паха парне. Хайлавĕсем пурте тенĕ пекех сюжетлă, сăнарлă, çепĕç юхăмлă. Тĕслĕхрен, «Пахча» сăвăра Н. Пиктемир пахча çимĕç ĕрчетекен тăрăшуллă ачасене сăнласа парать. Вĕсем ĕçре те хастар, вăйă-кулăпа юрă-ташăра та маттур. Сăввăн формипе кĕвви ачасемшĕн çăмăл та евĕк: çаврисем пилĕкшер йĕркеллĕ, йĕркисем çичшер сыпăклă, рифмисене юлашки сыпăка пусăмлатса тунă, пĕр йышши уçă тата хупă сасăсем янăраса çепĕç çемĕ çуратаççĕ.

Шăрлатса юхать çырма,
Хĕрринче ун хурама,
Аякра – кăтра вăрман,
Лапăра – ача-пăча.
Ӳстерет пĕчĕк пахча...
Ачасем те – кахал мар,
Ĕçлеме вĕсем – кăвар,
Пит пĕлеççĕ юрлама,
Тĕрлĕ вăйă выляма.
Ĕнтĕ ирĕк пурăнма![2]

«Йĕлтĕрпе» сăвăра куç умне хаяр хĕл сиввине пăхмасăр хирте ярăнса ӳт-пӳне çеç мар, характерне те

[1] Янкас Н. Виктăрпа шăнкăрч. – Шупашкар, 1931. – 15 с.
[2] Пиктемир Н. Колхоз ачисем. – Шупашкар, 1931. – 10 с.

çирĕплетекен çивĕч ача тухса тăрать. Автор 20-30-мĕш çулсенчи мал ĕмĕтлĕ чăваш çамрăкне пĕрремĕш сăпатран хăйне каластарать, портретне ăста калăплать:

Ăшăран тухан тула,
Алсишсем тиртен.
Йĕлтĕрпе йĕрлеп çула,
Пăхăнмасп кĕрте...
Пĕчĕк çăмăл шур тăла,
Вĕлтĕркке ура,
Çавах сивĕ манпала
Тупăшма хăрать...
Лăпкă çилĕ йăпшăнать,
Чӳхенет тӳлек,
Ман хирте шăна-шăнах
Ярăнас килет.

Çапах та Н. Пиктемирăн çак кĕнекине ача-пăчан чăн тĕнчине уçса паракан, ачалăха сăнарлакан паха сăвăсемпе пĕрлех политика сăррипе пĕвеннĕ хайлавсем те кĕркелесе кайнă. Унта «ачасем кула-кула» юра йăваласа «туса лартнă кулак» та, «ирĕке тухнă Ленин ачисем» те, ял-йыша «тырă тиеме йыхравлакан Упрам комсомолец» та, «тĕттĕмлĕхе пĕтерме чĕнекен пионер» та пур.

Революциччен чылай маларах пуçланнă сăвăлла юмах юхăмне 30-мĕш çулсен иккĕмĕш çурринче Ухсай Яккăвĕпе И. Ивник тата В. Бараев хутшăнаççĕ. Вĕсем хăйсен хайлавĕсене кĕçĕн тата вăтам çулсенчи ачасене халаллаççĕ. Ухсайăн «Кăмака çинчи Иван» юмахĕн (1937) сюжечĕ ансат та кăсăк. Авал пĕр карчăкпа старик ача пулманнипе аптăраççĕ. Пĕррехинче кинемей чустаран этем кĕлетки туса вĕри кăмакана хурать. Виççĕмĕш кунне унтан чĕрĕ ача «питлĕхе тапса ярса урайне сиксе анать». Ку вăл – Иван. Ача ачаш та кахал ӳсет. Каччă çулне çитнĕ пулин те, пĕрмаях

кăмака ҫинче ларать. Хĕллехи пĕр кунхине амăшĕ хытă ӳкĕтленĕрен ҫырмана шыв ăсма каять. Витрине пулă лекет. Чăпак пулă Ивана хăйне каялла яма ыйтать, кайран мĕн ыйтсан та тивĕҫтерме пулать:

Ил-ха виҫĕ хуппăма
Кирлĕ пулсан пулăшма.
Хуппăма эс ĕнтетĕн,
Мана ятпа чĕнетĕн!..

Иван пулла шыва ярать. Унăн виҫĕ хуппине илсе киле таврăнать. Кирлĕ самантсенче унăн хăвачĕпе усă курать. Ҫапла вăл пӳрте хутма вутă пĕтсе ҫитнĕрен амăшĕ вăрмана кайма тархасла пуҫласан пĕрремĕш хут пулă пулăшăвĕпе усă курать. 30 лавпа улпут вăрманне касса килет, капмар юман чукмарпа хĕҫпăшалланать, унпа хăйне пĕтерме шутланă улпутăн тарҫисене аркатса тăкать, хăйĕн кăмаки ҫине ларсах тăшманĕ патне вĕҫсе ҫитет, патша керменне хăй патне куҫарать, хĕрне качча илсе телей курса пурăнать.

Ухсайăн ҫак хайлавĕнче А. С. Пушкинăн ылтăн пулă ҫинчен хывнă юмахĕпе чăваш халăх халапĕсенчи кĕвĕсем илтĕнеҫҫĕ. Чăвашпа вырăс поэчĕсен пĕрешкелли кунта ҫакă: сюжет пĕр евĕрлĕхĕ, пулă сăнарĕ пурри, вăл хăйне ырă тунине ырăпа хуравлани. Уйрăмлăхĕ: Пушкинăн пулăҫи – старик, Ухсайăн – каччă; Пушкинăн юмахĕнче ватă ҫынсен кунҫулĕ карчăкăн ĕмĕтсĕрлĕхне пула начарпа вĕҫленет, Ухсай геройĕ туйпа пĕрлешсе савăнса пурăнать.

Ухсай хайлавне чăваш халăх юмахĕсемпе танлаштарсан та, унта фольклортине ҫывăх енсене чылай курма пулать. Кунта халăх усă куракан асамлă 3, 30, 40, 70 йышши числосем тăтăш тĕл пулаҫҫĕ: «Ир те иртет, каҫ иртет, виҫҫĕмĕш ир час ҫитет», «Виҫĕ ҫултан сар Иван каччă пулса пит аван», «Виҫĕ ҫулхи

такана пусса ячĕ хурана», «Çамки çине виç çăпан тухса лартăр паянтан», «Виçĕ тавлăк çывăрсан, пĕр ирхине вăранчĕ, виçĕ хуппа çунтарчĕ», «Вăтăр çуна пухаççĕ», «Хĕрĕх йыттине ĕслет», «Çитмĕл çухрăм пĕр ялта». Поэт хайлавĕн пуçламăшĕпе вĕçĕ те халăханне çывăх:

Юмах юпа тăрринче,
Эпĕ урхамах çинче
Сиккипе çӳренĕ чух
Ĕлĕк-авал, ĕмĕр чух
Çав-çав çĕрте, пĕр ялта,
Пĕр старикпе карчăкĕ
Ялан вĕсем чухăнччĕ...

Çырма урлă кĕперĕ,
Çутă кĕмĕл кĕперĕ...
Унта эпĕ çӳрерĕм,
Пултăм Иван туйĕнче
Ун чух хамăр çĕрсенче
Хĕрлĕ юрсем çăватчĕç,
Хыр çулçисем ӳкетчĕç

Тĕп герой кашнинчех хăйĕн сăмахне фольклорти евĕрлĕ пĕрешкел çаврăмпа – «Чăпак пулă ыррипе» тесе пуçласа ярать. Автор текстĕнче халăх илемлĕхе палăртма усă куракан «сар» эпитет тăтăш тĕл пулать: «сарă ача», «сарă хĕр», «сар Иван», «сар урай», «сар пулă», «сарă сăра», «сар вĕлтĕрен».

Ухсайăн «Телей юмахĕ» (1937), «Хресчен автанĕ» (1940), «Кĕслеçĕпе упа» (1941) юмахĕсенче те халăхăн сăнарлăхпа илемлĕх йĕрĕсем уççăн курăнаççĕ. «Телей юмахĕнче», тĕслĕхрен, мăн кĕрӳ такмакĕн кĕвви илтĕнет. Унта пĕчĕк-пĕчĕк сăнарлă ӳкерчĕксем йышлă:

Çулсерен кайман инкек,
Йĕппе пусă чавнă пек.
Йывăр пулнă пурăнăç,
Ниçта та çук пăрăнăç.

***

Юмах юман тăрринче,
Эпир тĕрĕс çул çинче –
Çăмартан кĕтесси çук,

Чăн сăмахăн суйи çук...

***

Асап патши çĕрĕнче,
Выçлăх касси ялĕнче
Ĕлĕкрен-авалтанах
Мăянтан юрса çăмах
Çисе эпир ӳсрĕмĕр...

Ку юмах сăнарлăхĕ енĕпе пахалăхлă пулин те, шухăшĕ тĕлĕшĕпе идеологилĕх хистевĕнчен пăрăнайман. Сюжета чăвашсем нумай-нумай вăхăт хушши телей шыраса çӳренĕ пек туса йĕркеленĕ. Вĕсем сахал мар асап тӳссе ирттереççĕ. Çул çинче вĕсене ылтăн кĕнеке тытнă икĕ кăвак сухаллă старик тĕл пулать. Ватăсем кĕнекине уçса телей патне епле тухмаллине ăнлантараççĕ, çӳл ту çинчи çӳллĕ йывăç тăрринче ларакан ăмăрткайăкран телее мĕнле тупмаллине ыйтса пĕлме сĕнеççĕ. Ăмăрт кайăк чăвашсене пулăшать. Вĕсем хăйсен телейне тупаççĕ. Сăнарĕсем аллегориллĕ: ăмăрткайăкĕ Ленин иккен, старикĕсем – Маркспа Энгельс.

И. Ивник та хăйĕн «Телей çулĕ» юмахне (1938) çавнашкал схемăпа йĕркеленĕ. Унăн хайлавĕ те идеологи «чирĕпех чирленĕ». Çав вăхăтрах юмахри асамлă пулăмсемпе сăнарсем ачасене тыткăна илеççĕ, кăмăлне туртса тăраççĕ. Поэтики те вĕсен чунне çывăх. Чĕлхи те çепĕç те ансат.

1938 çулта чи пĕчĕккисем валли «Тетте-кĕнеке» библиотека тухса тăни çинчен маларах каланăччĕ ĕнтĕ. Вырăс ача-пăча классикĕсен чăвашла куçарнă хайлавĕсем хушшине «Юмахсем» кĕнеке те лекнĕ. Унта 10 тупмалли юмах. Кашни хайлавĕ умĕнче – пĕчĕк ӳкерчĕк, айĕнче – сăвă кĕввиллĕ сăнарлă йĕркесем. Ача ӳкерчĕке пăхса тата текста вуласа юмах тупсăмне çăмăллăнах тавçăрса илме пултарать: «Çырти чипер

инкене кам куракан пуç таять» (Çырла), «Куçне чарса ларать, французла калаçать, пăрçа пек сикет, этемле ишет» (Шапа), «Тăвата кăчăркка, икĕ йăлтăркка, пĕр шĕвĕркке» (Кушак), «Çавракa та – уйăх мар, сарă та – сар çу мар, хĕрӳллĕ те – шăши мар» (Çарăк), «Тĕттĕм пӳртре сарă хĕр ларать, çивĕтĕ урамра» (Кишĕр).

Чи пĕчĕккисем кăмăллакан юмахсен шутне «Кăски-Кушак пӳрчĕ» те кĕрет. Вырăс халăхĕн çак хайлавне Н. Ваçанкка чăвашла куçарса «Капкăн» журналта (1938, 4№) кăларать. Ăна çĕнетет, хăйĕнчен хушать, чăвашлатать. Сармантей сăнарне кĕртет. Сюжечĕ кĕçĕн çулхисемшĕн кăсăк та селĕм. Кушак аçи Ваçкă тус Кăски-Кушакпа пĕрле пурăнма тытăнать. Мăшăрĕ килессе кĕтсе Кăски сĕт пăтти пĕçерме пуçлать. «Ытлашши вут хутнипе» пӳртне вут хыпса илет. Пушара сӳнтерме малтан качака, унтан мулкачă, Сармантейĕн сар чăххи, кăвакал чупса çитеççĕ. Анчах пĕри те пушарне сӳнтермелли майне пĕлеймест. Кăскийĕ хăй те çухалса кайнă:

Чупать Кăски чӳлмекпе,
Сӳнтересшĕн сĕтпеле.
Сĕт чӳлмекне Кăски тус
Ӳкерет те çĕмĕрет.
Тан! Тан! танлатать.
Кăски йĕрет, ахлатать.
Çурчĕ çунсах пĕтрĕ тет.

Юмах пĕчĕк туссене пурнăçра асăрханулла, тавçăрулла пулма, пур ĕçе те йĕркине пĕлсе, шухăшласа тума вĕрентет.

Чи пĕчĕккисене халалланă поэзире Анатолий

Çулĕçĕн[1] «Шкула» сăвви (30-мĕш çулсен пĕрремĕш çурри) хăйне евĕр паллă вырăн йышăнать.

Хĕвел йăл-йăл кулчĕ,
Пăхрĕ кантăкран,
Ванюка вăл курчĕ,
Саврĕ кăмăлтан.
Тăхăнчĕ-тумланчĕ
Ванюк васкаса.
Шкулалла чуптарчĕ
Савăнса, кулса.

Ик çавраллă çак кĕске сăвăра капла пăхсан нимĕнех те çук темелле. Пĕр ӳкерчĕк çеç: Ванюк тăрса шкула кайни. Анчах автор ăна темĕнле питĕ ăшшăн, чунлăн, чăн-чăн ачалла, хитре ӳкерет. Тĕп сăнарсем – Ванюк тата хĕвел. Вĕсем куç умне чĕррĕн, уçăмлăн, тасан тухса тăраççĕ.

А. Çулĕç пери айĕнчен шăрçаланса тухнă «Конькипе» сăвва та ачалла çĕкленӳлĕхпе хаваслăх витерсе тăрать:

Вĕçсе пырап конькипе.
Хăлхасем хĕп-хĕрлĕ.
Чăр-чар чĕрсе пынипе
Пăр çиййĕ пит йĕрлĕ.
Йăлтăр-ялтăр çиçĕм пек
Йăр та яр пыратпăр.
Алла-аллăн тытăнса
Савăнса ярнатпăр.
Астумасăр хăш чухне
Такăнса ӳкетпĕр.
Кĕç тăратпăр та каллех

---

[1] «Пионер сассин» 1935 çулхи нарăсăн 27-мĕшĕнчи 9(232)-мĕш номерĕнче вăл Савкин Ваççи ячĕпе çапăнса тухнă. Чăннипе сăвва маларах А. Çулĕç çырни паллă.

Çиçĕм пек вĕçетпĕр.

Ку сăвăсем тӳрех шкул кĕнекине ахальтен кĕмен. Унта нумай çул хушши пĕр улшăнми тытăнса тăнă. Чăннипе вĕсем хăйсен пĕлтерĕшне паянхи кун та çухатман. Вĕсене, пирĕн шутпа, çĕнĕрен шкулта пăхмасăр калама вĕренмелли хайлавсен шутне кĕртмелле.

Пысăк калăплă хайлавсенчен пĕчĕккисемшĕн Н. Янкасăн «Михаç» (1939), Ухсай Яккăвĕн «Пуканесен бригади» (1935) поэмисем паха парне пулса тăраççĕ. Н. Янкасăн «Михаç» поэмин никĕсĕнче – авал пусмăр тĕнчин инкекне тӳссе пуçне çинĕ тăлăх ачан синкерлĕ шăпипе çыхăннă пулăмсем. Тĕп геройĕсем – çичĕ яла пусмăрта тытакан панпа унăн тарçи пĕчĕк ямшăк Михаç. Ачи тăрăшуллă та văр-вар, хăйĕн ĕçне лайăх пĕлет, ăна тĕплĕн пурнăçлать, анчах пурпĕрех хăйĕн хаяр хуçинчен ырă сăмах илтеймест. Пан пĕчĕк ямшăка сăлтавсăрах кăшкăрать, усал сăмахсемпе кӳрентерет. Вăл Михаçăн ашшĕне те, тахçан ун патĕнче лавçăрах ĕçленĕскере, «айăпсăрах хĕне-хĕне вĕлерне». Халĕ унăн «аппăшне те пусмăрласа» пурăнать. Михаç хăйĕн тата тăванĕсен пурнăçĕ тертлĕ пулса тухни панран килнине чĕрипе туять, анчах унран мĕнле хăтăлмаллине пĕлеймест. Чунĕ тăвăлса çитнĕскер, хĕллехи сивĕ кун уçăлма тесе лартса тухнă пана вакка сиктерет, хăй те пĕрле пуç хурать. Автор çак ӳкерчĕке психологи мелĕпе чуна пырса тивмелле çырса кăтартать:

Юнашар ик вил тăпри:
Мрамор склеп пĕри.
Тепри –
Пĕчĕк çеççĕ тĕмĕ çеç,
Ешĕл курăк ун çинче.

Склепра – пан.
Склеп айккинче
Пĕчĕк тĕмĕ айĕнче
Пĕчĕк «ямшăк» çывăрать:
Ешерет ялан чечек
Унăн вил тăпри çинче.

Тĕлĕкпе пĕлсе усă курни, контрастпа антитеза мелĕ, геройсен витĕмлĕ портречĕ, калаçăвĕ, çанталăк сăнĕ, тропсен тĕрлĕ тĕсĕсем, хăйне евĕрлĕ стиль, сĕтеклĕ чĕлхе – çаксем пурте хайлава ачасен кăмăлне каймалла тăваççĕ.

Ухсай Яккăвĕ «Пуканесен бригади» поэмăна ача ăйййи евĕрлĕ туса çырнă. Поэмăн тĕп геройĕ – Кирле ятлă кĕçĕн çулхи ача, сăвăçăн тăван шăллĕн прототипĕ. Автор унăн сăнарĕ урлă çав саманари ачасен пурнăçри хавхаланăвне, ĕмĕт-тĕллевне ĕненетерӳллĕн те туллин ӳкерсе парать. Хайлавăн тытăмĕ пиçĕ те тăпăл-тăпăл. Вăл 36 сăвă çавринчен тăрать. Вĕсене 5 пая уйăрса çыпăçуллă йĕркеленĕ. Кашни пайĕнчех Кирлен хăтланăвĕ-айкашăвĕпе çыхăннă пĕр-пĕр пулăма сăнарланă. Поэмăн чĕлхи çепĕç те çемçе. Ачасем ăна юратса вулаççĕ. Ухсая 1935 çулта иртернĕ литература конкурсĕнче çак поэмăшăн 3-мĕш преми параççĕ.

30-40-мĕш çулсен чиккинче кĕçĕн тата вăтам сыпăксенчи шкул ачисен кăмăлне тивĕçтерес тесе Уйăп Мишшипе («Пирĕн юрă» – 1940) И. Малкай («Сăвăсем» – 1940) хастарлă ĕçлеççĕ. Содержанине кура вĕсен сăввисене икĕ ушкăна уйăрма пулать. Пĕрремĕшĕнче – политика йыхравĕ, публицистика тӳрĕ чĕнӳлĕхĕ, лозунглăх, декламацилĕх. Иккĕмĕшĕнче – ачасен кулленхи чăн пурнăçĕ, интересĕ, хăтланăвĕ-айкашăвĕ.

Уйăп Мишши хăйĕн кĕнекин тĕп шухăшне палăртакан «Пирĕн юрă» сăввинче лирика геройĕ ячĕпе çапла евитлет:

Ленин, Сталин ячĕсем
Ĕмĕр пирĕн чĕрере.
Эпир Ленин ачисем,
Эпир Сталин ачисем,
Пире парти ӳстерет.[1]

«Пирĕн тав», «Манми Киров», «Комсомол уявĕ», «Ленин мавзолейĕнче» сăвăсене те çав шухăшах шăнăрласа тăрать.

И. Малкайăн та никĕсри сăввин ячĕ хăйĕн ĕçтешĕнни пекех – «Пирĕн юрă». Шухăшĕ те улшăнман – çамрăк ăру çул пуç ăшшине туйса пурăнни. Йĕркесерен пушă хаваслăх, риторика:

Эпир пурнăçăн чечекĕ,
Пире Сталин юрататъ.
Вăл çĕн пурнăçăн хĕвелĕ
Çĕр-шыва йăлт çутататъ.
Урампа эпир иртетпĕр,
Чаплă юрă юрласа.
Савăнатпăр, хĕпĕртетпĕр,
Тав тăватпăр Сталина.[1]

Çав вăхăтрах поэтсен ачалăха халалланă чылай сăввинче чăнлăх, тасалăх, ăшăлăх, илем тапса тăрать. Уйрăмах чĕрĕ çут çанталăка, тăван тавралăха, çулталăкăн тĕрлĕ вăхăтне ӳкернĕ хайлавĕсем хӳхĕм. Акă, И. Малкайăн «Улăх» сăввинче тăван тăрăхпа киленсе утакан ял ачин сăнарĕ куç умне туллин тухса тăрать:

Эп утатăп, утнăçемĕн
Чечексем пухатăп.
Аслă симĕс улăх çийĕн

[1] Уйăп Мишши. Пирĕн юрă. – Шупашкар, 1940. – 14 с.
[1] Малкай И. Сăвăсем. – Шупашкар, 1940. – 22 с.

Тавранa сăнатăп.
Сывлăм сыпнă чечек, курăк,
Йĕр юлать хыçра ман.
Карăш, карăш кăмăл турĕ
Сас парса хаваслăн.[2]

Уйăп Мишши «Кĕр çитрĕ» сăвăра çу кунĕсемпе сыв пуллашакан ачан тунсăхлă туйăмне чуна хускатмалла ӳкерсе парать:

Кĕр çитрĕ! Ешĕл вăрмана
Сарă сăн çапнă витĕрех.
Эпир каймастпăр выртмана,
Утсем тăраççĕ витере.
Эпир чупмастпăр улăхра
Тек ирĕк выляса, сиксе.
Тек çӳреместпĕр пулăра,
Пухмастпăр шурă хур тĕксем.[1]

Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи умĕнхи тапхăрта чи пĕчĕккисем валли çырнă пахалăхлă сăвăсем хушшинче – А. Кăлканăн «Автобусĕ» (1941). Поэт хăйĕн çак хайлавĕпе Уйăп Миншипе И. Ивник 30-мĕш çулсенче пуçланă «Автобус» темăна çĕнĕ сăн кĕртсе пуянлатать, ачасен чунĕ патне çул тупать:

Тӳрĕ, тикĕс çулпала
Пĕр автобус вĕçтерет.
Хăйне ирĕк çул пама
Вăл таçтанах систерет:
Ту-ту-ту! Ту-ту-ту!
Таптанатăн вĕт – ас ту.

---

[2] Çавăнтах. – 14 с.
[1] Уйăп Мишши. Пирĕн юрă. – Шупашкар, 1940. – 7 с.

Ай-хай лаши хăраса
Çул айккипе сиктерет.
Автобусĕ васкаса
Тата хытă вĕçтерет.
Ту-ту-ту! Ту-ту-ту!
Çулна лайăхрах ас ту!

Автобуспа лаша юнашар ăмăртса чупнине сăнлакан çак пĕчĕк те хитре ӳкерчĕк çĕр-шывра техника шайĕ вăй илсе пынине те, ачасен çак транспортпа ларса çӳрес кăмăлĕ пысăк пулнине те ĕненмелле кăтартать. Ултă йĕркеллĕ çаврасем, çичĕ сыпăкран тăракан виçĕ пусăмлă йĕркесем, хорей виçи, Т, Р, С, У сасăсен янăравĕ, «Ту-ту-ту! Ту-ту-ту!» евĕрлев сăмахĕсем автобус чуппине куç умне чĕррĕн те курăмлăн кăларса тăратаççĕ, сăвва ачасен çĕкленӳллĕ кăмăлĕпе килĕшӳллĕ тăваççĕ.

30-мĕш çулсенче чăваш сăвăçисем, паллах, пур ӳсĕмри ачасен ыйтăвне те тивĕçтерсе пĕтереймен-ха. Кун пирки хăй вăхăтĕнче ВКП(б) Чăваш тĕпкомĕн секретарĕ Я. Павлов тĕрĕсех кăтартса хăварнă: «Ачасем валли çырас ĕçри тепĕр çитменлĕх вăл – кĕнекесем кăларнă чухне ачасен çулне кирлĕ пек асăрхаса тăманни пулать»[1]. Кĕçĕн çулхисем валли хайлавсем чылаях тухнă пулсан ытти ӳсĕмрисен кăмăлне писательсем тивĕçтерсех пĕтереймен. Вăтам тата аслă çулсенчисем валли кăларнисенчен икĕ кĕнекене çеç асăнма пулать: М. Няманĕн «Хавaслăх» (1932) тата Л. Пушкай, И. Вашки, А. Катай, И. Малкай, Хĕв. Çитта çыравçăсен «Малтанхи парне» (1933) сăвă пуххисем. М. Нямань хăйĕн кĕнекинче мĕн калас тенине сăввисен ячĕсемех систереççĕ: «Ленин», «Октябрь маршĕ», «Октябрятсен юрри», «Хĕрлĕ кун», «Пионерăм,

[1] Павлов Я., ВКП(б) Чăваш обкомĕн секретарĕ. Ачасен илемлĕ литератури çинчен // Чăваш коммуни, 1940, декабрĕн 19-мĕшĕ.

сан ҫинчен», «Лагерьте», «Субботник юрри» ... Суя мăнаҫлăх, идилли, риторика, декларативлăх ку кĕнекен тĕп ҫитменлĕхĕсем шутланаҫҫĕ. Тĕслĕхрен, «Октябрь маршĕ» сăвва ҫакнашкал сăмахсемпе тултарса лартнă:

Пĕрре,
Иккĕ,
Виҫҫĕ,
Тăваттă!..
Пĕрре,
Иккĕ...
Эпир паттăр,
Парти пирĕн командир[1].

«Пионерăм, сан ҫинчен» сăвăра М. Нямань ҫапларах ҫавăрса хурать:

... Отрядăм – кил,
ĕҫ – анне,
Ҫемьемĕр пирĕн – йышлă ҫар[2].

Ҫыравҫă ачана хăйĕн ҫуртĕнчен, ашшĕпе амăшĕнчен, тăванĕсенчен уйăрать, тĕрĕссипе, унран хăйĕн ачалăхне туртса илет.

«Малтанхи парне» сăвăсен пуххине республикăри пионер организацийĕ 10 ҫул тултарнине халалласа кăларнă. Шухăшĕпе, стилĕпе ку кĕнеке те М. Няманĕннинчен уйрăлсах тăмасть. Пур сăввисем те тенĕ пекех идеологи сăррипе сăрланнă. Ăна Н. Шупуҫҫынни ҫырнă умстатьяран та тавҫăрса илетĕн: «Вĕсем (сăвăсен авторĕсем – А.М.) кăштах пĕр майлăрах, пĕрне-пĕри пăхса ҫырнă пек курăнаҫҫĕ пулин

---

[1] Нямань М. Хаваслăх. – Шупашкар, 1932. – 3 с.
[2] Ҫавăнтах. – 6 с.

те ... çав вăхăтрах социализм вăхăтĕнчи задачăсене марксистла ăнланнине те кăтартнă. Çапах та ку кĕнекене пит те тарăн сăнлăхлă, чĕререн тухнă сăвăсемпе эрешлесе çырнă теме пултараймастпăр, кунта декларативлă риторика та сахал мар... Класлă тăшмана таптама чĕнни – çак сборникри сăвăсен теми»[1]. Кунта та сăвăсен ячĕсемех унти темăсемпе шухăшсене уçса параççĕ: «Кĕрешӳ сасси», «Пионерла салам!», «Пирĕн юрă», «Пионери, вĕренме!» тата ыт. те. Сăвăсен лексики паттăрлăхпа хăюлăха, хĕрӳлĕхпе çивĕчлĕхе палăртмалли сăмахсенчен тăрать: «тăвăл саспа», «хĕлхемлĕ шухăш», «выля, хĕлхем!», «ракет пек, вичкĕн», «вутлăн çиçĕн», «ут, эс, çирĕп», «паттăр çамрăк çар», «çил-тăвăл», «пул çивĕч», «çиçĕм пек», «хĕрӳ ĕçре кастар» тата ыт. те. Йĕркесерен кăшкăру паллисем. Сăмахран, А. Катай çырнă «Пирĕн юрă» сăвăри лирика геройĕшĕн, М. Няманĕнни пекех, çемйе мар, коллектив хаклăрах. Вăл çав «çамрăк çарпа» пĕрле тухса класс тăшманне çапса аркатма шутлать:

Çапăçмашкăн хатĕр!
Вĕренмешкĕн атьăр!
Ут, эс, çирĕп, паттăр çамрăк çар!
Нимĕнле çил-тăвăл,
Пире çĕнеймест вăл!
Тăшмана тухар та салатар![2]

Çав вăхăтрах идеологи туртăмĕллĕ çак кĕнекере хушăран çамрăк ăрушăн кирлĕ, усăллă шухăшсем те палăраççĕ. Хăш-пĕр сăвăсенче поэтсем пархатарлă ырă ĕçе мухтаççĕ, ачасене вĕренме, кĕнекепе туслашма, ăслăлăха алла илме йыхăраççĕ. Сăмахран, Хĕв. Çитта «Пионери, вĕренме!» сăвăра «санăн тус – хĕрӳ ĕç,

[1] Малтанхи парне. Сăвăсен пуххи.– Шупашкар, 1932. – 6–7 с.
[2] Çавăнтах. – 81 с.

кĕнеке»[3], тет. Л. Пушкайăн «Пионерла салам» сăввинчи шухăшсем те пархатарлă:

Юлташăм пултăр –
Кĕнеке,
Тантăш – ĕçри
Эртел.
Сыв пултăр ăслăлăх
Йĕрки,
Сыв пултăр
Кĕнеке![1]

Чăваш писателĕсен союзĕ, республикăри ытти тивĕçлĕ органсем вăтам тата аслă çулсенчи ачасене вуламалли оригиналлă сăвăлла хайлавсем сахаллине çак тапхăрта та юмахсемпе тата куçарусемпе саплаштарма тăрăшаççĕ. Вăрçă умĕнхи çулсенче К. Ивановăн «Тимĕр тылă» (1935), «Юмахсем» (1940), Вл. Бараевăн «Алипаттăр» (1936), «Этиканпа Утикан» (1940), Ухсай Яккăвĕн «Сăсар çĕлĕк» (1940), С. Элкерĕн «Улăпсем» (1941) тата ыт. те кун çути кураççĕ.

Ку тапхăрта чăваш ачисемпе çамрăкĕсем вырăс ача-пăча поэзи классикин чи паха хайлавĕсене хăйсен тăван чĕлхипе вулама май илеççĕ. Çав шутра: М. Лермонтовăн «Юрă» (1935), С. Маршакăн «Ăставçăватавçă» (1932), К. Чуковскин «Хĕвеллĕх» (1936) юмахĕсем. Тăлмачисем – К. Иванов, Г. Краснов-Кĕçĕнни, В. Абакаев, И. Тукташ, И. Ивник тата ыт. те.

---

[3] Çавăнтах.
[1] Малтанхи парне. Сăвăсен пуххи.– Шупашкар, 1932. – 81 с.

# Проза

Маларах куртăмăр ĕнтĕ: 30-мĕш çулсенче кĕçĕн çулхисем валли çырнă сăвăлла хайлавсен шучĕ самаях сулăмлăччĕ. Вĕсен çак тапхăрти прози пирки вара çавна калаймастăн. Унта шкул çулне çитиччченхисене халалланă пĕр япала та çук темелле. Кĕçĕн тата вăтам классенче вĕренекенсем валли тухнă пеккисене жанрпа содержани паллисене кура виçĕ пĕчĕк ушкăна уйăрма пулать. Пĕрремĕшĕ – сыхлăх темипе çырнă приключени туртăмĕллĕ хайлавсем. Иккĕмĕшĕ – ачасене пурнăçа, таврари пулăмсене курма-пĕлме, ăнланса илме пулăшас тĕллевлĕ кĕске калавсем. Виççĕмĕшĕ – Куçма Чулкаçăн «Сунарçă халапĕсем» ярăмĕ тата чăваш писателĕсем халăхран çырса илсе пухса кăларнă тата хăйсем хывнă юмахсем.

К. Чулкаçăн пĕрремĕш ушкăна кĕрекен «Çамрăк патриотсем» кĕнеки (1939) икĕ калавран тăрать. «Артека кайнă май» ятлин тĕп геройĕ – Вова пионер. Ăна вĕренӳре, ачасем хушшинчи ĕçре маттур пулнăшăн çĕршыври çак чаплă лагерьте канма путевка панă иккен. Вăл унта кайнă чух çул çинче паттăрлăх кăтартать. Сисĕмлĕ пулса икĕ пуйăс çапăнассине сирсе ярать. Унăн тимлĕхне пула ют çĕр-шыв шпионĕсемпе диверсанчĕсем хăйсен тискер ĕçне пурнăçа кĕртеймеççĕ, çĕршер ача инкекрен çăлăнса юлать.

«Чечек татма кайсан» калавра та ачасемпе пулса иртнĕ ĕçех сăнласа панă. 12 çулхи Женьăпа Галя чикĕ çывăхĕнчи пĕр ялта пурăнаççĕ. Пĕррехинче вĕсем, ката хĕррине чечек татма кайсан, шикленсе пăхкаласа пыракан палламан çынна асăрхаççĕ. Женя ют çынна илĕртсе апатланма илсе кайнă хушăра Галя ун пирки пограничниксене вăрттăн кайса пĕлтерет. Чикĕ хуралçисем ачасем пулăшнипе пысăк шпиона тытса чараççĕ.

Автор хăйĕн калавĕсен сюжетне илĕртӳллĕ

йӗркелесе пӗчӗк вулакана тыткӑна илет. Вӑл повествовани меслечӗпе ӑнӑҫлӑ усӑ курать, ӗҫ-пуҫа хӑй каласа кӑтартнӑ пек туса ҫырать. Ачасен хӑтланӑвӗсене ӑшӑ туйӑмпа ӳкерет. Пейзаж, диалог, тропсен тӗрлӗ тӗсӗсем калавсене сӑнарлӑ тума пулӑшаҫҫӗ.

М. Пахчаҫӑн «Кӳлӗ хӗрринче» калавӗнче те (1940) ӗҫсем чикӗ ҫывӑхӗнче, Белоруссире пулса иртеҫҫӗ. Шкулта вӗренекен Павӑлпа Хӗветӗр пулӑ тытма кайсассӑн Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗ тӑракан вырӑна канав тӑрӑх юхса пыракан шыва наркӑмӑш янине тупса палӑртаҫҫӗ. Хамӑр салтаксене ҫак усал ӗҫе тунӑ икӗ шпиона йӗрлесе тытма пулӑшаҫҫӗ. Ачасем вӗсенчен пӗри хӑйсен ентешӗ пулнине палласа илеҫҫӗ. Калав риторика кӑшкӑруллӑ йыхравӗпе вӗҫленет: «...Павӑл чӑтса тӑраймарӗ: «Пограничник юлташсем! Пӗри пирӗн ял ҫынни пулин те ӑна ан хӗрхенӗр! Тӑшмансене вилӗм пултӑр!» – терӗ»![1]

Паллах, ҫӗр-шыври хӑйсен саманинчи ача-пӑча литературинчи ҫакнашкал плакатлӑ, декларативлӑ стильрен чӑваш писателӗсем те хӑтӑлайман-ха. Сюжета, сӑнарсене схемӑлла йӗркелессинчен те (тӑшманӑн тискер ӗҫне тупса палӑртни, ӑна йӗрлени, тытни) пӑрӑнайман. Ҫапах та ку калавсем ачасене хӑйсем патне туртса тӑнӑ. Ҫакӑн сӑлтавӗ – калавсем приключенипе детектив туртӑмӗллӗ пулнинче, прозаиксем ачасен хутшӑнӑвне тата шухӑшлавне тӗрӗс ӳкернинче, диалогсен ҫыпӑҫулӑхӗнче, ҫут ҫанталӑкпа тӑван тавралӑха (вӑрмана, кӳлле, ҫанталӑка, сывлӑм ӳкнине) асра юлмалла сӑнланинче. Калавсен ҫамрӑк вулакана ҫӗршыв хӳтӗлевҫисен пурнӑҫӗпе тата ӗҫӗ-хӗлӗпе паллаштарас пӗлтерӗшӗ те пысӑк.

И. Тукташӑн кӗске калавӗсем те (вӗсем малтанласа «Хатӗр пул» журналта пичетленнӗ – 1938, 5№) кӗҫӗн ҫулхисене таврара пулса иртекен ӗҫсемпе япаласене пӗлсе ӑша хывма, ӑнланса илме пулӑшаҫҫӗ. Ҫакнашкаллисем шутӗнче – «Чӗрӗп чӗппи хӑнаран таврӑнни», «Икӗ шапа

---

[1] Пахчаҫ М. Кӳлӗ хӗрринче. – Шупашкар, 1940. – 23 с.

инкеке лекни», «Чăпар чăхпа унăн чĕпписем», «Чарусăр кушак çури». Тĕслĕхрен, пĕрремĕш калавĕнче чĕрĕп чĕппи вăрманпа пынă чух çумăр çăва пуçлать. Вара вăл хутаçне тĕм çине хурать те юман çумне канма ларать. Çывăрсах каять. Вăрансан пăхать – хутаçĕ çук та. Йĕрсе киле таврăнать. Амăшĕпе çав вырăна килсе пăхаççĕ те: хутаçĕ пĕр пысăк кăмпа тăрринче вырта парать иккен. «Эх, айван, – тет амăшĕ ывăлне, – тĕмеске çине мар, кăмпа çине хунă вĕт эс хутаçна, вăл эс çывăрнă хушăра çумăрта ӳссе кайнă», – тет. Калав пĕчĕккисене пурнăçа ăнланма, сăнама, пĕлме вĕрентет.

30-мĕш çулсен иккĕмĕш çурринче К. Чулкаçăн «Сунарçă халлапĕсем» кĕçĕн тата вăтам сыпăксенчи ачасен юратнă кĕнеки пулса тăрать. Çамрăк ăру ăна алăран ямасăр вулать. Çак ярăмăн малтанхи халлапĕсем «Хатĕр пул» журналпа «Пионер сасси» хаçатра пичетленеççĕ. Пĕтĕмĕшпе хайлав 1937 çулта уйрăм кĕнекен тухать. Пĕрремĕш халапĕ 1936 çулта «Пионер сассинче» (21№) çапăнса тухать. Унта авторĕ ăсан тытни çинчен каласа кăтартать. Редакци ум сăмахра Чулкаç хăйĕн калавне «Тем те пĕр курнă Мюнгхаузен» кĕнеке авторĕн Распен мелĕпе усă курса çырни пирки пĕлтерет. Паллă ĕнтĕ, 18 ĕмĕрти нимĕç писателĕ хăйĕн кĕнекинче вĕçкĕн те ултавçă Мюнгхаузен барон тĕлĕнмелле çул çӳревре пулни, тем те пĕр курса пĕтни, çапăçусенче паттăрлăх кăтартни, сунарта тавçăрулăхпа палăрни çинчен каласа панă. Ку хайлава 20-мĕш çулсен пуçламăшĕнче К. Чуковский вырăсла та куçарса кăларнă. 1935 çулта вăл чăвашла та уйрăм кĕнекен тухнă. Тăлмачи – К. Пайраш. Чулкаç ăна вуламасăр юлман, унран хавхалану илнĕ. Мюнгхаузен çул çӳревçĕ çар çынни тата сунарçă шутланнă пулсан, Чулкаç хăйĕн геройне ухутара çеç çӳретет, унăн сунарне, ĕçне-хĕлне чăваш пурнăçĕпе, тăван тавралăхпа çыхăнтарать. Пĕрремĕш халапри ĕççем

Ямаш тăрăхĕнче пулса иртеççĕ. Лапшу Çтаппанĕ вăрмана йăсан тытма тухса каять. Çак кайăксем пилеше юратнине шута илсе, пĕр йывăçне тĕпренех касса ярать те, вăрманти «йăсансем пилеш тавра пĕлĕт пек сырăнса пыраççĕ». Киле тул çутăлас умĕн çеç çитет. Карчăкĕ йăсансене çуррине яхăн пӳрте йыхăрса кĕртет. Ыттине картишĕнче шăналăксемпе хупласа хӳтĕлĕхе хăвараççĕ. Кил-йыш хĕлĕпе йăсан какайĕ çиет, пасара кайса та сутать, кӳршĕсене те парать, 50-шне хĕл каçарма хăварать. Арăмĕ тăрăшнипе йăсансем чăхсемпе пĕрле кашта çине ларма хăнăхаççĕ. Сунарçă çынсене хăй патне хăнана чĕнет, йăсан какайне астивтерме сăмах парать.

Çапла «Лапшу Çтаппанĕн халапĕсем» ярăмри кашни калавах çыравçă пĕр-пĕр тискер кайăка е вĕçен кайăка тытнине халаллать. Кайăкĕсем: куян, тилĕ, кашкăр, упа, пăсара, сăсар, пăчăр, кăвакал, хуркайăк...

Совет саманинчи литература тĕпчевĕпе критикинче Чулкаç халапĕсене лайăх енчен хакласа çырнă статьясем сахалах мар тухнă. Вĕсен авторĕсем: В. Алентей, М. Юрьев, Г. Пласкин, А. Малов, М. Сениел, В. Тимаков т. ыт. те. Сăмахран, А. Малов «Ачасен юратнă писателĕ» статьяра çапла çырать: «Кĕнекери тĕп герой, Лапшу Çтаппанĕ, – йăслă, тавçăруллă, ырă кăмăллă сунарçă, – хăйĕн чеелĕхĕпе, нимĕнле йывăрлăхран та шикленменнипе, чăтăмлăхĕпе тата хăюлăхĕпе çамрăк вулакансене тыткăна илет. Çав произведенисем çамрăк ăрăва мĕн пĕчĕкрен тăван тавралăха, пурнăçа, çынсене, ĕçе юратма, ырăпа усала пĕр-пĕринчен уйăрма, шухăшлама, ĕмĕтленме вĕрентеççĕ».[1]

В. Тимаковăн «Манăçми кĕнекесем» статйинче те çав шухăшсенех вулатпăр: «Куçма Чулкаç ятне чăваш ачисенчен кам пĕлмест пулĕ. Лапшу Çтаппанĕ вĕсен

---

[1] Ялав, 1967, 7 №, 31 с.

асёнче Айболит тухтăр, Мюнгхаузен барон, Немо капитан тата ытти вуншар паллă геройсен сăнарĕсем пекех упранать. Хаваслă, тавçăруллă, темĕнле йывăрлăха та сирме пултаракан ырă кăмăллă çын вăл – писатель кĕнекинчи тĕп сăнар. Унăн чĕлхи пиçĕ, кашни сăмахĕ вырăнлă. Писатель тăван çут çанталăка, тавралăха чун-чĕререн юратнăран, унта пурăнакан тискер кайăксен пурнăçне, йăли-йĕркине лайăх пĕлнĕрен те тыткăнлать çыравçă кĕнеки».[1]

Çав вăхăтрах чăваш тĕпчевçисем хушшинче К. Чулкаçăн Лапшу Çтаппанĕ пирки урăхларах шухăшлакансем те пур. Тĕслĕхрен, И. Викторов «Ача-пăча литератури çинчен» статьяра çапла çырать: «Ачасене фантазиллĕ произведени пама кирлĕ, анчах та вăл фантази пурнăçран инçе тăни усăллă мар. Чулкаçăн пурнăça тĕрĕс ăнланма вĕрентекен калав-новеллăсем мар, пушă юптарусем çеç пулса тăраççĕ. Вĕсене ача-пăчасем валли юрăхлă произведени теме юрамасть».[2] Н. Дедушкин та «Сунарçă халапĕсем» пирки» статьяра Чулкаçа «çамрăк ачасене кирлĕ мара, суя ĕç çинчен шухăшлама вĕрентет» тесе критиклет. «Халапри ĕçсем пирĕн чăнлăхран килсе пымаççĕ, ăна пăхăнмаççĕ, çут çанталăка, пурнăça юратма вĕрентмеççĕ»[3] тет. Г. Юмарт та «Из родника народной мудрости» статьяра, Г. Орловăн «Тривим йысна калавĕсем» çутçанталăка хӳтĕлессипе çыхăннă паха повесть пулнине палăртнă май, çак енчен пăхсан К. Чулкаçăн тĕлĕнтермĕш сунарçи тăван тавралăха пĕтерес енĕпе çеç уйрăлса тăни çинчен калать, «Если Степан Лапша у Чулгася не знает предела

[1] Тăван Атăл, 1977, 7№, 78 с.
[2] Викторов И. Ача-пăча литератури çинчен (Чăваш издательстви ачасем валли кăларнă кĕнекесене пăхса тухни тăрăх) // Канаш, 1937, август, 26.
[3] Сунтал, 1938, 4 №, 31–33 с.

истреблению зверей и птиц, то дядюшка Тривим руководствуется правилом: «во всем надо знать меру»[4] тет.

Çапах та кунта чи пахи, пĕлтерĕшли – ачасен хаклавĕ. Лапшу Çтаппанĕн халапĕсем çапăнса тухнăçемĕн «Пионер сасси» редакцине çырусем килме тытăнаççĕ. Юлашкинчен редакци вĕсене пĕтĕмлетсе М. Федоровпа М. Еникăн статйисене пичетлесе кăларать. «Пĕр çырусăр пуçне пуринче те ачасем халапсене ырлаççĕ, – тесе çырать М. Федоров, – çав халапсене вуланă е итленĕ май ачасен пĕлĕвĕсем çирĕпленсе, тарăнланса, сарлакаланса пыраççĕ. Ун халапĕсен хакĕ – ачасен шухăш вĕçенлĕхне аталантарма пулăшни пулса тăрать. Ача-пăча оригиналлă литературине тăвас ĕçре ун халапĕсем малтанхи кирпĕч пулса тăраççĕ»[1]. М. Еник та «Сунарçă халапĕсем» пек произведенисем чăваш литературинче ку таранччен пулманччĕ»[2], тет.

Чăнах та, Чулкаç ачасен чунне, психологине, шухăш вылявне туйса ĕçлет. Вĕсем фантастикăна юратнине асра тытать. Çавна май сюжета кăсăклă та илĕртӳллĕ тума тăрăшать. Ăна тĕлĕнтерӳллĕ те мыскараллă пулăмсемпе пуянлатать. Сюжетра фантастикăпа чăнлăха килĕшӳллĕн сыпăнтарать. Чăнлăха пулăшас тĕллевпе автор текста топонимсене (Çĕрпӳ, Ĕсмĕл, Ямаш, Чурачăк, Тайга, Уссури) вырăнлă кĕрте-кĕрте лартать. Ачасемшĕн уйрăмах тĕп геройăн Лапшу Çтаппанĕн сăнарĕ çывăх. Ăна çыравçă халăх юмахĕнчи Улăп евĕрлĕ калăплать. Улăп пекех вăл çӳллĕ кĕлеткеллĕ, патвар, хăюллă, хастар, ăслă, тавçăруллă, таса, тӳрĕ, сапăр: урисене икшер пăт пуканĕсем çакса ярса виçшер çухрăм каять, пынă май

---

[4] Детская литература, 1986, № 10, С. 20.
[1] Пионер сасси, 1936, август, 26.
[2] Çавăнтах.

вĕçекен самолетсене аллине илсе утать, тискер кайăксене тытса кĕсйине чикет, чăхсене пăвакан кайăксене тытса ялйыша инкекрен çăлать, арăмне пулăшать тата ытти ырă ĕçсем тăвать. Лапшу характерĕпе – йăлтах Улăп пек. Вĕсем иккĕшĕ те – чăн-чăн чăваш. Ачасене халапсенчи тискер кайăксен сăнарĕсем те хăйсем патне туртаççĕ. Автор вĕсен портретне ăста ӳкерет, йăлисемпе тĕплĕн паллаштарать. Çапла вара халапсем çамрăк туссене çутçанталăкпа тăван тавралăх çинчен ытларах пĕлме, вĕсен тавракурăмĕпе тĕнчекурăмне сарма май параççĕ.

К. Чулкаçăн çырав стилĕ те хăйне евĕрлĕ, ыттисемпе арпашăнми, ăрасна. Прозаик хавхалантаруллă та çĕклентерӳллĕ, юптаруллă-вăлтуллă, астаруллă, тухатуллă çырать. Халапĕсен тытăмĕ фольклорăнне çывăх: пĕр евĕрлĕрех пуçламăшĕпе вĕçĕ, варринче тĕп пулăмсене çырса кăтартни. Писатель халăхăн асамлă юмахĕсенчи пулăмсемпе тата япаласемпе (пилеш турачĕ, тĕлĕнмелле курăк, ырă тĕлĕк, ман ăслă пуç) пĕлсе усă курать. Текстсенче ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем, сăнарлă çаврăмсем, танлаштарусем йышлă: «Сăмсуна шăлма вĕренесчĕ», «Йĕпе сăмса», «Куян хӳри кĕске», «Икĕ куяна хăвалакан пĕрне те тытайман», «Çăкăр-тăвар хире-хирĕç», «Çуна тупанĕсем колхозри кахалсем пек юрласа пыраççĕ», «Çăлкуçĕ майлах тапса тăратчĕ манăн вăй».

30-мĕш çулсенче çавăн пекех И. Тукташпа[1] Юркки Иванĕ[2] пухса хатĕрленĕ юмах кĕнекисем тухаççĕ. Ырăпа усала, хурапа шурра уйăрса илме, пурнăçра тавçăруллă пулма, пур япалана та шутласа-виçсе тума вĕрентекен тăван халăх юмахĕсене шкул çулне çитичченхисем те, пуçламăш классенче вĕренекенсем те кăмăлласа вулаççĕ. Унашкал хайлавсем шутĕнче – «Качака такипе Сурăх таки», «Тилĕпе Улатакка», «Ырхан кашкăр», «Пукане

---

[1] Ача-пăча юмахĕсем. – Шупашкар, 1938.
[2] Юркки Иванĕ. Ачасен юмаххисем. – Шупашкар, 1936.

юмахӗ», «Чӑхпа услам ҫу». Геройӗсенчен ытларахӑшӗ – чӗрчунсемпе вӗҫен кайӑксем. Вӗсем ҫынсем пекех хӑтланаҫҫӗ, айкашаҫҫӗ, мыскарасем тӑваҫҫӗ.

Тӑван халӑх хаплапӗсемсӗр пуҫне кӗҫӗн ҫулсенчи чӑваш ачи ҫак вунӑҫуллӑхра тӗнче тата совет ача-пӑча классикӗсен ӗҫӗсемпе те, юмахӗсемпе те паллашма май илет. Вӗсен авторӗсем хушшинче – Андерсен, Гриммсем, Е. Распэ, Р. Роллан, Д. Хармс, Д. Лондон, В. Короленко, И. Крылов, Л. Толстой, И. Тургенев, М. Лермонтов, Д. Мамин-Сибиряк, В. Бианки, К. Чуковский, Е. Чарушин, Е. Кассиль, А. Барто, Л. Квитко тата ыт. те. Тӑлмачисем – Илпек Микулайӗ, М. Сироткин, И. Ивник, Н. Пиктемир, В. Алакӗр, М. Еник, Юрки Иванӗ, Н. Урхи, чӑвашсен ытти ятлӑ-сумлӑ ҫыравҫисем.

Вӑтам ҫулсенчи ачасен прози 30-мӗш ҫулсенче ун умӗнхи вунӑҫуллӑх вӗҫӗнче ҫуралнӑ шухӑшсемпе сӑнарсен юххине малалла тӑсать. Пӗлӳлӗх тӗнчине ӑнтӑлакан, ҫитӗннисем хушшинче хутпӗлменлӗхе пӗтерес тесе тимлекен ачасене сӑнарланӑ ҫӗнӗ калавсем кун ҫути кураҫҫӗ. С. Шӑпчӑкӑн «Ваҫҫа» калавӗнче (1930) ҫав ятлӑ тӑлӑх-турат ача, пурнӑҫра нумай нуша курнӑскер, кӗтӳ кӗтнӗ май хӑй тӗллӗн вӗренсе ӑс-тӑнне ӳстерет, таса та тирпейлӗ ҫӳреме пуҫлать. Ваҫҫа хӑйӗн юлташӗсене те хутла вӗрентет, кӗнекепе туслашма пулӑшать. Тантӑшсем малалла вӗренме каяс ӗмӗтпе хавхаланса пурӑнаҫҫӗ.

Ҫак ыйтӑвах Хумма Ҫеменӗ те «Хамӑр вӑйпах» калавра (1930) хускатать. Унӑн жанрне «калав ӑшӗнчи калав» тесе палӑртма юрать. Хайлавра Петӗр ятлӑ ватӑ комсомолец шкул ачисене хӑй ҫамрӑкрах чух чухӑнсен ачисене Ваҫлипе Михалине тата Ивана хутла вӗренме пулӑшни, лешсем кайран пурнӑҫра хӑйсен телейне тупни ҫинчен каласа кӑтартать. Автор чӑн пурнӑҫра пулнипе паллаштарать. Текста топонимсене чылай кӗртет: Хусан,

Шупашкар, Канаш, Иваново-Вознесенски. Геройсен портретне ăста калăплать: «Васлипе Михали хыçалта, кăмака çумĕнче тăраççĕ. Пĕри вăрăмрах. Шĕвĕр пуçлăрахскер. Сăмси те шĕвĕртерех пăртак. Куçĕсем – чĕрĕ, хура куççем. Тепри – лутрарах ача. Начарккаскер. Сарăхса кайнă питлĕ-куçлă. Пĕри – çĕтĕк шăлаварпала. Тепри – килти кăвак йĕмпеле. Иванĕ тепĕр стена çумĕнче хăйне пĕччен уйрăлса тăрать. Кивĕ усал калпаккипех. Пиçиххисĕр, хĕрлĕ хулăм кĕпепе. Шатра питлĕ. Куçĕсем – хĕсĕнсе çыпăçсах ларнă: хутран-ситрен çеç ирĕксĕртен уçăлкала-уçăлкала илеççĕ. Чăнах, Иванĕ мĕскĕн çын пулмашкăн анчах çитĕнет, темелле... Çук, апла мар. Вăл акă, çав икĕ юлташĕпе пĕрле, пухура «протест» пачĕ. Вара виççĕшĕ те шăпах пулчĕç. Пуху мĕн калассине кĕтеççĕ»[1].

С. Ялавин та «Йăвăр мар» калавра (1931) ачасем граждан вăрçин тертлĕ çулĕсенче ялта хутпĕлменлĕхе пĕтерес ĕçе хутшăннине кăтартать. Унăн геройĕ Тимĕркке пионер хăйĕн амăшне вулама-çырма вĕрентет.

30-мĕш çулсен пуçламăшĕнче вăтам çулхисем валли граждан вăрçи тапхăрне çутатакан çĕнĕ хайлавсем çураласçĕ. С. Ялавин «Хисеплĕ Кĕçтенкки» кĕнеке (1931) кăларать. Ку калавра çыравçă шурă чехсем Хусана килнĕ тапхăра сăнласа парать. Тĕп вырăнта – 7–8 çулхи Кĕçтенкки. Унăн ашшĕпе куккăшĕ тăшмансемпе кĕрешме Хĕрлĕ гвардие çырăнаççĕ. Чăваш ялĕ чехсен аллине лекет. Ялтан никама та кăлармаççĕ. Кĕçтенккин амăшне Тарука «упăшку коммунист» тесе тытса каяççĕ, хĕнеççĕ, асаплантараççĕ. Кришша ятлă çын ялта вырнаçнă тăшманăн çар вăрттăнлăхĕсене тĕпчесе пĕлет. Кĕçтенкки, унăн çырăвне илсе, ашшĕ тăракан отряда çул тытать. Хĕрлисем, çак ача пулăшăвĕпе усă курса, шуррисене хăвăрт çапса

[1] Хумма Çеменĕ. Калавсем. – Шупашкар, 1940. – 36 с.

аркатаççĕ, яла ирĕке кăлараççĕ. Автор, паллах, пĕчĕк героя хăйĕн ӳсĕмне кура мар пысăк паттăрлăх кăтарттарать. Çапах та унăн калавĕ приключенилĕх пуртан, çăмăл та сĕтеклĕ чĕлхеллĕ пулнăран çамрăк вулакансене илĕртсе тăрать.

30-мĕш çулсенче М. Данилов-Чалтун çамрăк вулакансене партизансен юхăмĕпе тата граждан вăрçипе çыхăннă çĕнĕ хайлавсем парнелет. Унăн геройĕсем хушшинче ачасем те сахал мар. Акă «Якку» калавра вăл 10-ри чăваш ачине ӳкерсе парать. Якку аслашшĕпе тата асламăшĕпе кăна пурăнать. Ашшĕпе амăшне хăй 9 уйăхри пепке чухнех шуррисем вĕлернĕ. Çакăн çинчен вăл чылай çул иртнĕ хыççăн асламăшĕ куççуль юхтарса аса илнĕ тăрăх кăна пĕлет. Вунă çулта кăна пулсан та, ачан характерĕ çирĕп. Автор çапла çырать: «Якку чăтса лараймарĕ, йĕрес вырăнне, ура çине сиксе тăчĕ те, икĕ аллине чăмăртаса: «Эпĕ халь пулсан кăтартăттăм вĕсене, пĕлĕччĕç вĕсем мана йытăсем!.. Манăн тăван аннене манран уйăрнăшăн ... мана тăлăха хăварнăшăн ... тавăрăттăм. Ан йĕр, асанне, ан йĕр, куççуль тăкса кӳлĕ тăвас çук. Эпĕ сире – асаттепе иксĕре те – виличченех пăхса усрăп, вилсен, аннене тирпейлесе пытарнă пек, тирпейлесе пытарăп», – терĕ те пысăк çын пек тайăнса ларса апат çиме тытăнчĕ»[1]. Прозаик темиçе çаврăмпах ачан портретне витĕмлĕ калăплать: вăл «амăшĕ пек илемлĕ, куçĕсем кăмрăк пек çунаççĕ. Чĕлхи-çăварĕ çулçă пек çемçе те çивĕч»[2]. Писатель, партизансен юхăмне хутшăннă, граждан вăрçинче çапăçнă паттăр çапăçнă салтак, хăй куçĕпе курнине, хăй тӳссе иртернине çырса кăтартать. Çавăнпа та унăн хайлавĕсем чăнлăхлă та ĕнентерӳллĕ пулса тухаççĕ. Уйрăмах вăл кĕске калавсене ăнăçлă

---

[1] Данилов-Чалдун М. Суйласа илнĕ калавсем. – Шупашкар, 1945. – 14 с.
[2] Çавăнтах.

калăплать. Çакна хăй вăхăтĕнче С. Элкерпе М. Сироткин та тĕрĕс асăрханă[3]. В. Эзенкин ăсчах та çыравçă пултарулăхĕ пирки вырăнлă та ĕнентерӳллĕ пĕтĕмлетӳсем тăвать: «Творческое наследие М. Чалтуна, наряду с историко-литературным, имеет современное эстетическое значение. Лучшие произведения писателя подкупают читателей простотой, ясностью стиля, высокими идейными требованиями – особенно детской и юношеской аудитории»[1]. Чăваш писательне çакнашкал япаласем çырма çав вăхăтри вырăс литератури: А. Гайдарăн «РВС», П. Бляхинăн «Красные дьяволята», С. Григорьевăн «Красный бакен», А. Неверовăн «Мишка Додонов» хайлавĕсем пысăк витĕм кӳнĕ.

30-мĕш çулсен пуçламăшĕнче чăваш прозаикĕсем, партипе патшалăх заказне пурнăçласа, пионерсемпе комсомолецсен пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлне çутатас тĕлĕшпе малалла ĕçлеççĕ. Л. Агаков «Вĕтлĕхри отряд» (1931) тата «Пулăшрăмăр» (1931), Уйăп Мишши «Машинăсем кĕрленĕ çĕрте» (1932) калавсем çыраççĕ. Л. Агаков хайлавĕсенчи ачасем, пионер отрядне пĕрлешсе ку таранччenхи йăла-йĕркесене пăрахса çĕнĕлле пурăнма тĕллев лартаççĕ. «Вĕтлĕхри отрядра» сăнласа панă ялти пионерсем, хуларан килнĕ пултаруллă çамрăк Виктор ертсе пынипе, ял хушшинче агитаци ĕçне туса пыраççĕ, хаçат-журнал сараççĕ, спектакльсем кăтартаççĕ, радио лартаççĕ, çитĕннисене хутла вĕрентеççĕ, колхоз усси

---

[3] Элкер С. М. Н. Данилов-Чалдун пурнăçĕпе унăн творчестви // М. Н. Данилов-Чалдун. Вăрçă калавĕсем. – Шупашкар, 1948. – 11 с.; Сироткин М. Я. Чăваш литератури. 9-мĕш класра вĕренмелли кĕнеке. – Шупашкар, 1977. – 30 с.

[1] Эзенкин В. Идейно-художественные особенности творчества М. Н. Данилова-Чалдуна // Чувашский язык, литература, фольклор : сб. ст. ЧНИИ. Вып. I. – Чебоксары, 1972. – С. 351.

çинчен ăнлантараççĕ, пуян Ереми пек кулаксемпе тата Чакак карчăкĕ пек юмăç таврашĕсемпе кĕрешеççĕ. «Пулăшрăмăр» калаври Палляпа Йăван пионерсем те хастарлăхĕпе вĕсенчен кая мар: кулаксем хăйсен тыррине пытарнине тупса палăртаççĕ, рабочисем валли тырă пухса ăсатассине йĕркелеççĕ. Çапла вара, Л. Агаков хăйĕн калавĕсенче ача-пăча лайăх ӳссе çитĕнесси, пурнăçра хăйĕн вырăнне тупасси, çĕршывшăн кирлĕ те усăллă çынсем пуласси чи малтан çемьерен мар, пионер организацийĕнчен килнĕ пек кăтартма тăрăшать. Ку хайлавсенче çамрăк туссен кулленхи ахаль ĕçĕ-хĕлĕпе интересĕ мар, вĕсем общество ĕçне хутшăнни, коллектив интересне хăйсеннинчен маларах хуни тĕпре тăрать.

Уйăп Мишши хăйĕн калавĕнче пионерсене промышленноçра «йĕрке тума» явăçтарать. Вăл юхăннă завода ура çине тăратассине, ăна «прорывран кăларассине» йăлтах пионерсем татса панă пек туса кăтартать. Ачасем, ятарлă комисси, çамрăк кавалери бригади йĕркелесе, цехсем тăрăх çӳреççĕ, станоксемпе агрегатсене сăнаççĕ, кашни рабочи мĕнле ĕçленине тĕрĕслеççĕ. Прогульщиксене тăрă шыв çине кăлараççĕ. Вĕсенчен пĕри – Ерофей Степанов иккен. Вăл – Сергей Ерофеев пионерăн ашшĕ. Ачасем ашшĕ çавăн пек пулнăшăн, ăна юсайманшăн Сергей те айăплă тесе шутлаççĕ, вĕсене иккĕшне малашне социализмла килĕшӳ туса ĕçлеме хистеççĕ. Пионерсем хăйсем те, шкулта 4 сехет вĕреннĕ хыççăн, станок умне тăраççĕ, 2 сехет хушши рабочи тивĕçне пурнăçлаççĕ. Калав начарпа (прорыв пулнипе) пуçланать те лайăхпа (прорывран тухнипе, Ерофей юсанса малта пыракан рабочи-рационализатор пулса тăнипе, ăна преми панипе) вĕçленет. Тем те пур ку калавра: митинг та, пуху та, штрум декади те, ударлă бригада та, лозунгсем те, техника кружокĕ те, пионер отрячĕ те; чăн-чăн

пурнăçпа чĕрĕ геойсем çеç çук.

30-мĕш çулсенче вăтам сыпăкри вĕренекенсен вулавне М. Данилов-Чалтун хăйĕн паттăрлăхпа приключени туртăмĕллĕ çĕнĕ калав-повеçĕпе пуянлатать. Çавсем хушшинче – «Шахтăра» (1934), «Çăлтăрлă çĕлĕк» (1937), «Хĕрлĕ çăлтăр» (1939) калавсем. Унта автор граждан вăрçин синкерлĕ çил-тăвăлĕ витĕр утса тухнă çăмăл мар шăпаллă арçын ачасемпе паллаштарать. Вĕсем хăюллă, çивĕч, тавçăруллă, маттур. «Çăлтăрлă çĕлĕк» калавра вулакан куçĕ умĕнче – 12 çулхи Андрюш. Кунçулĕ унăн çăмăл мар. Ашшĕ çук – вăрçăра хыпарсăр çухалнă. Амăшĕ чирлĕ. Хĕрлĕ çăлтăрлă çĕлĕке асăрхасассăн шуррисем ачана тытса каяççĕ, хĕнеççĕ, асаплантараççĕ, çамки çине çăлтăр касса яраççĕ. Вăл хăйне хупса лартнă кĕлетрен тухса тарать, вăрмана çитсе ӳкет, упа вĕлересрен хăтăлса юлать. Партизансен отрядне лекет. Вĕсемпе пĕрле тăван ялне ирĕке кăларма хутшăнать. Çапла вара, калавăн сюжечĕ кăткăс та кăсăк йĕрпе аталанса пырать. Çакă, пĕтĕмĕшпе илсен, ачасен чунне туртса-илĕртсе тăрать те ĕнтĕ. Çав вăхăтрах автор калава кĕтмен-туман çĕртен сиксе тухакан ĕçсем те пайтах кĕртнĕ. Тата геройсене те, вĕсем хăш ушкăна кĕнине кура, ытла та хире-хирĕçле сăрăсемпе ӳкернĕ: хĕрлисем пурте – ырă, шуррисем вара – усал та хаяр. Сăмахран, шуррисен полковникĕ «хурчăка пек курпун сăмсаллă, вăрăм мăйăхлă, кукша пуçлă, шатра питлĕ».

30-мĕш çулсенче вăтам сыпăкри ачасен кăмăлне тивĕçтерес тĕлĕшпе Трубина Мархви прозаик пысăк хастарлăх кăтартать. Унăн пултарулăхĕн палăруллă енĕсенчен пĕри – вăл ачасене ĕç илемне кăтартса пани, вĕсене ĕçе юратма хăнăхтарни. «Пĕчĕк бригадирсем» («Пĕчĕк колхозниксем», 1931) калавра, акă, вăйлă тырпул ӳстерес тĕлĕшпе çитĕннисене пĕчĕккисем те нумай пулăшнине çырса парать. Вуниккĕри Кăркуçпа

унӑн тантӑшӗсем ушкӑнсем ҫине пайланса колхоз уйхирӗ валли кӗл, тислӗк пухаҫҫӗ. Ӗҫлесе илнӗ укҫапа ачасем хӑйсем валли тумтир туянаҫҫӗ. Автор Кӑркусӑн портретне тӗплӗ ӳкерет. Ун урлӑ пирӗн ума 30-мӗш ҫулсенчи хастарлӑ та пуҫаруллӑ, мал ӗмӗтлӗ те ҫирӗп тӗлевлӗ, сӑпайлӑ та сапӑр чӑваш ачи тухса тӑрать. Вӑл тӑла чӑлха тӑхӑннӑ, ҫӑпатапа, пир кӗпепе, кӑвак йӗмпе. Ҫийӗ-пуҫӗпе чухӑн пулсан та чун-чӗрипе, ӑсӗпуҫӗпе пуян. Калавра, паллах, пурте яп-яка та типтикӗсех мар. Вырӑнӗпе унта плакатри евӗр йӗркесем те тӗл пулаҫҫӗ. Анчах вӗсем хайлавӑн пӗтӗмӗшле ҫутӑ сӑнарне тӗксӗмлетме пултараймаҫҫӗ.

«Арҫури» калав (1935) 15 ҫулхи Кавӗрле ҫӗрле ҫын вырӑнне колхоз тыррине хураллама кайсан паттӑрлӑх кӑтартнипе паллаштарать. Кӳршӗри Тяпук хресчен, колхоз тыррине вӑрлама тӗв тунӑ усал ҫынсемпе кавар туса, ҫӗрле арҫури пек хӑтланса Кавӗрлене хӑратса тартма шутлать. Анчах та унӑн ӗҫӗ тухмасть. Кавӗрле ар ҫури тумне тӑхӑннӑ Тяпука хирӗҫ хӑюллӑн тухать, ӑна чукмарпа ҫапса анратать. Чан ҫапса халӑха пӗлтерет. Вӑрӑсене тытма пулӑшать. Колхоз тыррине сыхласа хӑварать.

«Праски йӑнӑшӗ» калавра та (1935) колхоз темиех. Ҫамрӑк Праски йышлӑ ача-пӑчаллӑ пиччӗшӗпе колхозра ӗҫлесе пурӑнать. Пиччӗшӗ – ялти ҫӗнӗ пурнӑҫ хастарӗ. Уйрӑм хуҫалӑхпа пурӑнакан мӑн аккӑшӗ тапӑннипе Праски пӗрлешӳллӗ эртелтен тухать. Пиччӗшӗ унта каялла кӗме хистеме тытӑнсан ялтан тухса каять, лесник патӗнче ӗҫлесе пурӑнать. Нумай вӑхӑт иртнӗ хыҫҫӑн лавпа тӑван киле килет. Ял лайӑх май улшӑннине курса тӗлӗнет. Пиччӗшӗ ҫӗнӗ ҫурт, хуралтӑсем туса лартнӑ. Ҫынсем тулӑх пурӑнаҫҫӗ. Вӑл халӗ ялтах юлас кӑмӑллӑ. Прозаик, паллах, кунта ӗҫпуҫа кӑштах ӳстеререх ҫырни сисӗнет. Чӑн пурнӑҫра 4 ҫул хушшинче ял ҫавнашкал ҫӗнелсе улшӑннине ӗненме

йывӑр. Ӗҫ темле юмахри евӗрлӗрех пулса иртнӗн туйӑнать.

«Хӑнаран» калав (1930) никӗсӗнче – эрехе пула килсе тухнӑ инкек. «Ӗҫкӗ – усал япала, унран ыррине ан кӗт, унпа ан туслаш, ӗҫес-тӑвас пулсан та виҫине-йӗркине пӗл», – тесшӗн ҫыравҫӑ. Ӗҫке пула мӑшӑрсем Кӗтерукпа Ванюк инкек тӳсеҫҫӗ. Виҫҫӗри ывӑлӗ Ванькка ҫул ҫинче ҫуна ҫинчен ӳксе юлса шӑнса вилет. Синкерлӗ лару-тӑру чуна ҫӳҫентерет. Автор пӗчӗк Санькка сӑнарне, хӑнари хӗтланӑвӗсене, шухӑшлавне, чӗлхи-калаҫӑвне чӗрене витермелле чӑнлӑхлӑ та витӗмлӗ ӳкерсе кӑтартнӑ. Калавра авторӑн психологи ӑсталӑхӗ питӗ пысӑк пулни курӑнать.

«Аякри тӑвансем валли» калав (1936) персонажӗ – иккӗмӗш класра вӗренекен Михаҫ. Вӑл, Испани республики инкеке лекнине пӗлсен, унӑн ачисене пулӑшма шут тытать. Климентий пиччӗшӗ парнеленӗ 15 тенкӗ укҫанна аякри туссем патне ярса пама йышӑнать. Унтан тӗслӗх илсе ытти ачасем те ҫаплах тӑваҫҫӗ.

Ҫавнашкал кашни калаврах Трубина Мархви ачасемпе ҫыхӑннӑ пӗр-пӗр пулӑма илсе сӑнарласа уҫса пама тӑрӑшать. Вӑл ҫырнисене ачасем юратса вулаҫҫӗ. Мӗншӗн-ши? Ҫакӑн сӑлтавӗсем, пирӗн шутпа, – писатель пӗчӗккисен чуне туйма пӗлнинче, сӑнарлама вӗсене тыткӑнлакан кӑсӑк шухӑшсене суйласа илнинче, илемпе вӗрентӗве (вырӑсларах каласан, «педагогикӑлӑха») хайлавра ӑнӑҫлӑ пӗтӗҫтернинче, ӗҫ пархатарне, илемне, сипетне витӗмлӗ кӑтартса панинче, чӑваш ачисем умне хӑйсен нихӑш халӑхӑннипе те пӑтрашӑнми ӑрасна тӗнчине уҫӑмлӑн кӑларса тӑратнинче.

Трубина Мархви – чӑннипех те илемлӗ сӑмах ӑсти. Пейзаж, лирика, портрет, монолог, диалог, танлаштару, эпитет, метафора – литературӑн ҫакӑ тата ытти

хатĕрĕсемпе тата мелĕсемпе хайлава витĕмлĕ тăвас ĕçре туллин усă курнă вăл. Унăн калавĕсемпе юмахĕсем ансат та илĕртӳллĕ сюжетлă, пуплевĕсем кĕске те çаврăнăçуллă. Çитĕннисене те, пĕчĕккисене те вулама меллĕ.

Унăн нумай геройĕсем çыравçă пуранна саманари çынсене хавхалану кӳнĕ. Халĕ те вĕсем ку чухнехи çамрăксене ыррине хапăллама, усаллинчен тасалма вĕрентеççĕ. Малашнехи ăрусем те вĕсенче хăйсене усăллине, кирлине тупĕç.

30-мĕш çулсенчи прозăра çитĕннĕ ачасене вулама юрăхлă хайлавсем, ун умĕнхи вунă çуллăхри пекех, нумай мар. Жанр тĕлĕшĕнчен вĕсем калавсемпе очерксем тата пĕвеçсем. Пысăкрах калăплисенчен М. Данилов-Чалтунăн приключениллĕ сĕм парса, калу (сказ) формине тĕпе хурса çырнă «Малинкин» повеçне (1937) палăртма пулать. Малти планра – ӳссе çитĕннĕ ача. Вăл – герой-калуçă. Унăн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ, шухăш-туйăмĕ урлă вулакан революци хыççăнхи пăтравлă лару-тăрупа, кăткăс та хирĕçӳллĕ пулăмсемпе паллашать.

Л. Агаковăн «Пĕрре çуркунне» повеçĕ те (1939), приключенипе детектив туртăмĕллĕ пулнăран, аслисемпе пĕрлех ачасене те илĕртсе тăрать. Автор халăх кун-çулĕнчи çăмăл мар тапхăра – граждан вăрçи вĕçленсе пынă, выçлăх сарăлса кайнă, таврара тĕрлĕ вăрă-хурах алхаснă пăлхавлă вăхăта – повествовани мелĕпе усă курса ăнăçлăн сăнарлать. «Пĕрре çуркунне» çамрăк вулакансене хăйĕн хивре сюжечĕпе, хĕрӳ кĕрешӳ саманчĕсемпе, романтика туртăмĕпе, геройсен хăйне евĕрлĕ характерĕсемпе, сĕтеклĕ чĕлхипе тыткăнлать.

Чăваш издательстви 1934 çулта «Шкул ачисен библиотеки» ярăмпа вăтам тата аслă классенче вĕренекенсем валли Трубина Мархвин «Мучар» повеçне пичетлесе кăларать. Унта ялсенчи колхозсем йĕркеленнĕ чухнехи кăткăс пулăмсене çырса кăтартнă. Хăй

вăхăтĕнчи ертсе пыракан тытăмсен кăмăлне тивĕçтерес тесе çырнăран, повесть, паллах, ытла та схемăллă, шаблонлă пулса тухнă. Тĕп вырăнта – ял пуянĕ Мучар. Вăл, хăй йышши ытти кулаксем пекех, чее те ултавçă, нĕрсĕр, ял халăхне вăрттăн çыртать, усал ĕçсем тăвать. Çав вăхăтрах повесть, пĕтĕмĕшле тытăмĕпе шухăшĕ идеологи сĕткенĕпе шăварăннă пулин те, хăйĕн поэтики самаях пуян пулнипе уйрăлса тăрать. Унта тăван халăх пурнăçĕнчен илнĕ, ачасен кăмăлне хускатакан чăнлăхлă ӳкерчĕксем, сăнарлă вырăнсем, пĕчĕккисен сăнарĕсем (Хветюк, Ваçук) пур.

Аслă çулсенчи ачасене халаллайă калавĕсенче прозаиксем уйрăм çынсен шăпине уçса парассине мала кăларса тăратаççĕ. Çав геройсен ачалăхĕпе яшлăхĕ кивĕ саманара тертлĕ иртнĕ, чăн-чăн телейне вĕсем совет влаçĕн çулĕсенче тупнă. Ку енĕпе М. Данилов-Чалдтунăн «Директор» (1930), С. Элкерĕн «Унтри» (1938), Е. Еллиевăн «Ломоносов» калавĕсем палăруллă. «Директор» хайлаври Куçма Карпеев революциччен 12 çултан пуçласа ашшĕпе пĕрле Донбасра шахтăра ĕçлет, нумай нуша курать. Октябрь пăлхавăрĕ çеç унăн кун-çулне лайăх май çаврăть. Тахçан çакăнта кирккапа та кĕреçепе ĕçленĕскер, халĕ хăй çак предприятие ертсе пырать. Прозаик совет самани пуçламăшĕнче пулса тăнă меллĕ лару-тăру, социаллă условисем ахаль çынна ӳссе аталанма, пурнăçра хăйĕн вырăнне тупма пулăшнине тĕрĕс сăнласа парать.

С. Элкерĕн «Унтри» калав-очеркĕ те шухăшĕ енĕпе çӳлерех асăннă хайлава çывăх. Чăваш писателĕ, хăйĕн калавне Атăлпа Урал тăрăхĕнчи хăйĕн чылай ĕçтешĕ пекех (тĕслĕхрен, мари прозаикĕн Н. Игнатьевăн «Хурçă çил» калавне илме пулать), М. Горькин еткерлĕхĕ витĕм кӳнипе çырнă. Унтри чăвашпа Петр мариец, вырăс классикĕн геройĕсем пекех, «халăх хушшине» тухаççĕ, Хусана лекеççĕ: пĕри вĕсенчен булочнăйра рабочисене

пулăшаканĕ, тепри Атăл çинче грузчик пулса ĕçлеççĕ, иккĕшĕ те мăшкăл та терт курса пĕтеççĕ. Анчах та Горький витĕмĕн йĕрĕсем кунпа кăна та вĕçленмеççĕ. Чи малтан вĕсем геройсен пурнăçне Горький традицийĕсен меслечĕпе сăнланинче палăраççĕ. Чăвашла марин çак çыравçисем хăйсен геройĕсен йĕркеленӳ-çирĕпленӳ çулне ачалăхран тытăнса ăс-хакăл тĕлĕшĕнчен пиçĕхсе çитнĕ таран илсе ӳкерсе параççĕ. Наци прозаикĕсем хăйсен тăван халăхĕсен пурнăçĕнчен илнĕ пулăмсене чăнлăхлăн та тĕрĕссĕн сăнласа парас тесе тимлеççĕ.

Е. Еллиевăн калавĕн геройĕ Митрофан Ломоносов ятлă. Чăваш хресченĕн ывăлне аслă ăсчах хушаматне ялти Александр Иванович учитель панă. Митрофан – тăнлă-пуçлă, тавçăруллă, физикăпа математика енне туртăнакан, юрра-кĕвве кăмăллакан ача пулнă. Ытти çĕр ĕçченĕсен ачи-пăчи пекех, вăл çăпатапа, килте тĕртнĕ пиртен çĕленĕ кĕпе-йĕмпе çӳренĕ. Ялти шкулта революци вăхăтĕнче ку тăрăха ирĕксĕр куçса килме тивнĕ Викентий Карлович профессорăн Марта ятлă хĕрĕпе пĕрле вĕреннĕ, ăна кăмăлланă.

Совет саманинче Митрофан университетра пĕлӳлĕхне ӳстерет, ăслăлăх çулĕпе çӳлелле çĕкленет, кĕнеке çырать, профессора тухма хатĕрленет. Çавăн чух вăл каллех хăйсен ялĕнче пурăннă профессорпа тата унăн хĕрĕпе тĕл пулать. Халĕ Митрофанпа Мартăн туслăхĕ çĕнĕрен чĕрĕлсе çĕкленет.

Е. Еллиев хăйĕн калавне логика аталанăвĕнче, ĕç-пуçа тĕплĕ сăлтавласа, ĕнентерӳллĕ çырать. Шухăша ытарлă çавăрса, аллегорисемпе, символсемпе пĕлсе усă курса хайлать. Сăмахран, хайлав пуçламăшĕнче Марта пианинопа Вагнер пьесине выляймасăр асапланнине куратпăр. Вĕçĕнче – ăнăçу: хĕр пьесăна йĕркеллех вылять. Сюжетăн çак юхăмĕнче Митрофан хăйĕн пурнăç çулĕ çинчи чăрмавсемпе йывăрлăхсене çĕнтерсе пынине, унăн хĕрпе тытакан хутшăнăвĕсем малалла

аталаннине туйса илетĕн. Автор текста хăйĕн юратнă пайрăмне – тĕлĕке – вырăнлă кĕртсе лартнă. Тĕлĕкре каччă хĕрпе улăхра чечексем хушшинче çӳрет. Марта ăна çапла калать пек: «Эсĕ Ломоносов пек поэт та, ученăй та пулсан эпĕ санăн юратнă тусу пулăп. Эпир чечексем ăшĕнче пурăнăпăр. Пирĕн тавра пĕчĕк ачасем пулĕç. Эпир вĕсене чечек ячĕсем парăпăр!». Калав вĕçĕнче çак тĕлĕк тĕрĕсе тухасси курăнать.

## Драматурги

Литературăн çак ĕречĕ 30-мĕш çулсенчи ача-пăча сăмахлăхĕнче хайлавсен йышĕ енĕпе поэзипе прозăран юларах пырать-ха. Хальхинче те, ун умĕнхи вунăçуллăхри пекех, тăван литературăри традицилĕх те хăйĕн витĕмне кӳмен мар. Çав вăхăтрах вăл, маларахри драматургипе танлаштарсан, çак кăтарту кăштах пысăкрах пулнипе уйрăлса тăрать. Енчен те 1918–1928 çулсенче пурĕ те икĕ пьеса çеç уйрăм кĕнекен тухнă пулсан, халĕ вĕсен шучĕ çичче çитнĕ. Вĕсенчен 3-шĕ – куçарусем: В. Зелиховпа Ц. Зацăн «Фриц Бауэр», С. Преображенскин «Петюк ултавĕ», П. Яльцевăн «Ленин патне» хайлавĕсем. Чăваш драматургĕсем çырнисем хушшинче – В. Алакĕрĕн «Паттăр Çапук» (1931), П. Торонейпа П. Ефремовăн «Çитĕнекен хăват, Çамрăк ăста» (1933), М. Няманьпе Хĕв. Çиттан «Ешĕл вăй, Çĕкер кĕперĕ» (1934) тата Л. Агаковăн «Ултав» кĕнекисем. Кунсăр пуçне «Сунталпа» «Хатĕр пул» журналсенче тата «Пионер сасси» хаçатра вырăсларан куçарнă тата чăваш писателĕсем çырнă темиçе пьеса кун çути курнă. Драма хайлавĕсем ытларах пичетленме пуçланин, паллах, хăйĕн сăлтавĕсем пур. Пĕрремĕшĕ – Шупашкарта 1933 çулта çамрăксен профессиллĕ патшалăх театрĕ уçăлни,

шкулсемпе техникумсенче драма кружокĕсем нумай йĕркеленни, вĕсем валли тăван чĕлхепе çырнă пьесăсем кирлĕ пулни. Иккĕмĕшĕ – ертсе пыракан тытăмри çынсем, критиксем ача-пăча драматургине вăйлатма чĕнсе статьясем тăтăш пичетлесе кăларни, пухусемпе канашлусенче çак ыйтăва хускатсах тăни (ку енĕпе уйрăмах А. Отачкин, Л. Агаков, С. Ялавин, И. Вашки, М. Еник, М. Митрофанов хастарлă пулнă). Виççĕмĕшĕ – куçару ĕçĕ вăйланни; çамрăк чăваш çыравçисем, тăлмач тивĕçне пурнăçланă май, тĕнче тата совет ача-пăча драматурги классикĕсен паха опытне вĕренсе, ăша хывса пыни, çырав ăсталăхне пуянлатни.

Вăрçă умĕнхи вун-вун икĕ çул хушшинче пичетленнĕ пьесăсем пурте тенĕ пекех вăтам сыпăкри ачасене халалланăскерсем. Тĕпрен илсен, унта эпир 10–12 çулсенчи çамрăк геройсене куратпăр. Драмăсене содержанипе шухăш тĕлĕшĕнчен виçĕ ушкăна уйăрма май пур: пионерсем тата вĕсен колхоз юхăмĕнчи ĕçĕ-хĕлĕ, пионерсем тата политехнизаци, ачасен хăйсен тĕнчинчи кулленхи ĕçĕ-хĕлĕ тата кĕрешĕвĕ.

Пĕрремĕш ушкăнри пьесăсенче ĕç мĕн çинчен пынине вĕсем хăçан çуралнинчен те (пурне те колхоз юхăмĕ сарăлса пынă тапхăрта, 30-мĕш çулсен пĕрремĕш çурринче çырнă), геройĕсем камсем пулнинчен те (вĕсем – колхоз ĕçĕн хастарĕсем, чухăн та вăтам хресченсем, кулаксем, комсомолецсемпе пионерсем) чухласа илетĕн. Акă Хĕв. Çиттан 5 пайлă «Çĕкер кĕперĕ» пьесинче (1934) 19 çын вылять. Вĕсем шутĕнче çаксене куратпăр: Марук – ялти тăлăх чухăн хĕрарăм; Ванюш – Марукăн пĕртен-пĕр ачи, ялти шкулта вĕренет, чĕрĕ ача; Абрам Сидорчă – ялти кулак, колхоза сĕртĕнсе кĕнĕскер; Ульяна – Абрамăн мăнтăр та лŭппер арăмĕ; Хуралкин – ялти комсомолец, çирĕп сывлăхлă çын; Сахар – колхоз правленийĕн членĕ, хастарлă колхозник; Ваçça – Сахар ачи, Ванюшăн

юлташӗ, пионер; Шурă – отряд вожатăйӗ ... Çамрăк колхоз, ял хастарӗсем, тӳрӗ чунлă хресченсем, комсомолецсемпе пионерсем пӗрле чăмăртанса ӗçленипе, йывăрлăхсемпе чăрмавсене çӗнтерсе пырать, пӗчӗккӗн малалла аталанать. Çакă Абрам кулакпа унăн хӳрешкисене хытă тарăхтарать. Вӗсем колхоза пур майпа та ура хума тăрăшаççӗ. Абрам ял хресченӗсем лавсемпе пынă чух кӗпере сирпӗтсе яма шухăшлать, анчах та пионерсем тимлӗ те сисӗмлӗ пулнăран вăл хăйӗн хура ӗмӗтне пурнăçа кӗртеймест. Ăна тытса чараççӗ. Пьеса ял хастарӗсемпе ачасен çӗнтерӗвӗпе вӗçленет:

**Хуралкин**: Абрам – колхоза сурăх тирне тăхăнса кӗнӗ кашкăр, унăн сăтăрла ӗçӗсем нумай. Паян Ваççапа Ванюш мана систермен пулсан пирӗн лавсем шывпа юхса каятчӗç.

**Сасăсем**: Вă, маттур ачасем! Ăçтан сиснӗ вӗсем!

**Ванюш**: Эпир çавăнпа та пионерсем! Эпӗ паянтан колхозник пуласшăн.

**Сасăсем**: Эсир пирӗнпе, пирӗнпе пӗрле!

**Хуралкин**: Юлташсем, лере кӗпер хӗрринче пире хамăр лавсем кӗтеççӗ. Атьăр, Абрама илсе кайса хупар та халех кӗпер юсама каяр!

Мул тӗнчи майлисемпе ялти пурнăçа çӗнӗлле йӗркелессишӗн ăнтăлакансем (колхозниксем, çамрăксемпе ачасем) хушшинчи хирӗçӳлӗхпе çыхăннă çакнашкал стандартлă, схемăллă ӳкерчӗксене В. Алакӗрӗн «Паттăр Çапук» (1931), П. Торонейăн «Çитӗнекен хăват» (1933), М. Няманӗн «Ешӗл вăй» (1933) тата Л. Агаковăн «Ултав» (1934) пьесисенче те тӗл пулатăн. Çав тапхăрти ача-пăча драматургийӗн кăлтăкӗсене И. Вашки тӗрӗс кăтартса хăварать: «Пур пек пьесăсем ачасен кăмăлне чунтан-халтан çӗклекен япаласем мар. Вӗсем «заказлă»

тунă пирки ытлах та типрĕрех. Пирĕн ача-пăча пьесисем схематизмлă. Час-часах образ çуккипе аптраççĕ. Рольсем пурте пĕр манерлĕ. Лозунгла сăмахсем актерсене çеç мар, кураканĕсене те ытларах йăлăхтараççĕ»[1]. Чăваш çыравçисен драматургири ĕçĕ-хĕлĕнче çĕршыври çав тапхăрти агитаци театрĕн декларативлăхĕпе ансатлăхĕн паллисем хытă сисĕнеççĕ. Конфликтсене йĕркеленĕ чух вĕсем Мускавсенчен тĕслĕх илме тăрăшаççĕ. Сăмахран, В. Алакĕр «Паттăр Çапук» пьесăра ывăлне ашшĕне хирĕç кĕрешĕве тухнă пек кăтартать. Ачи – Çапук, пионер. Ашшĕ – Ситăр, чухăн хресчен, кулаксем еннелле сулăннăскер. Çапук, ашшĕ ял пуянĕсем хĕтĕртнипе Якур комсомолеца вĕлерме кайма хатĕрленнине пĕлсен, унран маларах çитсе каччăна асăрхаттарать, ăна вилесрен çăлать. Авторĕ кунта Çапук çинчен çырнă чух Павлик Морозов сăнарне асра тытни курăнать.

Политехнизаци ыйтăвне хускатакан иккĕмĕш ушкăна К. Наманканăн «Политехнизмшăн» (1931), П. Ефремовăн «Çамрăк ăста» (1933) пьесисем кĕреççĕ. Драматургсем, патшалăх тытăмĕсен йыхравне хăлхана чиксе, çамрăк ăрăвăн çав саманари техникăна тата технологие ăнкарса илес пултарулăхне ӳстерессине, ку енĕпе ăна тивĕçлĕ пĕлӳ тата хăнăху парассине мала кăларса тăратаççĕ. Анчах вĕсем те, маларахри ушкăна кĕнĕ авторсем пекех, çĕр-шыври çав саманари агиттеатрăн сиенлĕ витĕмĕнчен хăтăлаймаççĕ-ха. Драматургсем сăнарлă сăнлавпа ӳкерчĕклĕхе ахаль чĕнӳ-йыхравпа, пушă шăв-шавпа, кăшкăрашупа, декларативлăхпа, суя хирĕç-тăрупа ылмаштараççĕ.

К. Наманкан хăйĕн пĕр паллă массăллă сценкине сăвăласа çырнă. Пьесăра пионерсене çĕнĕлле пурăнма, малалла кайма вată интеллигентсем чăрмантарнă пек кăтартнă. Выляканĕсем: Якур – отряд вожатăйĕ, Марье –

[1] Вашки И. Çитĕнекен ăрăва – юрăхлă пьесăсем // Коммунар, 1934, октябрь, 15.

звено вожатăйĕ, Иван Петрович – колхоз председателĕ, Михал Гаврилч – ватă учитель, пионерсем. Ачасем колхозпа пĕрле килĕштерсе ĕçлеме договор йышăнасшăн. Колхоз председателĕ хирĕç мар. Вĕрентекенĕ те çак шухăша ырлать:

Маттур ман ачасем,
Мĕнле хастарлă,
Чăн-чăн большевиксем
Пулаççĕ сирĕнтен.

Сасартăк отряд вожатăйĕ Якур Михал Гаврилч учитель сăмахне тӳркессĕн касса хурать: «Анчах ку таранччен ăçта эс ларнă?» Ватă педагог çамрăк çынна сăпайлăн кăна лăплантарма пăхать. Анчах лешĕ тата ытларах хаярланса кăшкăрашма пуçлать:

Суятăн эс,
Михал Гаврилыч...
Учитлĕ пирĕн
Пулмалла малта,
Политехницизма
Кам çакăн пек пăхать –
Вăл – тăшман!
Пионерсем!
Малти рете –
Хăть хулара
Ялта!..

Иван Петрович Якура хӳтĕлет, ваттисем техника юхăмне малалла яма чăрмантарнине, пуласлăх çамрăксем енче пулнине çирĕплетет:

Якур сăмахĕсем

Чăнах та тĕрĕс,
Михал Гаврилыч:
Ватă – кивĕрех.
Ак çаксемех *(понерсене кăтартса)*
Учитлĕсем, тен, пулĕç...

Пионерсем çавăн хыççăн пурте сиксе тăрса, салют парса, харăссăн кăшкăрса яраççĕ:

«Тен, пулĕç» мар,
Пулатпăр!
Хатĕрех!

Спектакль колхоз правленийĕпе пионер отрячĕ договор çине алă пуснипе вĕçленет. Ачасем сцена тăрăх маршласа утаççĕ, «Киввине тĕпренех аркататпăр!.. Тĕппипех пĕтерер тăшмана!..» тесе такмаклаççĕ.

П. Ефремов та хăйĕн пĕр пайлă пьесине К. Наманкан меслечĕсемпе-ăслайĕсемпе усă курсах калăплать. Кунта та Ванюк пионера, «Çăл шывĕнчен нефтă пек япалана уйăрма ятарлă хатĕр» тăваканскере, ашшĕпе амăшĕ хирĕç пулаççĕ. Вĕсем ăна «пуçтакковщинăпа заниматься тума» чарасшăн. Пьеса каллех хаваслă кĕрлевпе, пурте пĕрле тăрса «Политехницизм юррине» юрланипе вĕçленет:

Ленин ученикĕ – хурçă Сталин!
Хăйĕн çивчĕ сăмаххипе:
Большевиксен техникăна
Час çавăрса илмелле, тет.
Атьăр, тытăнар хастарлăн,
Техника ĕçне вĕренер!

Хăй вăхăтĕнче Л. Агаков çак хайлавăн вăйсăр енĕсене вырăнлă палăртса иртнĕ, вăл «содержани

тĕлĕшĕнчен те, тулаш енчен те тӳсме çук начар»[1] тенĕ.

Вăрçă умĕнхи ача-пăча драматургийĕн виççĕмĕш ушкăнне А. Кăлканăн «Иванпа Палля» (1937) тата «Алим» (1940) пьесисене кĕртмелле. Писатель вĕсенче уйрăм ачасен кулленхи пурнăçне, ĕçне-хĕлне, кĕрешĕвне, хăтланăвне-айкашăвне сăнарлама тăрăшать.

«Иванпа Палля» – пĕр пайлă инсценировка. Геройĕсем – икĕ арçын ача. Пĕр енчен пăхсан, вĕсем пĕрешкелех темелле: иккĕшĕ те туссем, пĕр çулхисем, пионерсем, пĕр класра вĕренекенсем. Тепĕр енчен, ăраснарах та: Иванĕ – çирĕп тĕллевлĕ, вĕренӳре тăрăшуллă, шкулти ĕçсене хастар хутшăнать, хăйне типтерлĕ тытать; Палли вара пачах та тепĕр майлă: вĕренӳре юлхав, килĕнче те тирпейсĕр, чăрсăрлăхĕ те, тӳрккеслĕхĕ те пур. Ивана хăйĕн тантăшĕ япăх вĕренни канăç памасть, вăл ăна пулăшасшăн. Вĕсем, малтанласа пĕр-пĕрне ăнланайманскерсем, пьеса вĕçĕнче пĕр чĕлхе тупаççĕ. Иван Палляна вĕренӳ енне çавăрать:

**Палля** *(сумккине илсе Иван çумне ларать)*: Задача тăватпăр.

**Иван**: Вара ярăнма каятпăр.

Çак ырă улшăну патне Палля хăйĕн чĕрипе ăнланса, пĕчĕккĕн юсанса, логикăлла аталанура çитсен питĕ аван пулмаллаччĕ. Шел пулин те, пьесăра шалтах унашкал пулса тухайман. Палля хăйĕн чунĕ хушнипе мар, Иванăн электрохунарĕпе усă курма май илессишĕн çеç тăрăшса вĕренме сăмах панă иккен (тусĕпе кун пирки вăл хут çырсах килĕшӳ тунă).

«Алим» драмăра автор вулакана, чăваш тата пушкăрт ачисен пурнăçĕпе, туслăхĕпе паллаштарнă май, вĕсем граждан вăрçинче пысăккисемпе пĕрле çапăçусене

[1] Агаков Л. Ик сăмах ача-пăча кĕнекисем пирки // Канаш, 1934, апрель, 28.

хутшăннине витĕмлĕ ӳкерет. Пьесăра Алимăн, Сартуанăн тата Сарпин паттăрла ĕçĕсем куç умне чĕррĕн тухса тăраççĕ.

## Критика

30-мĕш çулсен пуçламăшĕнче наци ача-пăча литература критики хăйĕн малтанхи утăмĕсене тăвать. 1930-1933 çулсенче хаçатсемпе журналсенче Л. Агаков, Е. Романова, А. Орлов, В. Сергеев, М. Хурнай, И. Яковлев тата ыттисем çырнă статьясем тухаççĕ. Критиксем ача-пăча литератури умне «пĕчĕккисене коммунизмла воспитани парассинчен тухса тăракан çивĕч ыйтусене» кăларса тăратаççĕ. Тĕслĕхрен, Л. Агаков хăйĕн «Ача-пăча писателĕсен çак задачăсене пурнăçа кĕртмеллех» статйинче çапла çырать: «Ĕç паян кунччен те плансăр, ăнсăртран пулса пырать, ача-пăчана коммунистла воспитани парас ĕçĕн задачисене йĕркеллĕн пурнăçа кĕртсе пырас тĕлĕшпе пирĕн писательсем ĕçлени палăрмасть-ха. Ку таранччен кăларнă кĕнекесен хушшинче 5 çуллăх плана пурнăçа кĕртсе пынине, социализмла строительствăн кунĕсене, çĕнĕ хапрăк-савăтсене, совхозсемпе колхозсене кăтартакан кĕнекесем çукпа пĕрех, шкул пурнăçĕпе ĕçĕсене, тĕне хирĕç кĕрешес, интернационалла воспитани ыйтăвĕсене, революци историн сыпăкĕсене, юлашкинчен – техника ыйтăвĕсене çутатакан кĕнекесем çук»[1].

И. Яковлев «Большевикла ача-пăчалитературишĕн» статьяра «ача-пăча кĕнеки пролетариллĕ литературăн татăлми пайĕ пулмаллине»[2] палăртать. Унăн шучĕпе,

[1] Сунтал, 1931, 10 №, хуплашкин шал енĕ.
[2] Халăха вĕрентес ĕç, 1931, 4 №, 15–18 с.

«ача-пӑча литератури реконструкци тапхӑрӗнче ачасенчен ҫӗнӗ ҫынсем тума пулӑшмалла, ачасен хастарлӑхне организацилесе, опчӑлӑх ӗҫне тума вӗрентмелле, материализмла ӑнлава йӗркелемелле, ачасем хушшинчи уйрӑмлӑх туртӑмӗсене путлантарса ушкӑнпа ӗҫлеме вӗрентмелле (15 с.). Паянхи куншӑн тӗп задача сылтӑм хӑрушлӑхпа кӗрешесси, ача-пӑча литературине большевиклатассишӗн кӗрешесси пулать» (18 с.). Автор хӑйӗн шухӑшӗсене тӗслӗхпе ҫирӗплетес тӗллевпе 1925 ҫулта чӑвашла тухнӑ «Ҫамрӑк паттӑрсем» кӗнекене унта класс кӗрешӗвӗ ҫуккишӗн тиркет.

М. Нямань критик та «Пӗр манса юлнӑ ӗҫ ҫинчен» статьяра чӑваш ҫыравҫисене «сталинла тапхӑрта ҫитӗнекен ҫамрӑк ӑрӑва валли большевизм ӑнлавӗпе ҫырнӑ ача-пӑча литератури тумалли»[3] ҫинчен астутарать.

Ҫав вӑхӑтрах 20-30-мӗш ҫулсенче кун ҫути курнӑ критикӑпа библиографи тата публицистика статйисенче идеологи туртӑмӗллӗ хиствевсемпе пӗрлех ача-пӑча литератури аталанӑвӗшӗн кирлӗ те усӑллӑ шухӑшсем те ҫук мар. Арс. Орлов, сӑмахран, «Ача-пӑча литературине – тивӗҫлӗ вырӑна» статьяра Чӑваш совет писателӗсен оргкомитечӗ ҫумӗнче ача-пӑча литературин секцине йӗркелеме сӗнет[1]. А. Шенкели «Ача-пӑча литературине вӑйлатмалла» материалта «ҫамрӑк поэт-писательсене Чӑваш совет писателӗсен оргкомитечӗ вӗрентсе пымаллине, чӑвашсен паларнӑ поэт-писателӗсен ача-пӑча валли тӗрлӗрен произведенисем ача-пӑча чӗлхипе ҫырмаллине»[2] палӑртать. Л. Агаков канашӗсем те пӗлтерӗшлӗ те вырӑнлӑ: «Тӗрлӗ ыйтусем тӑрӑх популярнӑй (пурне те ӑнланмалла) чӗлхепе ҫырнӑ кӗнекесем тӑвас ыйту тухса тӑрать. Ҫав вӑхӑтрах

[3] Канаш, 1937, июнь, 26.
[1] Сунтал, 1933, 2 №, малти хуплашкан шал енӗ.
[2] Пионер сасси, 1933, август, 26.

пирĕн кĕнеке дидактикăлла, пуçĕпех тенденциллĕ пулмалла мар. Вăл обрăзсен чĕлхипе калаçмалла, художествăлла пулмалла... Реализмлă произведенисемпе пĕрлех наукăллă-фантазиллĕ, приключениллĕ, героико-революциллĕ произведенисем парас ĕçе пуçлама та вăхăт ĕнтĕ».[3] А. С. Отачкин «Пысăк пахалăхлă ача-пăча литературишĕн» статьяра çырнă тăрăх, вырăс литературин тĕслĕхĕпе чăваш çитĕннисен прозинчи В. И. Краснов-Аслин «Вутра» евĕрлĕ паха хайлавсене ачасем валли йĕркелесе кăларни вырăнлă пулмалла[4]. М. Нямань шухăшĕпе, республикăри яваплă органсен чи лайăх ача-пăча хайлавĕсен конкурсне хатĕрленсе ирттересси çине тимлĕ пăхмалла[5]. И. Викторов «Ача-пăча литератури çинчен» тишкерӳре, Чăваш издательстви çамрăк ăру валли кăларнă кĕнекесене пăхса тухнă май, вырăсларан чăвашла куçарас тĕлĕшпе яваплăха туйса ĕçлемелли, оригиналăн стильне сыхласа хăвармалли, куçарусем пахалăхлă пулмалли, ача-пăча кĕнекисене лайăх хут çинче тĕрлĕ сăрăсемпе, илĕртӳллĕ ӳкерчĕксемпе пичетлесе кăлармалли пирки кăтартса хăварать[1].

Çапла вара, ачасен литературине халалланă материалсенче текст лаптăкĕн ытларах пайне декларативлă, дидактикăллă çаврăмсем, вĕрентсе каланисем, хушусемпе сĕнӳсем йышăнаççĕ, конкретлă тишкерӳ, хаклавпа анализ вара сахалтарах. Авторсенчен чылайăшĕ, Л. Агаков, И. Яковлев, И. Вашки, И. Викторов, Я. Павлов тата ыттисем, 20-30-мĕш çулсенче чăвашла тухнă ача-пăча кĕнекисем хушшинче

---

[3] Агаков Л. Ик сăмах ача-пăча кĕнекисем пирки // Канаш, 1939, апрель, 28.
[4] Сунтал, 1936, 2 №, 26 с.
[5] Нямань М. Пĕр манса юлнă ĕç çинчен // Канаш, 1937, июнь, 26.
[1] Канаш, 1937, август, 26.

куçарусем ытларах пулнине палăртаççĕ, тăлмачсемпе ĕçлесине вăйлатнипе пĕрлех хамăрăн литературăна аталантараси çинчен те манмалла мар теççĕ. Л. Агаков куçару валли «Детгиз» кăларакан чи кирлĕ кĕнекесене суйласа илме сĕнет. «Çапах та пĕр куçарусем çинче кăна чарăнса тăма юрамасть, – тет вăл. – Чăваш ачисене оригиналлă кĕнекесем парса пымалла. Пирĕн хамăрăн чăваш условийĕсенчен тухса тăракан темăсем нумай»[2]. Критиксенчен ытларахăшĕ чăваш çыравçисен ăнăçлăрах хайлавĕсен шутне Л. Агаковăн «Вĕтлĕхри отряд», Н. Янкасăн «Виктăрпа шăнкăрч», С. Ялавинăн «Хисеплĕ Кĕçтенкки», «Кавруç», Трубина Мархвин «Пĕчĕк бригадирсем», «Марине», Мĕтри Ваçлейĕн «Пирĕн сас», Ç. Шăпчăкăн «Верук» кĕнекисене кĕртеççĕ.

30-мĕш çулсенчи пичет кăларăмĕсенче сайра хутра ачасем валли кăларнă кĕнекесене хакланисем курăнкаласа илеççĕ. Мишкай «Малтанхи парне» кĕнекене тишкернĕ рецензире çапла калать: «Сăвăсем пионерсемпе шкул ачисен пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен çырнă япаласем. Ачасене ăнланмалла, пит янравлă тухаççĕ. Уйрăмах Пушкай, Çитта, Вашки сăввисем кăмăла каяççĕ. Кĕнеке хуппине тĕрлĕ илемлĕ сăрпа тата сăвă авторĕсен сăнĕсене кăларнă пулсан тата лайăхрах пулатчĕ»[1]. М. Еник «Ача-пăча пьесисем çинчен пĕр-ик сăмах» тишкерӳре М. Няманĕн «Ешĕл вăй» тата Хĕв. Çиттан «Çĕкер кĕперĕ» пьесисем пиçсех çитейменнине палăртать. Рецензент сăнанă тăрăх, хайлавсен сюжечĕсем те, сăнарĕсем те уçăмлă мар. «Çĕкер кĕперĕнчи» ачасен Ванюшпа Ваççан паттăрлăхĕ ĕнентерӳллĕ пулса тухайман. «Вăл темĕнле приключенилле авантюризма аса илтерет» иккен.

---

[2] Агаков Л. Ик сăмах ача-пăча кĕнекисем пирки // Канаш, 1934, апрель, 28.

[1] Пионер сасси, 1934, июнь, 16.

Пьесăсенчи çамрăк геройсем «теменле ватă çынсен, сухаллă çынсен чĕлхипе калаçаççĕ»[2]. Арс. Орлов «Ача-пăча литературине – тивĕçлĕ вырăна» статьяра Трубина Мархвине «Пĕчĕк бригадирсем» калавра «ачасен большевикла кĕрешĕвне кăтартайманшăн», С. Ялавина «Хисеплĕ Кĕçтенкки» калавра 7–8 çулхи ачана хăй çулне кура мар паттăрлăх кăтартнăшăн критиклет[3]. Н. Яковлев «Трубина Мархвин литература ĕçĕнчи пултарулăхĕ» материалта «Хĕрлĕ галстук» тата «Ĕç тухмарĕ» калавсене ырă енчен асăнать. Пĕрремĕш хайлавĕ пирки: «Калава кĕске пуплевсемпе, литература чĕлхипе ăнланмалла çырнă. V класра вĕренекен ачасемшĕн фабули те, чĕлхи те, идейи те килĕшӳллĕ. Ачасен ӳсĕмне пăхсан та ку калав çыпăçуллă»[4], – тет.

[2] Пионер сасси, 1934, сентябрь, 28.
[3] Сунтал, 1933, 2 №, 29 с.
[4] Сунтал, 1935, 12 №, 30–31 с.

## *Ыйтусемпе ĕçсем*

1. Вăтăрмĕш çулсенче культурăна унăн воспитани пĕлтерĕшне кура хакласси йăлана кĕрсе пынине, литературăра норматизмпа схематизм, конфликтсăрлăхпа ĕç-пуçа ытлашши хитрелетсе кăтартас туртăм сарăлнине мĕнле ăнланатăр?

2. Çак тапхăрти ача-пăча литературинчи чăнлăхлă-тĕрĕслĕхлĕ, аналитикăллă пулăмсене палăртăр.

3. С. Элкер, И. Ивник, Ухсай Яккăвĕ, В. Бараев тата ытти поэтсем чăваш сăвăлла юмах жанрне аталантарма кӳнĕ витĕме сăнăр.

4. Л. Агаковпа М. Данилов-Чалтун тата ытти çыравçăсем чăваш ача-пăча прозине приключенипе фантазилĕх туртăмĕпе еплерех пуянлатнă?

5. Ача-пăча писателĕсен пысăк калăплă хайлавсем (поэма, повесть) çырас ăсталăхĕ ӳссе пынине кăтартса парăр.

6. Вăтăрмĕш çулсенчи литературăра хăш çыравçăсен хайлавĕсенче ачасен сăнарĕсем ăнăçлăрах пулса тухнă?

## *Усă курмалли литература*

Детская литература : учебник / Е. Е. Зубарева, В. К. Сигов, В. А. Скрипкина и др. ; под ред. Е. Е. Зубаревой. – М., 2004.

Лупанова, И. П. Полвека. Советская детская литература / И. П. Лупанова. 1917–1967. – М., 1969.

Сироткин, М. Я. Очерк истории чувашской советской литературы / М. Я. Сироткин. – Чебоксары, 1956.

Чăваш совет литератури. – Шупашкар, 1972.

Канюков, В. Я. Основные этапы развития

чувашской литературы / В. Я. Канюков. – Чебоксары, 1956.

Кузьмин, А. Художественная проза С. В. Эльгера / А. Кузьмин. – Чебоксары, 1961.

Эзенкин, В. Идейно-художественные особенности творчества М. Н. Данилова-Чалдуна / В. Эзенкин // Чувашский язык, литература и фольклор : сб. ст. ЧНИИ. Вып. I. – Чебоксары, 1972. – С. 327–351.

Воронцов, Г. Иван Ивник. Пурнăçĕпе пултарулăхĕ / Г. Воронцов. – Шупашкар, 1982.

Народность и художественность произведений Я. Г. Ухсая : сб. ст. ЧНИИ. – Чебоксары, 1984.

Дедушкин, Н. С. Писатель-салтак / Н. С. Дедушкин. – Шупашкар, 1974.

## III СЫПĂК

## НИКОЛАЙ ПОЛОРУССОВ-ШЕЛЕПИ

Николай Иванович Полоруссов-Шелепи – икĕ саман çыравçи, чăваш писателĕсенчен халăх поэчĕ ятне (1936) тата «Хисеп палли» орден (1939) илме пĕрремĕш тивĕçнĕ çын, наци литературине аталантарма пысăк вăй хунă сăмах ăсти, фольклорист, очеркист, тăлмач.

Шелепи пултарулăх ĕçне XX ĕмĕр пуçламăшĕнче тытăннă. Вырăссен пĕрремĕш революцийĕ вăхăтĕнче халăх юрри кĕввипе сатирăллă «Раççей» (1906) тата революциллĕ-романтикăллă «Тав» («Çĕлен») сăвăсем çырнă. Иккĕмĕш сăвви 1906 çулта «Хыпар» хаçатра пичетленнĕ.

1914–1915 çулсем – поэт пултарулăхĕнчи тухăçлă тапхăр. Çак хутлăхра вăл «Çарăмсанпа Хăнтăрçа» этнографи поэми, «Константин хулине туни çинчен чăваш ваттисем калани», «Пӳлерти Валĕм хуçа çинчен» халапсем тата «Ваçанкка» сатирăллă сăвă çырать. Автор халăх хушшинче çӳрекен историллĕ халапсене хăйне май якатса майлаштарать. Çапла вара революцичченхи поэзире сăвăлла халап жанрне аталантарма пулăшать.

Совет тапхăрĕнче çырнă сăвви-юрринче тата поэмисенче вăл республика пурнăçĕнче пулса иртнĕ паллă ĕçсене сăнарласа кăтартать. Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи вăхăтĕнче çулăмлă сăвăсем çырса фашизма хăвăртрах аркатса тăкма чĕнет.

Халăх поэчĕн çитĕннисене халалланă хайлавĕсене ачасем те юратса вулаççĕ. Кунсăр пуçне унăн çамрăк ăру валли ятарласа çырнă сăвви-юррипе пьесисем тата куçарвĕсем те йышлă.

20-мĕш çулсен пуçламăшĕнчех поэт тăлмач ĕçне хастарлăн хутшăнать. 1924 çулта Чăваш издательстви унăн вырăсларан куçарнă 3 пайлă пьеса-халапне

«Çeçпĕл» ятпа уйрăм кĕнекен кăларать[1]. Унта Бельги сăвăçин тата драматургĕн Морис Метерлинкăн пурнăçа, ăс-хакăла, кăмăл-сипете, илемпе чун тасалăхне мухтакан, чăнлăхпа телее шыранине халаллană «Синяя птица» тата «Обручение» пьеса-юмахĕсенчи туртăмсем сисĕнеççĕ. Сăмахран, Шелепин Хĕвел Шевлипе Çeçпĕл сăнарĕсем Метерлинкăн Çутă Чунĕпе Мажуа хĕрачана аса илтереççĕ. Чăвашла кĕнеке умсăмахĕнче çапла каланă: «Унта куçарни кăна мар, хамăртан хушнисем те пур. Сăввисене нумайăшне куçаракан хăй шухăшласа çырнă. Вăл вылякансен кăмăлне каймалла пултăрччĕ тесе, ăна çырнă чухне коммун шкулĕнче вĕрентекенсем те хытă пулăшнă»[2]. Чăнах та, Шелепи текста хăйĕн çут çанталăкри пулăмсене, чĕр чунсемпе йывăç-курăка халаллană сăвви-юррине чылай кĕртнĕ («Хĕл хорĕ», «Кăнтăр енчи çил», «Пĕр шăнкăрчă», «Шăнкăрчăсем юрлаççĕ», «Тăри юрри», «Сарă кайăк», «Шăпчăк», «Куккук чечекĕ», «Măкăнь чечекĕ», «Çӳçе кăчки» тата ыт. те). Каярахпа вĕсем кĕнекесенче уйрăм халлĕн пичетленсе пынă.

Сăвăçа вырăс ача-пăча классики те хытă илĕртсе тăрать. Çавна май вăл Н. Некрасовăн «Саша» поэминчен «Рубка леса», «Крестьянские дети» поэминчен «Мужичок с ноготок» сыпăксене, И. Суриковăн «Детство», Ф. Слепушкинăн «Ачасем тырă вырни» тата ытти поэтсен сăввисене чăвашла куçарать. Тăлмач ĕçĕ чăваш поэтне çырав ăсталăхне туптама пулăшса пырать.

Куçарусемпе пĕрлех поэт тăван халăхăн çамрăк ăрăвĕ валли оригиналлă япаласем те хатĕрлет.

---

[1] В. Я. Канюков «Основные этапы развития чувашской детской литературы» ĕçĕнче (М., 1954, 9 с.) ку юмаха Шелепи хăй çырнă пек, вăл унăн оригиналлă хайлавĕ пулнă пек кăтартнă. Анчах та, каярахри çăлкуçсем тăрăх («Каталог изданий Чувашского областного издательства за 1925 г.»), ку хайлавăн авторĕ М. Метерлинк пулни курăнать.

[2] Çeçпĕл. – Шупашкар, 1924. – 5 с.

«Çулталәк хушши» ятлă пĕтĕмлетнĕ хаваслă лирикăллă тата эпикăллă сăвăсен ярăмĕ çырать. Çак музыкăпа драма композицийĕ, тĕпрен илсен, çуркуннене, çуллана, кĕркуннене, хĕллене, çавăн пекех чĕр чунсемпе кайăк-кĕшĕк тата йывăç-курăк тĕнчине халалланă сăвă-юрăран тăрать. Вĕсене пĕчĕккисем, хăйсен чун-чĕрине, шухăш-ĕмĕтне, интересне шута илсе çырнăран, хапăлласа йышăнаççĕ. Çак хайлав шкулсенчи, ялсенчи илемлĕ пултарулăх ушкăнĕсемшĕн кĕтнĕ япала пулса тăрать. Композицие тăтăшах уявсем вăхăтĕнче лартса пыраççĕ.

Поэт çавăн пекех драма кружокĕсен репертуарне кĕртме «Кушакпа автан» пьеса-юмах хатĕрлет. 1926 çулта хайлав уйрăм кĕнекен тухать. Ăна авторĕ халăх юмахĕ çине таянса 3 пайлă туса çырнă. Унти тĕп геройсем – икĕ тус, кушакпа автан. Вĕсем пĕрле килĕштерсе пурăнаççĕ. Пĕррехинче кушак шăшисемпе мулкач чĕпписем тытма сунара тухса каять, автана çурта лайăх пăхма, чее тилĕрен сыхланма хушса хăварать. Кушак курăнми пулсанах тилĕ автан пӳрчĕ патне йăпшăнса пырать, йăпăлтатма тытăнать. Автанĕ хăйне мухтанăран чăтса тăраймасть, пӳртĕнчен тухать. Тиллĕн 7 тарçи вара ăна ярса та илет, тытса çыхса хурать. Автан кăшкăрма пуçлать. Кушакĕ, аякках кайса ĕлкĕрейменскер, ун сассине илтсе чупса килет, тусне инкекрен хăтарать. Кушак иккĕмĕш хут сунара кайсан тилĕ каллех автанăн кантăкĕ умне йăпăртатса пырать, çепĕç юрă юрласа автанăн пуçне çавăрать. Вара лешĕ текех тӳссе тăраймасть, кантăкне уçать. Тилĕ чурисем автана ярса та илеççĕ, тытса каяççĕ. Кушакĕ, хальхинче аякка кайнăскер, автана хăтарма ĕлкĕреймест. Кайран вăл тилĕ килне çул тытать. Тăшманăн 7 хĕрне улталаса кушак хăйĕн тусне ирĕке кăларать. Кушак, чееленсе, тилле качча илме сăмах парать. Унпа пĕр çемье туса пурăнма килĕшсе татӑлать. Пьеса хаваслă туйпа, уявпа пĕтет.

Хайлавăн малтанхи пайĕ халăх юмахĕнчипе пĕр килет. Кайранхи пайĕнче автор хăйĕнчен хушса çырни сисĕнет. Пьеса-юмах сăвă-юрăран пуян. Уйрăмах кушакпа тилĕ юррисем ансат та сăнарлă.

Шелепи сăввисем, пуринчен ытларах, кĕçĕн тата вăтам çулхисем валли çырнăскерсем. Шухăшпа содержани енчен вĕсем виçĕ ушкăна уйрăлаççĕ: çут çанталăкпа тавралăха сăнлаканнисем, чĕр чунсемпе кайăк-кĕшĕке тата йывăç-курăка ӳкерекеннисем, политикăпа идеологие асра тытса калăпланисем.

Поэт тăван тавралăха, çут çанталăка, çулталăкăн тĕрлĕ вăхăтне ачасен кăмăлне каймалла çепĕç те илĕртӳллĕ сăрăсемпе, ытти çыравçăсеннинчен ăраснарах мелсемпе ӳкерет. Сăмахран, «Çуркунне» сăвăра (1926) çулталăкăн çак хӳхĕм вăхăчĕн портретне тунă чух вăл хĕвеле сăнлассине мала лартать, ытти ӳкерчĕксем унпа çыхăнуллăн çуралаççĕ:

Кулса тăнă евĕрлĕ
Хĕвел пăхать çутăлса;
Сивĕ йĕрсе, çухăрса
Тарать куççуль юхтарса.
Пур çĕрте те чăр та чăр
Кайăк сасси илтĕнет,
Хура вăрман, çеçенхир
Пурçăн тумтир тăхăнать.

Çамрăк вулакансем унăн йывăç-курăка хăйсем çинчен каласа панă пек туса çырнă сăввисене килĕштереççĕ. Унашкаллисем шутĕнче: «Çеçпĕл», «Мăкăнь чечекĕ», «Шăлан чечекĕ», «Çӳçе кăчки», «Куккук чечекĕ», «Курак» тата ыттисем.

Тискер кайăксемпе килти чĕр чунсене, вĕçен кайăксене, пыл хурчĕсене халалланă сăввисене те («Упа», «Кашкăр», «Тилĕ тус», «Мулкаç», «Чĕкеç»,

«Шăпчăк», «Саркайăк» тата ыт. те) çавнашкал меслетпе ăста калăпланă. Ку сăвăсем ачасене 4–5 çула çитсенех вуласа-каласа пама е пăхмасăр калама вĕрентме меллĕ. Тискер кайăксемпе вĕçен кайăксем хăйсенче мĕн ырри, мĕн начарри пурине хăйсемех пĕлтереççĕ: «Эпĕ, упа-утаман, ик урапа утакан, пур кайăкран хытăрах мĕкĕрттерсе улакан...» (Упа), «Эпĕ, кашкăр-кашаман, выçăхсан пит асакан, хĕлле сурăх çимешкĕн хӳме урлă каçакан...» («Кашкăр»). Поэт çак чĕр чунсене халăх сăмахлăхĕнчи евĕр сăнарлать: «упа-утаман», «кашкăр-кашаман». Тӳрĕ те ансат пуплевсемпе çырать. Сăввисем калăпăшĕпе пĕчĕк, икĕ-виçĕ çавраллă. Йĕркисем каллех фольклорти пек 7-шер сыпăкран, 3-шер пусăмран тăраççĕ. Рифмисем те кĕçĕн çулхисемшĕн килĕшӳллĕскерсем. Тĕпрен илсен вĕсене глаголпа унăн формисенчен йĕркеленĕ: «утакан», «улакан», «çывăратăп», «вăранатăп», «тăранатăп», «ташлатăп», «шăватăп», «асакан», «каçакан», «хĕнеççĕ», «илеççĕ», «тăваççĕ». «Шăнкăрчă», «Ушкăн шăнкăрчă», «Чĕкеç» сăвăсене те поэт çав меслетпех ăсталанă.

Шелепи сăввисен сăнарлăхĕнче халăх поэзийĕнчи кĕвĕсем тăтăшах илтĕнеççĕ. «Шăпчăк» сăвăри çавра, сăмахран, уявсенче янракан такмака питех те çывăх:

Эп юрлама тытăнсан
Сар кайăк та вăтанать.
Йывăç çулçи хушшинче
Тĕттĕм çĕре пытанать.

Шелепин 20–30-мĕш çулсенче ачасем валли çырнă хăш-пĕр сăввисем идеологи туртăмĕллĕ пулни çинчен маларах каларăмăр ĕнтĕ. Ку ушкăна «Ленин», «Ленин шухăшĕ», «Аслă Октябрь» (1924), «Аслă Октябрь революцийĕ чăваш халăхне мĕн пачĕ», «Телейлĕ ачасем», «Тума пулнă – тăвăпăр!», «Чăваш сăвви»

(1927) тата ытти хайлавсем кĕреççĕ. Вĕсенчен хăшĕ-пĕри темипе шухăшĕ енчен политикăпа идеологи сĕмĕллĕ пулсан та, анчах поэтики вара вĕсен тĕлĕнмелле селĕм. Ку енĕпе уйрăмах «Ленин» сăвă палăрса тăрать. Шелепи ăна халăх поэзийĕн кĕввипе усă курса питĕ ăста калăпланă.

Камăн варĕнче
Ўтленсе пулса,
Кам кăкри сĕтне
Çисе ўсрĕн-ши?

Кам чĕрçи çинче
Выляса-кулса
Хĕвел шевли пек
Йалт-йалт сикрĕн-ши?

Çакăн пек, чăнах та ĕнтĕ, никам та мар, чăваш сăвăçи çеç калама пултарнă. Вăл ăна тăван халăхăн сăнарлăх мелĕсене, шухăшлавне тĕпе хурса çырнă. Сăвă чăн чăвашла, ĕнентерўллĕ те илĕртўллĕ янăрать. Сăнлăхлă параллельлĕх тĕслĕхĕсем («вут юпа пулса»), танлаштарусем («хĕвел шевли пек», «ывăç çинчи пек», «вут çулăмĕ пек», «тулли уйăх пек», «хĕвел çути пек»), эпитетсем («аслă, мухтавлă, хăватлă, чаплă»), метафора («тĕттĕм пуçлăхĕ»), сăпатлантару («хăрушă вилĕм епле сан патна хăйса пычĕ-ши?»), риторикăлла ыйтусем («чĕнми пулчĕ-ши?», «хăйса пычĕ-ши?», «тĕксĕмленчĕ-ши?»), сăввăн тупапа пил евĕрлĕ янăракан чĕнўллĕ вĕçĕ («Яту çут пултăр, янтраса тăтăр, ĕмĕр чĕр пултăр!») хайлава чăннипех те классикăлла илемлĕх шайне лартаççĕ. Ку сăвва совет саманинче шкул кĕнекисене ахальтен кĕртмен. Вăл çамрăк туссен юратнă хайлавĕ пулса тăнă. Ăна кашни чăваш ачиех пăхмасăр калама пĕлнĕ.

Ку хайлава критика хăй вăхăтĕнче чăваш поэзийĕнчи чи пахалăхлă сăвăсен шутне кĕртнĕ. Тĕслĕхрен, М. Сироткин çапла çырнă: «Сăввăн сюжет кĕвви, унăн сăнлăхлă никĕсĕ халăх ĕмĕчĕпе, вăл мĕн шутланипе пĕр килсе халăх хăй хывнă юрă формине

йышăннă. Ку сăвăра нумайăшĕ халăх юрринчен илнĕ сăнарсемпе фигурăсенчен тăрать: кунта халăх лирикишĕн типлă сăнлăхлă параллелизм та, халăх кăмăлне каякан геройăн сăнарне хĕвел шевлипе, çутă çăлтăрпа, вут çулăмĕпе тата ыт. те танлаштарса кăтартни те пур... Ăнсăртран мар ĕнтĕ çак сăвă халăхăн лирикăллă юрри пулса тăнă»[1].

Çапла вара, Н. И. Полоруссов-Шелепи 20–30-мĕш çулсенче наци ача-пăча поэзийĕпе драматургийĕн аталану никĕсне çирĕп кирпĕчсем хурса хăварнă, вĕсене сăнарлăхпа илемлĕх тĕлĕшĕнчен çĕнĕ пахалăхсемпе пуянлатнă.

[1] Сироткин М. Я. Н. И. Полоруссов-Шелепи // Чăваш совет литератури. – Шупашкар, 1972. – 84 с.

## *Ыйтусемпе ĕçсем*

1. Н. И. Полоруссов-Шелепин ачасем валли çырас пултарулăхĕн уйрăмлăхĕсене уçса парăр.

2. Халăх поэчĕн кĕçĕн çулхи ачасем валли çут çанталăк тата чĕр чунсем çинчен çырнă сăввисен хăйнеевĕрлĕхне сăнăр.

3. Писатель вăтам сыпăкри ачасене мĕнле жанрлă хайлавсем халалланă? Вĕсенче текста илемлĕ те витĕмлĕ тăвакан хатĕрсемпе тата мелсемпе еплерех усă курнă?

4. Поэт пултарулăхĕ халăх сăмахлăхĕпе тачă çыхăннине каласа кăтартăр.

5. Çыравçă ăсталăхĕ куçару ĕçĕнче еплерех палăрнă-ши?

## *Усă курмалли литература*

Артемьев, Ю. М. Н. И. Полоруссов-Шелепи // Артемьев, Ю. М. Ĕмĕр пуçламăшĕ / Ю. М. Артемьев. – Шупашкар, 1996. – 13–21 с.

Сироткин, М. Я. Н. И. Полоруссов-Шелепи // Сироткин, М. Я. Очерки дореволюционной чувашской литературы / М. Я. Сироткин. – Чебоксары, 1967.

Чăваш халăх поэчĕ Н. И. Полоруссов-Шелепи : статьясен пуххи. – Шупашкар, 1982.

Дедушкин, Н. С. Шелепин ача-пăча сăввисем / Н. С. Дедушкин // Илемлĕ литература. – 1941. – 2 №.

## IV СЫПĂК

## АЧА-ПĂЧА ЖУРНАЛĔПЕ ХАÇАЧĔ

# «Хатĕр пул» журнал

«Хатĕр пул» – чăваш ачисен пĕрремĕш журналĕ. Вăл 1929 çулхи нарăсран пуçласа 2003 çулхи юпа уйăхĕччен «Хатĕр пул», «Çил çунат» ятсемпе тухса тăнă. Ун хыççăн ăна «Самант» теме тытăннă. Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи пуçлансан журнала кăларма чарăннă. Çĕнĕрен вăл 1977 çулта чĕрĕлсе тăнă. Çапла вара ачасен журналĕн кун-çулне икĕ пысăк пая уйăрма пулать: 1929–1941 çулсем тата 1977–2010 çулсем. Вăрçă умĕнхи тапхăрта «Хатĕр пулăн» 221 номерĕ тухнă, унăн тиражĕ чи нумай сарăлнă самантра 7100 экземпляра çитнĕ. Кунта калаçу çак çулсенче çапăнса тухнă хайлавсенчи туртăмсемпе сулăмсем, илемлĕх шайĕ пирки пырĕ.

1929 çулхи пĕрремĕш номерте çапса кăларнă программăллă статьяра çакнашкал йĕркесене вулатпăр: «Пĕчĕк ачасен журналĕ урлă эпĕр пионер юхăмне ертсе пыракансемпе пĕчĕк ачасемпе хутшăнса ĕçлекен педагогсене тата ытти юлташсене те вĕсен кулленхи ĕçĕнче пулăшу парса пырас задача лартатпăр... Пĕчĕк ачасене коммунистла вĕрентессишĕн, вĕсене пионер организацийĕсене пĕрлештерессишĕн пирĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле... Пĕчĕк ачасен вăй-хăватне пирĕн усăллă çĕре ямалла. Вĕсен инициативипе пултарулăхне хăпартса пымалла». Журнал, партин Чăваш обкомĕ ачасен коммунистла юхăмне чĕртесси пирки каланине асра тытса, çамрăк вулакансене «Парти кăтартса пынă çулпа хастарлăн утар!» тесе йыхравлать (1929, 5 №).

20-мĕш çулсен вĕçĕнчи тата 30-мĕш çулсенчи вырăс совет ача-пăча литературинче пĕчĕк ачана çитĕнсе çитнĕ çын евĕрлĕ туса кăтартас сулăм кĕретех

палăрать. «Хатĕр пул» та çак хум çине лекнĕ май чăваш ачине: «Пионер, ударнĕк пул эс таçта та, яланах», – тесе (1931) чĕнет. Çавнашкал хайлавсенче пĕчĕккисемшĕн ачалăх тĕнчинче савăнасси, вылясси-куласси, пурнасси мар, çĕр-шыври ашшĕ-амăшĕ, çитĕннисем тăвакан капмар ĕçсене ăнланасси, хутшăнасси тĕпре пулмалла текен шухăш малта тăнă. Центрта ачасем валли тухакан «Чиж» (1928–1935), «Еж» (1930–1941), «Пионер» (1924...) журналсем хăйсен вулаканĕсене çĕр-шывра пулса иртекен паллă ĕçсемпе анлăн паллаштарса пынă. «Хатĕр пул» та вĕсен тĕслĕхне тĕпе хурать, çамрăк ăру çĕр-шыва индустриализацилеме пулăшмашкăн тивĕçлине палăртма тăрăшать. Çав тĕллевпе «Çĕр-шыв индустриленет», «Чăваш çĕршывĕ индустриленет» ятлă ярăмсем уçать, публицистикăна анлă çул парать.

«Хатĕр пул» ял ыйтăвĕсене çутатнă чух та хăйĕн вулаканĕсене çитĕннисен рольне выляттарасшăн, вĕсене политикăлла агитаци ĕçне явăçтарасшăн, «ял хуçалăхне социализмла çулпа ярассишĕн» кĕрештересшĕн. Ял хуçалăх ыйтăвĕсене çутатнă чух та «Хатĕр пул» журналисчĕсем публицистика жанрĕсемпе анлăн усă кураççĕ. Л. Агаков «Кохозра» очеркра (1930) хула ачисем Шупашкар районĕнчи «Янту» хуçалăха ĕçлесе пулăшни çинчен сăнарлă çырса кăтартать. Л. Агаковăн «Коммун ачисем» (1930), И. Тукташăн «Чемпулаткă чĕпписем» (1932) очеркĕсене те çамрăк туссем юратса вулаççĕ.

Малтанхи тапхăрта «Хатĕр пулта» поэзи хайлавĕсем ытларах пичетленнĕ. Ун хыççăнхи вырăнсене йышĕ енĕпе прозăпа драматурги ĕречĕсем йышăннă.

Поэзири жанрсен тĕнчи сăвăран, юрăран, поэмăран тата юмахран тăрать. Литературăн çак ĕретĕнче икĕ йĕр, икĕ туртăм палăрулă. Пĕрремĕшĕ – политикăпа идеологи сĕмĕллĕ, чĕнӳллĕ-йыхравлă

хайлавсем, маршсем. Иккӗмӗшӗ – ачасен кулленхи ӗҫӗ-хӗлне, вӗренӗвне, вăййи-куллине, интересне асра тытса ҫырнă хайлавсем. Пӗрремӗш ушкăна кӗрекен сăвăсенчен чылайăшӗн ячӗсенче «марш», «ударник» сăмахсем тӗл пулаҫҫӗ. Унашкаллисен шутӗнче – П. Хусанкайăн «Автономи маршӗ», «Виҫҫӗмӗш сыпăк маршӗ», Митта Ваҫлейӗн «Октябрь ачисем» (Ҫӗнӗ марш), Н. Ваҫанккан «Ударниксен маршӗ», М. Няманӗн «Пионерсен маршӗ», Якку Арсланăн «Автосавăтри ударниксен юрри». Тӗслӗхрен, П. Хусанкай «Виҫҫӗмӗш сыпăк маршӗ» сăвăра (1931, 6–7№) пионерсене ҫапла чӗнсе калать:

Пара-параппанлăр,
Пара-параппанлăр,
Пара-параппанлăр сулмакла.
Пурнăҫ ани анлă
Кӗрешсе каҫмалăх
Пиччесемпе танлă пулмаллах!

Поэт хăйӗн сăввине тӗпрен илсен 4-шар пусăмлă тоника виҫипе хывнă. Йӗркесем варринче чарăнса кӗвӗленсе илеҫҫӗ, сулăмлăхпа ҫирӗплӗх туянаҫҫӗ. Рифмисем сулмаклă та янăравлă: «айӗнчен эс – пирӗн тезис», «пăтранма – катрам мар», «сыпăк – сыпăр», «ани анлă – каҫмалăх», «радио – чакарать-и», «тӳпере те – хӳтерет-тӗк». Кашни тӗп сăвă ҫаври хыҫҫăн юрăри евӗр кӗртсе лартнă кӗвӗллӗ 6 йӗрке тăрать. Хайлав тексчӗ хушу-хиствелӗ пуплевсемпе («итле, ачапча», «сыпăр, тутанăр ăна», «час чакар»), обращенисемпе («Атăл, ҫитет сана пăтранма», «Эй, пионери!», «хӗвел, тух»), эпитетсемпе («яш ҫар», «таса сывлăш», «тăрă шыв», «шур пӗлӗт», «хăмăр пӗлӗтсем»), метафорăсемпе («пионери – виҫҫӗмӗш сыпăк», «эсӗр – хӗвеллӗ коммун кăнтăрли», «юн йытти», «совет ăшши») тата ытти тропсемпе пуян. П, Х, Т, Л, М хупă сасăсен янăравӗ хытă сисӗнсе тăрать. Ҫаксем вӗсем пурте

текста ачасемшĕн меллĕ те килĕшӳллĕ, илĕртӳллĕ тăваççĕ.

«Хатĕр пулти» сăвă-юррăн иккĕмĕш ушкăнне Трубина Мархви, Уйăп Мишши, Мĕтри Васлейĕ, Ухсай Яккăвĕ, В. Бараев, Н. Пиктемир, Н. Янкас, И. Ивник, И. Малкай тата ыттисем çырнă йышлă сăвăсем кĕреççĕ. Вĕсен никĕсĕнче – ачасен пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ, вăййи-кулли, савăнăçĕ-киленĕçĕ. Çав хайлавсем пурте тенĕ пекех сюжетлă. Сюжетне ачалăх тĕнчинчи пĕр-пĕр пулăма илсе йĕркеленĕ (Трубина Мархвин «Шăнкăрч вĕлли», Мĕтри Васлейĕн «Йĕлтĕрпе» сăввисем). Çамрăк туссем Уйăп Мишшин «Автобуспа» сăввине (1931) хавхаланса кĕтсе илеççĕ. Унта эпир çĕнĕ самана çуратнă техника ĕмĕрĕн пуçламăшĕнче пĕрремĕш хут автобус çине ларса тĕп хуламăра кайса курнă савăнăçлă ачасене куратпăр:

Автобусĕ пĕр хашкарĕ,
Пĕр вĕçтерчĕ çивĕччĕн.
Сывă пулах, Шупашкарĕ,
Эпĕр тепре киличчен.

***

Хула юлчĕ хыçала,
Сăрт хыçне пытанчĕ.
Ларса куртăм кăçалах,
Ларасса шанманччĕ.

Ку сăвă кашни чăвашăн чунне-юнне кĕрсе юлнă. Унта – самана çĕкленĕвĕ, пурнăç хĕпĕртĕвĕ, тăван кĕтесе темрен те мала хуни.

30-мĕш çулсенче «Хатĕр пулта» темиçе поэма (е вĕсен сыпăкĕ) кун çути курать. Çавсем хушшинче – Ухсай Яккăвĕн «Пуканесен бригади» (1935), «Ĕмĕт» (1940), И. Ивникăн «Павлик Морозов» (1934), М. Ястранăн «Сергей Киров» (1937), М. Ахтупайăн «Миша Ломоносов» (1940) хайлавĕсем. Ку вăл пирĕн ача-пăча çыравçисен пысăкрах калăплă жанрсене алла

илес ăсталăхĕ пĕчĕккĕн ӳссе пыни ҫинчен калать.

Журналăн вăрҫă умĕнхи ҫулсенче тухнă номерĕсенче Ухсай Яккăвĕпе П. Хусанкайăн сăвăлла юмахĕсем пичетленсе тухаҫҫĕ. Ухсай Яккăвĕ «Хресчен автанĕ» юмаха (1940) халăх сăмахлăхĕнчи меслетпе пуҫласа ярать:

Пурăннă, тет, пĕр ялта
Мучипеле кинемей.
Икĕ чăх та пĕр автан
Кӳнĕ иккĕшне телей.
Сар автанĕ – ăслă чун –
Шурăмпуҫĕ килнĕ чух
Савăнтарнă ирхине
Икĕ ватă хуҫине.
Чăхсемпе автан пĕрре
Чакаланнă тислĕкре...
Сиксе тухнă ăнсăртран
Ҫаврака ылтăн курка
Тата кĕмĕл кашăк та.

Ҫак мула вĕсенчен улпут туртса илет. Автан улпута ылханать. Ылханасси 6 хутчен пулса иртет. Ҫавна май сюжет та ҫавăн чухлĕ авăкран тăрать. Улпут темиҫе хутчен тапăнса та автана ҫĕнтерейместь. Юлашкинчен ăна пусса апата яма хушать. Анчах автанĕ вилнĕ хыҫҫăн та улпута намăса тăратса хăварать. Улпут суккăрланса ларнă тата хăй сисмесĕрех авăта-авăта ярать. Юмахăн тĕп шухăшĕ ҫакăн пек: «Ҫынна усал ан ту, хăвăн усалу хăвнах пырса ҫапĕ». Юмахăн поэтики питĕ пуян. Эпитетсем йышлă, хăйне евĕрлĕ, чылайăшĕ хутлам-хутламлă: «сар лапка», «сар автан», «кĕмĕл кашăк», «йăлтăр-йăлтăр йăлтăркка ҫаврака ылтăн курка», «тăррине вĕҫсе ларайми вĕри мунча». Автор нумайлăха палăртнă чух халăх

сăмахлăхĕнче час-часах тĕл пулакан шут-хисеп паллисемпе усă курать: «çич инкек сана», «улпут 777 хут тухтăра шыра-шыра». Поэт кашни героя уйрăм, хăйне евĕр чĕлхеллĕ тума тăрăшать. Улпут, сăмахран, хушуллă та хиствлĕ калаçать: «Яр туяпа уринчен!», «тытса пусăр автана!». Пĕр пек сасăсен янăравĕ те сăвăçшăн сăнар е ÿкерчĕк тумалли хăйне евĕр мел шутланать:

Кăт-кăтик: ка-ка-как,
Ылтăна чи пысăк хак.
Кăт-кă-тик! Кăт-ик, ка-как!
Кĕмĕлтен усси пурах.

Ухсай Яккăвĕн «Кĕслеçĕпе упа» юмахĕн (1941) тĕп геройĕсем – Микуç пиччепе упа. Микуç пасартан киле таврăннă чух вăрман уçланкинче тунката çине ларса кĕсле калать. Çав вăхăтра упа тухса ташлама тытăнать. Кайран Микуçпа упа яла анаççĕ. Упа унта каллех ташласа халăха тĕлĕнтерет. Ку хайлавра халăх юмахĕн йĕрĕсем сисĕнсех каймаççĕ. Ку вăл – поэт хăй шутласа тупнă юмах. Ăна çырнă чух вăл халăхăн «упана та ташлама вĕрентеççĕ» текен каларăшне тĕпе хунă пулас. Маларахри «Хресчен автанĕнче» те унăн çавнашкалли пурччĕ: çăткăн улпут «чăх пек нимĕн те курмасть», çыннăнне хапсăнаканскер, суккăр пулса юлать. Çут çанталăк ÿкерчĕкĕсем, витĕмлĕ танлаштарусем («вилнĕ пек йăванчĕ», «куçĕсем ... вутлă икĕ кăмрăк пек»), мăшăр тата икĕ хут калакан сăмахсем («йăнтăр-йăнтăр», «йăкăш-йăкăш», «кăштăр-кăштăр», «йăкăш-якăш», «тăпăр-тăпăр», «шăппăн-шăппăн», «çупа-çупа», «çурăк-çарăк», «шавсăр-сассăр»), междометисемпе обращенисем («э-й, э-й, ырă халăх»), 7–8-шар сыпăклă йĕркесем, хорей сăвă виçи юмахăн илемлĕх шайне çĕклеççĕ.

П. Хусанкай хăйĕн «Çарăк» тата «Кăвакарчăн»

(1941) юмахӗсен сюжечӗсене халӑх халапӗсене тӗпе хурса йӗркелет. Икӗ юмахӗ те «карчӑкпа старик пурӑннинчен» пуҫланаҫҫӗ. «Ҫарӑк» юмахра ҫаксем пуяс тӗллевпе мачча ҫинчи тӑпрас ҫине асӑннӑ ҫимӗҫе акаҫҫӗ. Ҫарӑкӗ питӗ ҫӳллӗ ӳсет, ҫичӗ пӗлӗтрен иртсе каять. Старик хӑпарса пӑхать, чи ҫӳлте пӳлӗх пахчи пуррине пӗлет. Карчӑкне те ырӑ кӑтартма шутлать. Ӑна миххе лартать те миххине ҫӑварне хыпса пӗлӗте хӑпарма пуҫлать. Карчӑкӗ михӗре нимӗн те курмасть, старикне хӑҫан ҫитетпӗр тесе аптӑратса ҫитерет. Юлашки пусӑм юлсан мучи чӑтса тӑраймасть, ҫӑварне уҫса ярать. Карчӑкӗ тӳрех ҫӗре персе анать. Юмах нумая хапсӑнни, ҫӑткӑнлӑхпа ӗмӗтсӗрлӗх ырри патне илсе пыманнине систерет.

«Кӑвакарчӑн» хайлав чӑваш халӑх халапӗпе пӗрлех ырӑссен «Аленький цветочек» юмахне аса илтерет. Мучипе кинемийӗн 3 хӗр пулнӑ. Таҫтан, ҫӗр ҫурӑкӗнчен, старик инкеке лекнине пула, вӗсем патне хӗр ҫураҫма килмелле. Аслипе вӑталӑххи качча кайма килӗшмеҫҫӗ. Кӗҫӗнни, ашшӗне инкекрен хӑтарас тесе, килӗшет. Йӑмӑкӗпе упӑшки пӗр-пӗрне юратса лайӑх пурӑнма пуҫлаҫҫӗ. Аппӑшӗсенчен пӗри, йӑмӑкӗн телейне курса, ӑна ӑмсанма пуҫлать. Пӗррехинче пӗрле мунчана кайсан, маларах тухса йӑмӑкӗн япалисене вӑрласа тӑхӑнса ярать, ачине илсе упӑшки патне таврӑнать. Йӑмӑкӗн упӑшкипе арлӑ-арӑмлӑ пурӑнма пуҫлать. Йӑмӑкӗ кӑвакарчӑн пулса вӗҫсе каять. Ют алӑра ача йӗме пуҫлать. Ӑна йӑпатма кунсерен кӑвакарчӑн вӗҫсе килет. Юмӑҫ каланине итлесе упӑшки кӑвакарчӑна тытать. Лешӗ каллех унӑн арӑмне ҫаврӑнать. Аппӑшне тиха хӳринчен кӑкарса килне ӑсатаҫҫӗ. Вӑл ҫул ҫинче вилет. Йӑлтах халӑх юмахӗнчи пек: 3 хӗр, 3 хутламлӑ ӗҫ-пуҫ, ырри усала ҫӗнтерни, ырӑ курса пурӑнма пуҫлани, 7–8-шар йӗркеллӗ сӑвӑ виҫи, илем кӳмелли витӗмлӗ мелсемпе хатӗрсем. Икӗ юмахне те пӗчӗккисем юратса вулаҫҫӗ. Вӗсене шкулта ачасем вуламалли хайлавсем шутне кӗртнӗ.

Прозаиксенчен Тӑван ҫӗр-шывӑн аслӑ вӑрҫичченхи

«Хатĕр пулта» М. Данилов-Чалдун, Трубина Мархви, Митта Петĕрĕ, И. Тукташ, Л. Агаков, В. Алакĕр хайлавĕсем ытларах пичетленнĕ. Пĕр-икĕ хайлав кăларнисем хушинче – С. Шăпчăк, С. Ялавин, Хĕв. Çитта, Иван Мучи, С. Лашман, К. Пайраш, В. Краснов-Асли, Н. Чурпай, К. Чулкаç, Хумма Çеменĕ, Тихăн Петĕркки, К. Кольцов, А. Лазарева. Тĕп жанрсем – калав, очерк, асаилӳ, юмах. Повеçсем тухман. Шухăшĕпе нумайăшĕ вĕсенчен политика туртăмĕллĕ, агитаци пĕлтерĕшлĕ.

30-мĕш çулсен иккĕмĕш çурринче журналта Трубина Мархви калавĕсем («Арçури» (1935, 1№), «Аякри тăвансем валли» (1937, 4№)) пичетленеççĕ. Вĕсенче те агитаци сĕмне уççăнах туятăн. Автор ушкăнлă, коллективлă ĕçе, колхоз пурнăçне хапăллани, унăн пĕрлехи пуянлăхне хӳтĕлени сисĕнет.

М. Данилов-Чалтунăн калавĕсене, тĕпрен илсен, çарпа приключени жанрĕпе çырнă теме юрать. Вĕсене икĕ ушкăна уйăрма пулать: пĕри – Хĕрлĕ Çарпа партизансен юхăмĕ, тепри – çамрăк ăру çинчен çырнисем. Писатель хăйĕн хайлавĕсенче ӳкерсе кăтартнă ĕç-пуçа, унти геройсене аван пĕлнĕ. Çавăнпа унăн калавĕсем, идеологи хушнине пăхăнса хĕрлисемпе шуррисене, ĕлĕкхипе хальхине хирĕçле кăтартса çырнă пулин те, вулакана тыткăна илеççĕ. Çыравçăн ачасен журналĕнче кăларнă «Шахтăра», «Иртнине асăнса», «Климккă», «Тыткăн», «Питĕ савăнчĕç», «Ăслă ачасем», «Çамрăк сунарçă», «Колчакăн юлашки кунĕ», «Партизан хĕрĕ» тата ытти калавĕсем сюжет кăсăклăхĕпе тата илĕртӳлĕхĕпе, çамрăк вулакансен чун-чĕрине хускатакан селĕм ӳкерчĕксемпе, ачасен хăюлăхĕпе çирĕплĕхне кăтартакан пулăмсемпе, чĕлхе сăнарлăхĕпе палăрса тăраççĕ. Унăн геройĕ яланах хăй вăхăтĕнчи пурнăçри пек, чĕрĕ те çирĕп, чăнлăхлă. Ачасем уйрăмах «Партизан хĕрĕ» тата «Шахтăра» калавсене

килĕштереççĕ. Пĕрремĕш калавне М. Данилов-Чалтун, Хумма Çеменĕ «Хамăр вăйпах» хайлава калăпланă пекех, асаилӳ меслетне (калав ăшĕнчи калав) тĕпе хурса çырнă. Ĕç Çĕпĕрте, тайгара, граждан вăрçи вăхăтĕнче пулса иртет. Партизан хĕрĕ, 14-ри Раис, хăй тĕллĕн вăрманта сунарта çӳренĕ чух аташса каять, тем те пĕр курса пĕтет, шуррисен аллине лексе асап тӳссе ирттерет, партизансем патне лекет. Сюжетри романтика сĕмĕ, тĕп герой тем те пĕр курса пĕтни çамрăк вулакансене туртса, тыткăнласа тăрать. Автор пейзажпа питĕ вырăнлă усă курать. Çут çанталăк ӳкерчĕкĕсем çын ĕçĕ-хĕлĕпе меллĕ те çураçуллă ылмашăнса пыраççĕ. Сюжет, сăмахран, хĕвеле сăнланипе пуçланать, унпах вĕçленет: Раис, инкекрен çăлăннăскер, çутăлнă çĕре партизансем патне çитет; çав вăхăтра хавăслă тĕлпулу пулса иртет; хĕвел те хĕрелсе тухать... Сăнарлă танлаштарусем, «Çутăлчĕ», «Сивĕ», «Ăшăтрĕ» йышши кĕске предложенисем, «нăтăрт-нăтăрт», «шарт», «йăлтăр-ялтăр», «у-у-у» пек евĕрлев сăмахĕсем, сĕтеклĕ чĕлхе калавăн илемлĕх шайне ӳстереççĕ.

Митта Петĕрĕн «Вĕçевçĕ Уçăп» калавĕ те (1937) граждан вăрçи çулĕсенчи ӳкерчĕкренех пуçланать. Тĕп герой – саккăр тултарса тăххăра кайнă Уçăп, çырмара раксем тытса çӳрекенскер, хĕрлĕ салтаксемпе тĕл пулать. Граждан вăрçи ачана ашшĕсĕр тăратса хăварать. Анчах совет влаçĕ çурма тăлăха пăрахмасть. Уçăп вĕренсе специальность илет, летчик пулса тăрать. Шухăшĕпе ку калав, çав тапхăрти ытти нумай хайлав пекех, политика витĕмĕнчен хăтăлайман. Анчах вăл та çав вăхăтри ача-пăча прозине сăнарлăхпа илемлĕхĕн çĕнĕ йĕрĕсемпе пуянлатнă. Вĕсен шутĕнче: тропсен тĕрлĕ тĕсĕсем, çут çанталăк ӳкерчĕкĕсем, геройсен хутшăнăвĕсем, автор характеристики, фольклор витĕмĕ т. ыт. те.

30-мĕш çулсенче ачасем «Хатĕр пул» урлă Трубина Мархвин «Ютран килни» (1935), К. Чулкаçăн

«Сунарçă халапĕсем» (1936), И. Тукташăн «Тилĕпе улатакка» (1938), М. Данилов-Чалтунăн «Тăрнасем» (1940) юмахĕсемпе паллашнă. Ку хайлавсем, прозăпа çырнăскерсем, сăвăллисемпе танлаштарсан, самай уйрăлса тăраççĕ. Сăвăлла юмахсенче халăх халапĕсен йĕрĕсем аванах сисĕнеççĕ пулсан, калавласа çырнисенче вĕсем палăрманпа пĕрех. Прозăлла юмахсем оригиналлăхпа уйрăлса тăраççĕ. Тĕслĕхрен, Трубина Мархви хăйĕн асăннă юмахĕнче ачасем ăшăра ӳсекен иçĕм çырлине сивве тӳсмелле туни çинчен каласа кăтартать, пĕрлешӳллĕ тухăçлă ĕçе мухтать, çут çанталăка юратма вĕрентет. Хăйĕн юмахĕпе автор «çине тăрсан, тăрăшсан çын ӳсен-тăран тĕнчине те çĕнетсе урăхлатма пултарать» тесшĕн.

20-30-мĕш çулсенчи «Хатĕр пулти» драматурги, прозăпа тата поэзипе танлаштарсан, вăйсăртарах-ха. Пысăк пĕлтерĕшлĕ, тарăн шухăшлă, тулли илемлĕ пьесăсем çукрах. Ытларахăшĕ – шкул сцени валли хатĕрленĕ пĕчĕк хайлавсем, инсценировкăсем, вăйăсен сценарийĕсем. Вĕсене агитаци туртăмĕ витерсе тăрать. Çав пьесăсен никĕсĕнче – ĕлĕкхипе хальхин, киввипе çĕннин тавлашăвĕ. Трубина Мархви «Çĕр чĕлхи» пьесăра (1929, 3№) ялти комсомолецсемпе пионерсем коммунистсем ертсе пынипе нумай пусăллă уйсем туса ял хуçалăхне çĕклессишĕн кĕрешнине, çĕр ĕçĕнче çĕнĕ меслетсемпе усă курасси пирки шухăшланине çырса кăтартнă.

30-мĕш çулсенчи «Хатĕр пулăн» пархатарлă ĕçĕсенчен тепри – вăл çĕр-шыври тата тĕнчери ача-пăча классикин паха тĕслĕхĕсене тăван чĕлхепе чăвашсен çамрăк вулаканĕсем патне çитерес тесе тăрăшни. Куçарнă хайлавсен авторĕсем – тĕнчипе паллă çыравçăсем А. Фирдоуси, Х. Андерсен, А. Барбюс, Т. Шевченко, В. Гюго, Н. Некрасов, Л. Толстой, А. Чехов, М. Лермонтов, В. Маяковский,

М. Горький, Н. Островский... 1937 çулхи иккĕмĕш номере А. Пушкин хайлавĕсем, унăн пурнăçĕпе пултарулăхне çутатакан материалсем йышăннă. Çамрăк вулакан казахпа кăркăс акынĕсен Дмалбул Джабаевпа Токтогул Сатылгановăн сăвви-юррине, эрменпе калмăк халăхĕсен «Давид Сосунский» тата «Джангар» эпосĕсене хаваслăн кĕтсе илнĕ. Чăваш куçару шкулĕ çак тапхăрти тăлмачсен тĕнчери ача-пăча классикине тăван халăхăн çамрăк ăрăвĕ патне çитерес ĕсталăхĕпе пуянланать. Тăлмачсем хăйсен ĕçне тĕплĕ тума тăрăшнă. Сăмахран, И. Ивник классика хайлавĕсемпе питĕ пĕлсе те тимлĕ ĕçленĕ. Вăл текста тӳррĕн, ним улăштармасăр, сăмахран сăмаха куçарас çулпа кайман, оригиналăн тĕп шухăшĕпе сĕмне сыхласа хăварса ăна чăн чăвашла калассине, сăнара тулли уçса парассине мала хунă. Ку енĕпе вăл маларахри куçару ăстисен И. Яковлевăн, К. Ивановăн, Тайăр Тимккин тата ыттисен паха опытне ăша хывни паллă. «Хатĕр пулăн» 1936 çулхи 1-мĕш номерĕнче И. Ивник А. С. Пушкинăн «Хĕллехи каç», «Тĕрме çынни», «Пĕлĕт» сăввисене чăвашла пичетлесе кăларать. «Хĕллехи каç» сăвăри йĕркесене илсе пăхар-ха акă:

Пĕлĕте хуплать çил-тăвăл,
Юр тĕркийĕ çаврăнать.
Тискер кайăкăн ӳлет вăл,
Ача пек йĕрсе ярать.
Ăнсăртран пӳрт çийĕ тăрăх
Улăма сирсе шавлать,
Каçа юлнă çулçӳрен пек,
Кантăкран килсе шаккать.

Пушкин сăввинчи йĕркесем чăваш текстĕнче пурте хăйсен вырăнĕнче. Пурте тикĕс те йĕркеллĕ. Хайлав чăн чăвашла тасан та уççăн янăрать. Аслă вырăс

поэчĕн сăввин сюжечĕ, шухăшĕпе илемĕ куçарура пĕр улшăнми сыхланса юлнă.

Журнал хăйĕн страницисенче писательсем çырнă юмахсемпе пĕрлех халăх халап-юмахĕсене те вырăн панă. «Тимĕрçĕпе ывăлĕ», «Йытă çынпа туслашни», «Икĕ упа», «Чăрăшпа старик» (1938) – чăваш халăх юмахĕсем. Редакци çавăн пекех хăйĕн çамрăк вулаканне вырăс, тутар, китай юмахĕсемпе паллаштарнă.

«Хатĕр пул» хăй кун-çулĕн малтанхи тапхăрĕнче çамрăк çыравçăсене пăхса çитĕнтерессине çине питĕ тимлĕ пăхнă, вĕсен сăввисемпе калавĕсене, статйисемпе çырăвĕсене кашни номерте тенĕ пекех пичетлесе пынă. Чылай чухне вĕсен япалисене «Пионер хаçачĕ», «Пионерсен сăввисем», «Пионерсен çырăвĕсем», «Пирĕн çамрăк сăвăçсем», «Октябреноксен страници» ятлă ятарлă кăларăмсемпе ярăмсене вырнаçтарнă. Редакци çамрăк авторсене пулăшас тĕллевпе Ф. Меценатовăн «Сăвăсен форми тата вĕсене мĕнле çыраççĕ?», М. Пахчаçăн «Кĕскен сюжет çинчен» статйисене (1941), Ç. Элкерпе (1933) Г. Краснов-Кĕçĕннин (1934, 1935) тата М. Няманĕн (1940) канашĕсене пичетлесе кăларнă. Г. Енгерпе (1936) Н. Сверчков (1935) художниксем çамрăк сăрă ăстисене журнал урлă канашсем парса пулăшнă. «Хатĕр пула» çырса тăнă ачасенчен хăш-пĕри кайран чăвашсен паллă писателĕсем пулса тăнă. Вĕсем хушшинче: В. Давыдов-Анатри, Александр Артемьев, Василий Васькин, Илья Думилин, Петĕр Ялкир т. ыт. те.

Çакна та палăртмалла: пирвайхи утăмсем тунă чух «Хатĕр пулăн», кирек епле хаçатпа журналăнни пекех, пурте йĕркеллĕ пулса пырайман. Йывăрлăхсемпе чăрмавсем те тупăнсах тăнă. Уйрăм номерсем, тĕслĕхрен, 1936-мĕш çулхисем, типĕ те кичем тухнă. Хăш-пĕр япаласене чĕлхе тĕлĕшĕнчен саваласах çитерейме́н. Тепĕр чухне вырăсла шухăшласа чăвашла

çырни хытă сисĕнет. Уйрăм сăмахсемпе çаврăмсене тăван чĕлхепе калама май пур çĕртех вырăсла çырса кайнă: «пятилетка», «темп», «песприсорлăх», «инициатива», «отрядри кичемлĕхе хăваласа кăларар», «ĕçĕсем çинчен вĕренĕр», «техникăна алла çавăрса илессишĕн хастарлăн çапăçар»... Хăш-пĕр пуплевсене тата ытлашши кукăртни, чăвашлатни куçа тăрăнать: «чыхвăршăн», «пикорсем» («пионер-корреспондентсем» теес вырăнне), «ачакорсем» т. ыт. те. Пахалăхпа илемлĕх енĕпе картне ларсах пĕтеймен сăвă-калав та тухкалать. Хушăран номерсене официаллă япаласемпе тултарса лартнă, ачасен çырăвĕсене, сăввисемпе калавĕсене, ўкерчĕкĕсене вырăн паман.

Журнал Мускавран каланине итлесе тĕне хирĕç кĕрешет, çак ĕçе ачасемпе çамрăксене явăçтарма тăрăшать. Сăмахран, Зина Митрофанован «Текех çук чиркў» сăввинче (1934) çакăн пек йĕркесем пур:

Чиркĕве пăсать колхозник,
Чиркĕве ватать, шаккать.
Пысăк усă вăл курасшăн,
Çĕн дворец тумаваскать.

Редакци çавăн пекех хăйĕн вулаканĕсене хамăр йăласемпе уявсене аркатма чĕнекен материалсем пичетлесе пырать: «Пурте мăнкуна хирĕç тухăр» (1929), «Сĕрĕмлĕ пукрав вырăнне – коллективизаципе тырпул кунĕ» (1931).

Пĕтĕмлетсе каласан, чăваш ачисен журналĕ малтанхи тапхăрта партипе патшалăх тытăмĕ хушнине çирĕп пăхăнса пурăннă. Апла пулин те унăн чăваш ача-пăча литературине аталантарас ĕçри пĕлтерĕшĕ пысăк пулнă. Чăвашсен мал туртăмлă пултаруллă çыравçисем, идеологи хĕсĕрленине пăхмасăр, ачасем валли чăнлăхпа çыхăннă паха хайлавсем çырма

тăрăшнă, çамрăк туссен сăн-сăпатне туллин уçса парас, вĕсен чун-чĕри патне çитес тесе тимленĕ.

«Хатĕр пул» пулăшнипе чăваш ача-пăча литератури 20-30-мĕш çулсен хутлăхĕнче ачасен тĕрлĕ сыпăкĕсем валли тĕллевлĕ çырасси çине куçать. Виçĕ сыпăк палăруллă: шкул çулне çитичченхисемпе кĕçĕн классенче вĕренекенсем, вăтам сыпăкрисем тата аслă классене çӳрекенсем. Журналта вăтам çулхисемпе çитĕннĕ ачасене вуламалли текстем ытларах пичетленеççĕ, чи пĕчĕккисене халалланă хайлавсем вара сахалтарах. Кĕçĕн çулхисем валли сăвă çырас енĕпе Н. Полоруссов-Шелепи («Упа», «Кашкăр», «Шăнкăрчă»), Трубина Мархви («Шăнкăрчă вĕлли»), В. Бараев («Шăхличĕллĕ Митюк»), калав хайлас тĕлĕшпе И. Тукташ («Чĕрĕп чĕппи хăнаран таврăнни», «Икĕ шапа инкеке лекни», «Чăпар чăхăпа унăн чĕпписем», «Чарусăр кушак çури»), юмах калăплас енĕпе А. Кăлкан («Чее кушак») ăнăçлă ĕçлеççĕ. Вăтам çулхисемпе аслă классене çӳрекенсене М. Данилов-Чалтун, Л. Агаков, Хумма Çеменĕ, Куçма Чулкаç прозаиксем, Ухсай Яккăвĕ, П. Хусанкай, И. Ивник, Н. Янкас, Уйăп Мишши, Митта Ваçлейĕ, Н. Ваçанкка сăвăçсем паха хайлавсем парнелеççĕ. Революцичченхи тапхăртах палăрнă традициллĕ жанрсем – юрă-сăвă, калав-очерк – халĕ йыш тĕлĕшĕнчен пысăкланаççĕ, пахалăх енĕпе лайăхланаççĕ. Çавăн пекех çĕнĕ жанрсем çуралаççĕ: марш, йыхрав юрри, поэма, асаилӳ, публицистика статйи, сценка, сценари, инсценировка т. ыт. те. Çитĕннĕ ачасен прози (Л. Агаковăн «Вăрманти отряд», М. Данилов-Чалтунăн «Партизан хĕрĕ», Митта Петĕрĕн «Вĕçевçĕ Уçăп», Тихăн Петĕрккин «Вăрман упăтисем» калавĕсем) приключенипе детектив туртăмĕпе пуянланать. Литература поэтика енĕпе тепĕр карт хăпарать. Куçару шкулĕ ăнăçлă утăмсем тăвать. Ӳлĕмри тапхăрсенче ача-пăча сăмахлăхĕ «Хатĕр пул» тимлĕхĕпе пулнă ӳсĕмсем çине таянса аталанать, çĕнĕ пахалăхлă пусăма çĕкленет.

## «Пионер сасси» хаҫат

«Пионер сасси» хаҫатӑн 30-мӗш ҫулсенчи тата 40-мӗш ҫулсен пуҫламӑшӗнчи илемлӗх тӗнчи чылай енчен ҫак тапхӑрти «Хатӗр пул» журналӑннипе пӗр евӗрлӗ. Хаҫат ача-пӑчана «класлӑ сисӗмлӗ» пулма, тӑшмана хӑвӑртрах тупса палӑртма тата ҫапса аркатма йыхӑрать. Ҫакнашкал ҫаврӑмсем уйрӑмах 30-мӗш ҫулсен пӗрремӗш ҫурринче ҫапӑнса тухнӑ сӑвӑсенче тӑтӑш тӗл пулаҫҫӗ. Вӗсен шутӗнче Усли Ваҫлейӗн «Сирӗнтен пӗри» (1932, 50№), И. Вашкин «Ман анне колхозӑм» (1933, 15№), А. Катайӑн «Пирӗн юрӑ» (1933, 15№), Малов-Автобусӑн «Шкул пахчинче» (1933, 19№), А. Шенкелин «Итле, пионер» (1933, 36№), Хӗв. Ҫиттан «Ҫитӗнӳсем савӑнтараҫҫӗ» (1933, 45№) тата ыт. те.

Хаҫатӑн 1939 ҫулхи 57-мӗш номерӗнче Ухсай Яккӑвӗн «Халӑхӑн ылтӑн кӗнеки» поэми пичетленет. Сӑвӑҫ унта совет конституцине мухтать. Шухӑшӗпе идеологи туртӑмӗллӗ пулсан та, поэтики унӑн питӗ пуян. Поэт антитезӑпа контраст мелӗпе усӑ курса икӗ хире-хирӗҫле тӗнче портретне тӗлӗнмелле сӑнарлӑ тума пултарнӑ. Халӑх кӗрешӗвӗн историллӗ тапхӑрӗсене автор лирика мелӗпе питӗ ӗнентерӳллӗ ӳкерет. Поэмӑра илемлӗхпе витӗмлӗх кӳмелли мелсемпе хатӗрсен тӗслӗхӗсем йышлӑ.

Сакӑр йӗркеллӗ сӑвӑ ҫаври, 9 тата 8 сыпӑклӑ йӗркесем, ямб виҫи, ытти поэтсенни пек мар янӑравлӑ рифмӑсем, уйрӑм ушкӑнри ҫаврасене пӗрешкел пуплевсемпе пуҫласа пыни («саккун тесен, сехре хӑпатчӗ», «ҫӗнӗ саккуншӑн тухрӗ халӑх», «саккун тивлечӗпе пирте»), «С», «Т», «Л», «Р» тата ытти хупӑ сасӑсен вылявӗ («саккун тивлечӗпе хирте кашлать пӳ ҫӳллӗш тырӑ-пулӑ, ӗлӗк хӗсӗк хыткан ҫӗрте паян тӑпра та пултаруллӑ») – ҫаксем пурте Ухсайӑн тулӑх поэтикин пӗр пӗтӗм уйрӑлми пайӗсем. Вӗсем ҫав тапхӑрти чӑваш сӑввин пӗтӗмӗшле сӑнарлӑхне ҫӗнӗ сӑн кӗртсе

вăйлатаççĕ.

Вăтăрмĕш çулсен пĕрремĕш çурринче çитĕннисен поэзийĕнче партилĕхпе класлăх витĕмĕпе çуралнă «маршсемпе» «юрăсем» çав вăхăтри чăваш ачисен хаçатĕнчи илемлĕх тĕнчине те хĕсĕнсе кĕреççĕ. Вĕсене ят илнĕ сăвăçсем те, çамрăк авторсем те çыраççĕ. Чăваш поэзийĕнче çак туртăма вăйланма, паллах, вăл тапхăрти совет литературинче çавнашкал «юрăсем» йышлă пулни те, вĕсене тăван чĕлхемĕре куçарасси анлăн сарăлса кайни те витĕм кӳнех ĕнтĕ.

«Маршсемпе» «юрăсем» хушшинче сăнарлăхлисем те çук мар. Сăмахран, Ухсай Яккăвĕ хăйĕн «Маршне» ӳкерчĕклĕ йĕркеленĕ. Сăввăн тăватă çавринчен кашнийĕнчех куç умне хăйне евĕр сăн тухса тăрать. Пĕрремĕшĕнче пионерсен «галстукĕсем мăкăнь чечекĕн курăнаççĕ, пите хĕрлĕ тĕс çапса пит чеченĕн йăлтăраççĕ». Иккĕмĕшĕнче «кăчăка ларма пуçланă яштак хăва» илемĕпе илĕртет, «ун çине ылтăн хĕрлĕ ялав çакса янă». Вĕççĕмĕшĕнче ачасем маршпа «пынăçемĕн тӳнкĕл-тӳнкĕл барабан янăрать, çĕнĕ юрă урамра ян-ян каять». Тăваттăмĕшĕнче ачасен савăнăçне çут çанталăк та пĕрле пайлать: «ирĕ хĕвеллĕ, кунĕ янкăр уçă», кĕçех «вăрманта чăпар куккук авăтма пуçлĕ». Сăвва хорей виçипе, сакăр тата çичĕ сыпăклă йĕркесене пĕр-пĕрин хыççăн лартса çырнă. Эпитечĕсем те («хĕрлĕ тĕс», «яштак хăва», «ылтăн хĕрлĕ çăлтăр», «янкăр уçă кун», «чăпар куккук»), танлаштарăвĕ те («галстукĕсем мăкăнь чечекĕн»), сăпатлантарăвĕ те («галстуксем хĕрлĕ тĕс çапса пите») сăнарлă. Рифмисем оригиналлă: «чечекĕн – чеченĕн», «çĕнĕ çемĕ – пынăçемĕн», «уçă – пуçлĕ».

1937 çулта пичетре Сталин ячĕ нихăçанхинчен те вăйлăнрах янăрама тытăнать. «Пионер сассин» çак çулхи хулăмлатса кăларнă 35-мĕш номерне пĕтĕмпе тенĕ пекех чăваш сăвăçисем пĕрлешсе çырнă «Сталин

юлташа чăваш халăхĕнчен» поэма йышăнать. Унăн тĕп шухăшĕ тӳрех паллă:

Тавтапуç, мухтавлă Сталин!
Аслă чыс аттемĕре!
Сан çинчен юрланă юрă
Кайтăр ĕмĕр-ĕмĕре!

Çав çулах (52№) И. Григорьев хăйĕн сăввипе хаçата «Эпир – Сталин ачисем» пуплеве кĕртсе ярать:

Эпĕр – Сталин ачисем,
Савăнатпăр.
Телей панăшăн пире
Ăна саватпăр.

Çак çаврăм вăхăт иртнĕ май тăтăшрах та хыттăнрах илтĕнме пуçлать, мĕн çул пуç çĕре кĕричченех вăл вăл чăваш хаçат-журналĕнчен кайма пĕлмест.

30-мĕш çулсенче хаçатра пионер сăнарĕсемлĕ илемлĕ хайлавсем нумай пичетленеççĕ. Поэзи япалисем ытларах чĕнӳлĕхпе, йыхравлăхпа, агитаци туртăмĕпе уйрăлса тăраççĕ. Акă Н. Ваçанккан 1924 çулта çырнă, 1935 çулхи кăрлачăн 4-мĕшĕнчи «Пионер сассинче» çапăнса тухнă «Малалла пăхатпăр» сăввинчи йĕркесем:

Ян-янах кайтăр
Пионер юрри.
Тĕнчене çутаттăр
Советсен çутти.

Митта Ваçлейĕ те «Октябрь ачисем» сăввинче (1932, 23№) çамрăк туссене малалла талпăнмалли çинчен аса илтерет:

Утар, утар пĕр харăссăн,
Октябрь ачисем.

Хĕвел шевли пек харсăрлăх,
Çиççем, çиççем, çиççем...

«Октябрь ачисем» – поэтика енĕпе самаях сулăмлă сăвă. Унта самана таппи, яшлăх хĕрĕвĕ, шухăшсен вичкĕнлĕхĕ сисĕнсе тăрать. Ăна уçса пама çыравçă сăввăн килĕшӳллĕ виçи-кĕввине суйласа илнĕ. Тăватшар йĕркеллĕ сăвă çавринче пĕрремĕшпе виççĕмĕш йĕркесем – 8, иккĕмĕшпе тăваттăмĕш йĕркесем 6 сыпăклă. Ямб виçи, темиçе хут калакан сăмахсем («утар, утар», «çиççем, çиççем, çиççем»), тĕрлĕ пуплев пайĕнчен тăракан тулли рифмăсем («пĕр харăссăн – пек харсăрлăх», «кĕвелĕкĕ – хĕвелĕ пек», «ачисем – çиççем», «çилли урать – çапăçура»), хупă (т, р, ç, с) тата уçă (у, и, е, а) сасăсен вылявĕ – çаксем пурте пĕрле сăвва сулмаклăхпа янăравлăх кӳреççĕ, марш кĕвviллĕ тăваççĕ.

Парти пионерăн пур ачашăн тĕслĕх шутланмалла, унăн пур çĕрте те, пур енĕпе те малта пымалла, çĕнĕ пурнăça çирĕплетме хутшăнмалла тенине хаçат яланах асра тытать. Унта пичетленнĕ чылай сăвăсемпе калавсен геройĕсем – вĕренӳре те, ĕçре те, вăйă-кулăра та хастар ачасем.

Политика шевлиллĕ çак хайлавсенчен хăш-пĕринче поэтикăлла сăнарлă вырăнсем те пур. Тĕслĕхрен, А. Бачковпа (А. Алкапа – А. М.) М. Атай сăввисемех ӳкерчĕклĕ. Тĕп геройĕсем – ачасем Димăпа Антун. Вĕсем ял-йыша тыр-пула пухса кĕртме пулăшаççĕ, хирте пучах пуçтараççĕ, тăккаланчăксене тирпейлеççĕ. Вулакан вĕсене аслашшĕсемпе хутшăнура курать. Ваттисем мăнукĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе кăмăллă. Сăвăçсем пархатарлă усăллă ĕçе мухтаççĕ, аслă тата çамрăк ăрусен туслă çыхăнăвне сăнарласа кăтартаççĕ. Хайлавсем илĕртӳллĕ сюжетлă, çепĕç кĕвĕллĕ, сĕтеклĕ чĕлхеллĕ. М. Катай пейзажпа вырăнлă усă курать, çут çанталăкпа ĕç ӳкерчĕкĕсене тачă пĕрлĕхре кăтартать:

Карса илчĕ мал енне
Ирхи кăвак шуçăм.
Пĕт-пĕлтик! тет путене,
Сывлăш питĕ уçă.
Ак умра сап-сарă хир –
Вĕç-хĕрри çук унăн.
Ыйăх тарнă çакă ир
Пионер Антунăн.

Çыравçăсем, паллах, Димăпа Антунăн вырмари ăнăçăвĕ вĕсем чи малтан пионер пулнинчен, колхозри пĕрлешӳллĕ ĕçре хаваслăх тупнинчен килнĕ пек курасшăн пулĕ. Чăннипе вара ачасен хастарлăхĕн уççи урăххинче пулас. Вăл – вĕсем тăван халăхăн ырă енне – тĕлĕнмелле ĕçченлĕхĕпе тăрăшулăхне – ăша хывса ӳснинче, ăна ашшĕ-аслашшĕсенчен илсе малалла аталантарнинче.

Хаçат çак тахăрта пионерсене вĕсен аслă пиччĕшĕсемпе аппăшĕсем – коммунистсемпе комсомолецсем – тăвакан пур ĕçе анлăн явăçтарасшăн. Вĕсем класс тăшманĕсемпе кĕрешеççĕ (Усли Ваçлейĕн «Сирĕнтен пĕри» (1932, 5№), И. Ивникăн «Павлик Морозов» (1934, 42№) поэмисем, М. Няманĕн «Пăшал сасси» калавĕ (1933, 7№)). Пионерсем хресченсене колхоза кĕме ӳкĕтлесе çӳреççĕ (М. Няманĕн «Колхозалла» инсценировки (1931, 3№)), кулаксен ирсĕрлĕхне тăрă шыв çине кăлараççĕ (К. Львовăн «Хура мĕлке» (1933, 17№), Л. Агаковăн «Ултав» (1931, 3№) калавĕсем), колхоз пурлăхне çаратакансене тытса чарма хутшăнаççĕ (М. Пахчаçăн «Хуралра» калавĕ (1938, 16№)). Çивĕч куçлă, сисĕмлĕ те тавçăруллă çамрăк патриотсем çĕр-шыв чиккине пăсакансене йĕрлесе тытма хутшăнаççĕ. Сыхлăх теми уйрăмах вăрçă хăрушлăхĕ çывхарса пынă май, 30-40-мĕш çулсен чиккинче вăй илет. Сăвăсем те, калавсем те йышлă

тухаççĕ. Кунашкал хайлавсен пурин те тенĕ пекех тытăмĕнче схемăпа штамп, плакатпа лозунг, чĕнӳ-йыхрав стилĕ тĕпре тăрать. Авторĕсем сăвăсене обращенисемпе, междометисемпе тултарса лартаççĕ.

Çамрăк туссем, çав çулсенче Мускавпа Шупашкартан хистенипе, тасалăхпа сывă пурнăç йĕркине халăх хушшине сарассине хăйсен тĕп тивĕçĕсенчен пĕри тесе йышăнаççĕ (М. Столяровăн «Ăмăртура пӳртпе пӳрт» (1934, 16№), С. Шăпчăкăн «Ваççа» (1934, 27№) калавĕсем). Пионерсем совет системи илсе килнĕ çĕнĕ йăласемпе уявсен (май, октябрь, субботник) маттур саруçисем пулса тăраççĕ. Вĕсене халалланă сăвăсене хаçатра кашни номерте тенĕ пекех тĕл пулатăн. Политика витĕмĕпе шăнăрланнă çак хайлавсенче сăнарлă вырăнсем те тĕл пулаççĕ. Тĕслĕхрен, И. Ивник «Пирĕн май» сăвăра уявра ялавпа пыракан ачасен хаваслăхне çут çанталăк чĕрĕлĕвĕпе юнашар лартса çыпăçуллă ӳкернĕ. «Хирĕ ешĕл тумлă, вăрман ешĕл» – ачасем те «савăнса уява тухнă». «Хĕвелĕ ялкăшать, тĕнче ялкăшать» – çамрăк йыш та уявра ялавпа хавасланса утать. Çут çанталăкĕ те ырă та ăшă – çавăн пекех ачалăхĕ çутă та таса. Хорей виçи, ултшар та пилĕкшер сыпăксемлĕ йĕркесен черетленĕвĕ, сăнарлă çаврăмсем сăвва кĕвĕлĕхпе çĕкленӳлĕх парнелеççĕ.

Хаçат, çĕнĕ йăласемпе уявсене çине тăрсах пропагандăлать пулсан, авалтан пыракан тĕп йăласене, уйрăмах тĕнпе-чиркӳпе çыхăннисене, вара кĕретех сивлет (Алекинăн «Çĕнелнĕ Ишек» (1934, 3№), Мон Родăн «Маруç аппа» (1934, 12№) сăввисем).

Хаçатра пионерсен лагерьти пурнăçĕпе паллаштаракан хайлавсем вĕçĕ-хĕррисĕр тухса тăраççĕ. Жанр енчен ытларахăшĕ – сăвăсем. Очерксемпе тĕрленчĕксем те пур.

Хаçат пионерсемпе пĕрлех хĕрлĕ çăлтăрлă

октябреноксем çинчен те манса каймасть. Хайлавсенче ӳкерĕннĕ çак пĕчĕк туссем пур енĕпе те пултаруллă, маттур, ĕçчен, вăр-вар. Тепĕр чухне вĕсене авторĕсем хăйсен вăйне кура мар паттăр ĕçсем те тутарса илеççĕ. Тĕслĕхрен, А. Кăлканăн «Октябренок» сăввинчи (1935, 50№) иккĕмĕш класа çеç куçнă Павлов Якку рельсăсем тăрăх хăй тĕллĕн чупакан хуçасăр вакунсене асăрхать те станцие çитсе пĕлтерет, авари пулассине сирсе ярать.

Куртăмăр ĕнтĕ, çӳлте асăннă хайлавсене пĕтĕмĕшпе илсен идеологи сăррипе пĕветнĕ сивлек туртăмсем витерсе тăраççĕ. Çав вăхăтрах вĕсенчен хăшпĕрисенче сăнарлăхпа илемлĕхĕн илĕртӳллĕ сĕвемĕсем те курăнкаласа илеççĕ. Ухсай Яккăвĕ, И. Ивник, Уйăп Мишши, А. Кăлкан, Митта Васлейĕ, Илпек Микулайĕ, П. Хусанкай хайлавĕсенче вĕсем ытларах тĕл пулаççĕ.

Çапах та чăваш ача-пăча литературин 30-мĕш çулсенчи чăн-чăн сăн-сăпатне урăхларах хайлавсем палăртнă пек туйăнать. Кусем – ачасен чунне, кăмăлне, ĕмĕт-тĕллевне, шухăш-вылявне асра тытса, пурнăç тĕрĕслĕхне тĕпе хурса, вĕрентӳпе (педагогикăпа) илеме тачă çыхăнтарса çырнă хайлавсем. Вĕсем политикăпа та ытлашши туслах мар. Кунашкал хайлавсем литературăн чылай ĕречĕпе жанрĕнче тĕл пулаççĕ. Вĕсем пур сыпăкри ачасем валли те пур. Çапах та вăтам çулхисене халалланисем ытларах.

Чи пĕчĕккисем валли (кунта шкул çулне çитичченхисемпе кĕçĕн классенче вĕренекенсем кĕреççĕ) хаçат кĕске те ансат хайлавсем пичетлет. Çав жанрсем шутĕнче: сăвă, юрă, калав, юмах, ӳкерчĕклĕ сăвă, вăйă. Поэзире ку енĕпе Н. И. Полоруссов-Шелепи, И. Ивник, А. Кăлкан, М. Данилов-Чалтун ăнăçлă ĕçлеççĕ. Хайлавĕсем, тĕпрен илсен, ача-пăчапа унăн пурнăçĕ, çут çанталăкпа чĕр чунсем, вĕçен кайăксем çинчен çырнăскерсем. Вĕсем пĕчĕк туссене çуралнă çĕр-шывпа, тăван тавралăхпа, халăх йăли-йĕркипе

паллаштараççĕ. Хамăр тăрăха юратма, аслисене сума сума, тус-тантăшсене хисеплеме вĕрентеççĕ.

А. Кăлкан çак çулсенче чи пĕчĕккисене «Атьăр елкăна» (1939, 1№), «Пулас моряк» (1940, 34№), «Кушаксем» (1940, 34№) сăвăсем парнелет. «Пулас морякра» автор Петя ятлă ача çинчен каласа парать. Ăста алăлласкер, вăл карап ăсталать, кайран ăна «тинĕсе кăларать», инçет хĕвел тухăçне илсе çитерет, çĕр-шыв чиккинче «хурала тăрататать». Автор Петя ӳссе çитсен чăннипех те моряк пуласси пирки пĕлтерет. Илĕртӳллĕ сюжетлă пулнăран, пĕчĕккисен чунне туйса уçăмлă та яка чĕлхепе çырнăран сăвва кĕçĕн çулхисем хаваслăн йышăнаççĕ, хăвăртах пăхмасăр калама хăнăхаççĕ. Юнашарах 4 пĕчĕк ӳкерчĕк вырнаçтарнă. Çакă сăввăн ĕнентерӳлĕхĕпе витĕмлĕхне татах та ӳстерет. «Кушаксем» сăвăра поэт чăн чăваш пурнăçĕнчен илнĕ ĕç-пуçпа паллаштарать, кушакпа унăн çурисен киревсĕр ĕçне уçса парать. Сăрă кушак хăйĕн икĕ çурине «сирĕн валли шăши тытма каятăп» тесе улталаса тухса каять, анчах каялла шăшие мар, хăй пурăнакан килти хуçан сысна ашне вăрласа йăтса килет. Çурисем те амăшĕ çук чухне ашкăнаççĕ, сĕтел çине хăпарса тулли хăйма чӳлмекне йăвантарса яраççĕ. Кил хуçи кайран ватă кушакне те, çурисене те çурта сиен кӳнĕшĕн хулăпа çунтарать. Сăвăç шухăшĕ паллă: ачасем, эсир кушаксен йăнăшне ан тăвăр, хăвăр ĕçлесе илнĕ çăкăра çийĕр, кукăр çулпа ан çӳрĕр, таса та йĕркеллĕ пурăнăр. «Атьăр елкăна» сăвă та пĕчĕк чăваш вулаканĕсемшĕн шайлашуллă та майлашуллă. Ăна та А. Кăлкан асра юлмалла сăнарлă калăпланă. Малтанхи йĕркисем Н. Полоруссов-Шелепин фольклор туртăмĕллĕ «Упа» сăввин пуçламăшне аса илтереççĕ:

Упа çури – утаман,
Ик урапа утакан,

Кахалланса ан лар-ха,
Паян Çĕнĕ çул вĕт-ха.
Шур мулкачă, эсĕ те
Сивĕ тесе ан тăр тек,
Атьăр манпа елкăна
Ача садне хăнана...

Хитре ӳкерчĕк. Теми те, шухăшĕ те, сăнарĕсем те кĕçĕн çулхисемшĕн питĕ килĕшӳллĕ те ăнланмалла. Ача садне çӳрекен пепке хăйĕн пуканисемпе чĕрĕ çынсемпе пупленĕ пек калаçать, вĕсене хăйĕнпе пĕрле елкăна пыма чĕнет.

Пĕчĕк вулакансем М. Данилов-Чалтунăн «Хĕрлемес» (1940, 6№) тата «Хĕрлĕ автан» (1940, 33№) сăввисене те хапăл туса йышăнаççĕ. Вĕсенче автор килти чĕрчунсене йытăпа автана ача психологине туйса, ăста сăнарлать. Йытти – Хĕрлемес:

Хӳри унăн кукăр,
Куçĕсем чакăр,
Урисем тăваттă,
Хĕрлемес ятлă.

Çыравçă йыттăн портретне те, ĕçне те асра юлмалла ӳкерет. Вăл питĕ йăрă, ăслă, ĕçчен те тимлĕ, каçхине кил-çурта хураллать, кăнтăрла хăйĕн çамрăк хуçине, çичĕ çулхи Вовăна, çунашкана кӳлĕнсе ярăнтарса савăнтарать.

«Хĕрлĕ автана» вуланă чух И. Я. Яковлев букварĕнчи «Автан» калав аса килет. Ку та, лешĕ пекех, хӳхĕм те илемлĕ. Анчах вĕсем кописем мар. Чалтунăн автанĕ пачах та ăрасна сăнарлă:

Ури – вăрăм туналлă,
Пуçĕ – хĕрлĕ тураллă,
Хӳри – кукăр, илемлĕ,

Хĕлĕн-çăвĕн пĕр тĕслĕ.
Çĕрле, çурçĕр тĕлĕнче,
Хăйĕн кашти çийĕнче.
(Сасси унăн çип-çинçе)
Ян-ян каять пит инçе.

Килĕнче вăл тĕп хуçа,
Чыслă тытать пит-куçа,
– Ку-ку-ре-ку! авăтать,
Чăххисене йыхăрать.
Ют автанпа тĕл пулсан,
Хăтăлаймасть леш унран.
Анкартинче, урамра,
Кăшкăрса чупать: «Ур-ра!»

Поэтсем пĕчĕккисем валли пахалăхлă япаласем самаях хайланă пулсан, прозаиксемпе драматургсем вĕсене савăнтарсах каяйман-ха. И. Тукташăн «Атăпа калуш çĕрĕк çăпатана пытарни» юмахĕсĕр (1938, 57№) пуçне кунта ыттине асăнма йывăр.

«Пионер сассинче» вăтам çулхисем валли пичетленнĕ хайлавсен шучĕ, ытти сыпăксенчи ачасене халалланă текстсемпе танлаштарсан, пысăкрах пулни çинчен маларах каларăмăр ĕнтĕ. Çакăн сăлтавĕ – хаçат чи малтан çав тапхăрти ача-пăча валли тухса тăнинче, 5-7 классенче вĕренекенсене, пионерсене тĕп вырăна хунинче, пĕтĕм ĕçе вĕсем тавра тĕллевлĕ туса пынинче.

Чи пĕчĕккисем валли пысăках мар сăвăллă япаласем ытларах пичетленчĕç пулсан, аслăраххисем вара сăвăсемсĕр пуçне поэзин анлăрах формине те (поэмăна), проза хайлавĕсене те тупса вулама май илеççĕ. Сăвă жанрĕнче Ухсай Яккăвĕ, И. Ивник, Уйăп Мишши, П. Хусанкай, Н. Янкас, М. Ястран, В. Бараев, А. Катай, В. Васькин ăнăçлă ĕçлеççĕ. Темисем – ачасен кулленхи ĕçĕ-хĕлĕ, вĕренĕвĕ, вăййи-кулли, интересĕ,

çутçанталăкпа тăван тавралăх. Çамрăк вулакансем И. Ивникăн (1934, 29№), Уйăп Мишшин (1938, 14№) «Автобуспа» ятлă сăввисене хапăл туса йышăнаççĕ. Уйăпăн çак хайлавĕ çичĕ çул маларахах (1931) «Хатĕр пул» журналта çапăнса тухнăччĕ. Халĕ вăл, Федьяров композитор тăрăшнипе, юрра çаврăнса вулакансем патне тепĕр хут таврăнать.

Ивник сăввинче те, Уйăпăнни пекех, çĕнĕ вăхăтăн хĕрӳллĕ таппи, пурнăç хавасĕ, хамăр çĕр-шыва, тĕп хуламăра юратнийĕ. Авторĕсем кĕвви-çеммине те автобус чуппи евĕр туса, сăвăсен шалти хавхалануллă шухăшĕпе килĕшӳллĕн йĕркеленĕ. Çапах та вĕсем чат пĕрешкел мар, йăлтах пĕр-пĕрне ылмаштармаççĕ. Ивник, сăмахран, хăйĕн ĕçтешĕпе танлаштарсан, яланхи йăлипе, хальхинче те сăввинчи сюжета çут çанталăкри хӳхĕм сăнсемпе çураçуллăн майлаштарнă:

Ирхи хĕвел ăшăтать,  
Ун халь ылтăн çивĕт.  
Вĕçтеретĕп колхоза, –  
Автобусĕ çирĕп.  
Эх, автобус ыткăнать,  
Юхса юлчĕ çил çеç.  
Вун минутра Апаша,  
Курăр, илсе килчĕ.

Поэтсем çулталăкăн тĕрлĕ вăхăтне ачасен канăвĕпе-киленĕвĕпе сыпăнтарса, уçăмлăн ӳкерсе параççĕ (И. Ивникăн «Коньки çине» (1934, 56№), «Ылтăн кĕркунне» (1935, 42№), А. Катайăн «Çырлара» (1935, 30№), В. Васькинăн «Йĕлтĕрпе» (1938, 6№), Уйăп Мишшин «Çуркунне çитрĕ» (1938, 16№) сăввисем). Ивникăн «Коньки çине» сăввинчи йĕркесем акă еплерех хӳхĕм янăраççĕ:

Çырма тăрăх ян та ян

Кайрĕ чĕвĕл сасă,
Ярăнатпăр вĕт паян
Уроксем тухсассăн.
Çамрăк пăр халь – кĕленче,
Çамрăк пăр халь – кантăк.
Ярăнар-ха киленсе
Тимсĕлсе тек ан тăр.
Ярăнатпăр йăр та яр,
Ярăнма пит çăмăл,
Ярăнар-ха, ярăнар –
Хаваслантăр кăмăл.

Ачасен кулленхи хаваслă ваййи... Нимĕнле политикăпа идеологи шăрши те çук кунта. Пурте пурнăçри пек тĕрĕслĕхлĕ, чĕрĕ, илĕртӳллĕ: хĕл илемĕ, чун юратнă çырма, кĕленче пек çамрăк пăр, ун çинче уроксем хыççăн йăр та яр ыткăнакан вĕри юнлă маттурсем. Пăрĕ те çамрăк, ярăнаканĕсем те çамрăк. Сăвă ритмики сюжетпа çураçуллă, ачасене ярăннă май кĕвве çаврăнса хавхалантарса тăнăн туйăнать. Пилĕк çавраран кашнийĕнчех 1-мĕшпе 3-мĕш йĕркесем çичшер сыпăклă, тăватшар пусăмлă, 2-мĕшпе 4-мĕш йĕркесем ултшар сыпăклă тата виçшер пусăмлă. Хорей виçи, оригиналлă рифмăсем (пур çав – хурçă, ян та ян – вĕт паян, чĕвĕл сасă – тухсассăн, кĕленче – киленсе, çăмăл – кăмăл, кирлĕ – вирлĕ) сăвва сулăмлă та янăравлă тăваççĕ. Авторăн сăвă вĕçĕнчи тĕп шухăша уçса паракан пĕтĕмлетĕвĕ тĕрĕс те вырăнлă:

Вĕренме те ĕçлеме
Пире сывлăх кирлĕ.
Çавăнпа сас çĕкленет
Çырма тăрăх вирлĕн.

А. Катайăн çӳлерех асăннă сăввинче эпир вăрманта çырла пуçтаракан хаваслă ачасене куратпăр. Кунта та,

Ивникăн маларах тишкернĕ хайлавĕнчи пекех, ачалăхра пулса иртнине çутçанталăкри сăнсемпе тачă çыхăнуллă туса ÿкернĕ. Ритмики те сюжетпа шайлашуллă.

Вăтам çулхисем валли çырнă, пархатарлă ĕçе мухтакан ăнăçлăрах сăвăсенчен М. Ястранăн «Тимлĕ Тимуш» (1939, 20№) хайлавне палăртмалла. Тĕп геройĕ – Тимуш ятлă ача. Унăн ÿт-пĕвĕнче ашшĕ-амăшĕн ĕçченлĕхĕ, хамăр халăхăн тĕлĕнмелле хастарлăхĕ тапса тăнине тÿрех туятăн. Вăл ир-ирех ĕçе пуçăнать. Тимуш колхозăн лаша витине хăй суйласа илнĕ тихана пăхмаваскать. Ăна вăл Хĕрлĕ Çар валли çитĕнтерсе парасшăн.

Кĕçĕн тата вăтам сыпăкрисем валли пысăкрах калăплă поэзи хайлавĕсем Ухсай Яккăвĕпе П. Хусанкай çыраççĕ. «Пионер сассин» 1935 çулхи 9-мĕш номерĕнче Ухсайăн «Пуканесен бригади» поэми пичетленет. Ку вăл – хаçатра çак жанрпа туллин тухнă пĕрремĕш хайлав (унран маларах, 1932 çулта, Василий Тоймакпа Усли Васлейĕ çеç поэмăсен пĕрер сыпăкне кăларнăччĕ).

Хаçатăн 1936 çулхи 20-мĕш номерĕнче П. Хусанкайăн «Феликс – чикĕ пăсавçă» хайлавĕ çапăнса тухать. Текст калăпăшĕ (вăл 5 пайран тăрать), сюжет анлăшĕ, геройсен йышĕ ăна жанр енĕпе пĕчĕк поэма еннелле туртаççĕ. Поэт çамрăк вулакансене пилĕк çулхи Феликс ятлă ачапа пулса иртнĕ мыскараллă ĕçпе паллаштарать. Унăн ашшĕ çĕр-шыв чиккинче хĕсметре тăрать. Вăл – застава пуçлăхĕ. Ача та ашшĕ-амăшĕпе пĕрле унтах пурăнать, выляма, уçăлса çÿреме туха-туха кĕрет. Пĕррехинче вăл, пурне те курма-пĕлме юратаканскер, икĕ çĕр-шыва çыхăнтаракан кĕпер урлă каçса хăй сисмесĕрех чикĕ леш енне, Польшăна лекет. Ют çĕр-шывăн «сыхă та тимлĕ» хуралçисем ачана тăшман вырăнне хурса тытса каяççĕ, «чикке пăснă» тесе шăв-шав çĕклеççĕ. Хирĕçтăрăва татса пама ашшĕн – застава ертÿçин – хутшăнма тивет. Хайлав çапла вĕçленет:

Тӗрӗслерӗç, тӗпчерӗç те пуçлӑх
Йатрӗ хӑй ывӑлне: «Пултаран!»
Хуп-хура хурлӑхан пек куçлӑ
Паттӑр таврӑнчӗ вӑрӑм çултан.
«Ак сана çӗнӗ чикӗ пӑсавçӑ», –
Терӗ ашшӗ кулса амӑшне.

Поэма çамрӑк вулакансене çӗр-шыв чиккинче тӑраканасен яланах асӑрханулла та çивӗч куçлӑ пулмалли, йывӑрлӑх-инкек килсе тухсан çухалса каймалла марри, патриотлӑх туйӑмӗпе пурӑнмалли çинчен астутарать. Хайлава сӑвӑç сӑнарлӑхӑн тӗрлӗ мелӗсемпе тата хатӗрӗсемпе туллин усӑ курса çырнӑ. Тӗп геройӑн портретне («хура хурлӑхан пек куçлӑ», «кулӑшла, селӗпле калаçать»), хӑтланӑвӗсене ӗнентерӳллӗ сӑнарланӑ. Диалогсем витӗмлӗ. Поэмӑн ритмики хӑйне евӗрлӗ. Анапест сӑвӑ виçипе çырнӑ çаврасене 10 тата 9 сыпӑклӑ йӗркесем черетлесе пыраççӗ. Тӗрлӗ пуплев пайӗсенчен калӑпланӑ рифмӑсем текста янӑравлӑ тума пулӑшаççӗ (пуçлӑх – куçлӑ, ача – калаçать, тинкерӗн – Совет Çарӗн, халӗ çӑра – Польшӑра, палларӗ – илсе кайрӗ, тап-таса – çавӑтса).

Вӑтам çулсенчи ачасен «Пионер сассинче» пичетленекен юратнӑ прозаикӗсем шутне К. Чулкаçпа («Лапшу Çтаппанӗн калавӗсем» – 1936, 21№) М. Данилов-Чалтуна («Упа сӗчӗ» – 1936, 23–24№) кӗртмелле. Тӗсӗпе вӗсен хайлавӗсем ытларах приключенипе детектив тата фантастика туртӑмӗллӗ.

М. Данилов-Чалтун «Упа сӗчӗ» калава (1936, 23-24№) повествовани мелӗпе çырнӑ. Унта сӑнарсене витӗмлӗ тӑвассине мар, сюжета илӗртӳллӗ йӗркелессине мала хунӑ. Автор хӑй ятӗнчен каласа парать. Икӗ хӗрарӑм 6 уйӑхри ачана илсе тайгана çырла татма каяççӗ иккен. Кӗтмен çӗртен сиксе тухнӑ упана курсан

пӗчӗкскере пӑрахсах хӑраса тараççӗ. Упа, пепкене сунарçӑсем тытса кайнӑ икӗ çуринчен пӗри вырӑнне хурса, хӑйӗн кӑкӑрне ӗмӗртсе ӳстерет. Çулсем иртсен упа каллех пӑшаллӑ çынсен тыткӑнне лекет. Сунарçӑсем халӗ ачана хӑйсем патне илеççӗ. Калава юмахлӑхпа чӑнлӑха çыхӑнуллӑ туса калӑпланӑ. Хайлавӑн хронотопех халап сӗмӗллӗ, туптаруллӑ, шутлаттаруллӑ. Прозаик фольклорти пек ку ӗç питӗ авал пулса иртнӗ тесе пуçласа ямасть. Вӑхӑт инçӗшне çамрӑк вулаканӑн хӑйӗн шутласа пӗлмелле: «Ман асанне 99 çула çитсе вилчӗ. Вӑл вилни кӑçал 50 çул тулчӗ. Асаннен асламӑшӗ 101 çула çитсе вилнӗ. Асанне ун чух вуннӑра пулнӑ. Çав асаннен асламӑшӗ каласа хӑварнӑ халапа эпӗ сире каласа парасшӑн». Вулакан авторӑн асламӑшӗн çак халапа каласа кӑтартнӑ асламӑшӗ 240 çул каялла çуралнине шутласа пӗлме пултарать. Тӗп ӗç пулса иртнӗ вырӑн та тем пекех аслӑ: тайга. Çаксем пурте ачасемшӗн илӗртӳллӗ, кӑсӑклантаруллӑ, хавхалантаруллӑ.

М. Данилов-Чалтунӑн «Куян пусси» калавӗ те (1937, 54№) сюжет хиврелӗхӗпе çамрӑк вулакана тӳрех тыткӑна илет. Фабула канвине кунта та, малтанхи калаври пекех, аслӑ тата çамрӑк ӑрусен хутшӑнӑвӗн никӗсӗ çинче йӗркеленӗ. Пӗрремӗш хайлавра автор вулакана çамрӑк геройӑн асламӑшӗ хӑварнӑ асаилӳпе паллаштарнӑччӗ пулсан, иккӗмӗшӗнче аслашшӗ вӗрентнипе ача тискер кайӑксем тытмалли меслете алла илни çинчен каласа парать. «Юр тарӑн вырӑна çӗре çитиччченех тӑвӑр çеç, чӑнкӑ шӑтӑк чаватӑн та, çине урлӑ-пирлӗ хулӑсем хурса, кӑшт улӑмпа витетӗн. Шӑтӑкӑн вӑта çӗрне пӗр пайӑрка çапман сӗлӗ кӗлти лартатӑн. Куян, çав сӗлле çиме тесе пырать те, шӑтӑка анать те каять». Кунта та ун умӗнхи калаври сӑнлӑх меслечӗсемех: повествовани, геройсен калаçӑвӗ, шухӑш вӗçевӗ, фантази, тӗлӗнтерӳллӗ ӗçсем. Хайлав стилӗнче, тытӑмӗнче фольклор йӗрӗ сисӗнет: аслашшӗ мӑнукне

халапри евĕр каласа пани, калав тытăмĕ юмахăнне çывăх тăни (пуçламăшĕпе вĕçĕ, варринче тĕп ĕçсем виçĕ хутчен пулни). Сунарçăн тĕлĕнтерӳллĕ калаçăвне, хăтланăвĕсене çырса кăтартнинче К. Чулкаçăн çырав меслечĕн паллисене асăрхама пулать: «Эпĕ ун-кун шухăшласа тăмарăм, вăрăм хӳреллĕ кайăка пуçĕнчен кĕреçепе шак çапрăм. Хĕрлĕ кайăк месерле çаврăнса ӳкрĕ... Куянпа хĕрлĕ кайăка аран-аран киле илсе çитертĕм. «Ара, эсĕ тилĕ те тытман-и, ачам», – тирекен çăпатине пăрахса сиксе тăчĕ асатте... Çавăнтан вара эпĕ асатте пекех сунарçă пулса тăтăм».

Çыравçăн «Эпĕр упа тытни» калавĕнче те (1937, 56№) фантастикăпа приключени сĕмĕ пур. Приключенилĕх «Климккă» хайлавра та (1935, 48№) палăрать. Унта прозаик сакăр çулхи маттур арçын ачан шухăш-кăмăлĕпе, хăтланăвĕ-айкашăвĕпе паллаштарать.

Аслă классене çӳрекенсем валли хаçат тĕпрен илсен публицистикăпа проза хайлавĕсем тата куçарусем пичетлет. М. Хурнайăн Хрисан Степанов пионер паттăрлăхĕпе паллаштаракан «1356-мĕш ĕç» суд очеркне çитĕнсе çитĕннисем кăмăлласа вулаççĕ.

П. Сенинăн «Çамрăк большевиксем» (1933, 24№), К. Тимĕрккен «Çеркей вĕренме кĕчĕ» (1934, 41№), Х. Лисинăн «Хастарлă çамрăксем» (1935, 9№) очеркĕсен геройĕсем – пултаруллă та маттур яшсемпе хĕрсем. Тĕслĕхрен, К. Тимĕрккен персонажĕ Серкей – çирĕп кăмăллă та мал ĕмĕтлĕ ача, умма тĕрĕс тĕллев лартса ун патне иккĕленмесĕр хăюллăн утать. Малтан ялти шкулта тăрăшса вĕренет, кайран колхозра хастарлăх кăтартать, çамрăксенчен уйрăм бригада йĕркелет. Юлашкинчен пăрахутпа Шупашкара çитет, музыка техникумне вĕренме кĕрет. Ачан характерĕ çирĕпленсе, тавракурăмĕ ӳссе пынине автор логикăлла аталанура ĕненмелле кăтартнă.

Кунашкал пурнăçра хăйсен çулне шыракан аптăраман йĕкĕтсемпе пикесене эпир М. Данилов-Чалтунăн «Вĕрентекен» (1935, 33-36№), Митта Петĕрĕн «Телейлĕ çамрăк» (1937, 10№) калавĕсенче те тĕл пулатпăр. Вĕсенчен пĕрремĕшĕ – жанрĕпе очерк-калав. Унта совет саманинчи тăлăх хĕрачан телейлĕ шăпине çырса кăтартнă. Пĕччен тăрса юлнă çичĕ çулхи ача, Мускаври ача çурчĕ, Шупашкар рабфакĕ, педагогика техникумĕ, Уравăш шкулĕнчи учитель ĕçĕ – çакăн пек Марье Орлован кун-çул сукмакĕсем. Пурнăçри тĕп çул-йĕрпе пынă чух ăна общество ĕçĕ-хĕлĕ вăй парса тăрать: пионер юхăмне хастар хутшăннă вăл, комсомолра та тăнă, халĕ – коммунист. Çапла Марье çул шучĕсем хутшăнса пынă май ăс-тăнпа ӳт-пӳ тĕлĕшĕнчен пиçĕхсе тĕрекленет, хăй тавра пулса иртекен ĕçсене, вĕсен сăлтавне ăнланма пуçлать, хăй валли тĕрĕс çул суйласа илет. Прозаик хальхинче те сюжета кăсăклă та илĕртӳллĕ тăвассине мала лартать. Фабулăна интереслĕ йĕркелес тĕллевпе повествованипе пĕрлех ытти меслетсене те ĕçе кĕртет. Геройсен хутшăнăвĕсене, калаçăвне çырса кăтартасси çине тимлĕ пăхать. Сюжета чуна хускатакан психологи ӳкерчĕкĕпе (çиччĕри ача амăшĕн виллипе ăна чĕрĕ пек туйса калаçни) пуçласа ярать. Илемлĕ пайрăмпа (виле пит-куçĕ çинче чупса çӳрекен шăна) усă курни те хайлавăн витĕмлĕхне ӳстерет.

Чăваш писателĕсем çак тапхăрта аслă классенче вĕренекенсем валли сахалтарах çыраççĕ-ха. Çавăнпа та редакци çак пушăлăха тĕнче тата совет классикисенчен илнĕ куçарусемпе саплаштарма тăрăшать. Хаçатра кун çути курнă çакнашкал поэзипе проза хайлавĕсем хушшинче: Р. Ролланăн «Жан-Кристоф», В. Гюгон «Отверженные», М. Горькин «Амăшĕ», Н. Островскин «Хурçă мĕнле хĕрнĕ» романĕсен сыпăкĕсем, А. Пушкинăн «Пăхăр юланут», «Борис Годунов»,

«Евгений Онегин» поэмисем, М. Салтыков-Щедринăн «Тискер помещик», А. Гайдарăн «4-мĕш блиндаж», А. Голубеван «Уржум ачи» хайлавĕсем.

«Пионер сасси» çамрăк çыравçăсене пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе нумай вăй хурать. Уйрăмах 1934 çултан тытăнса. Ку ĕçе куллен тата тĕрлĕ меслетпе туса пырать хаçат редакцийĕ. Пĕр е темиçе, е йышлă ача çырнă сăвăсене уйрăмшарăн пăхса тухса тишкерӳсем кăлараççĕ. Хушăран çамрăк сăвăçсен хайлавĕсене нимĕн улăштармасăрах пичетлеççĕ те вĕçĕнче редакци шухăш-кăмăлне вырнаçтараççĕ. Тепĕр чухне пĕр-пĕр шкулти, тĕслĕхрен, Çĕрпӳ районĕнчи Йĕкĕрварти, литература кружокĕн членĕсен хайлавĕсене хаçат комментарийĕпе пĕрле кун çути кăтартаççĕ. Вĕрентӳллĕ-сĕнӳллĕ статьясем пĕрмаях тухса тăраççĕ. Çамрăк çыравçăсемпе уйрăмах Г. Краснов-Кĕçĕнни питĕ тимлĕ ĕçлет. Çавăн пекех çак пархатарлă ĕçе Уйăп Мишши, Н. Дедушкин, Х. Çитта, В. Деферан (В. Хурамал – А.М.) хастар хутшăнаççĕ. Вĕсем ачасен чи лайăх сăвви-калавне суйласа илсе «Литература страници», «Литература кĕтесси», «Пирĕн вулакансен творчестви», «Ачасен сăввисем», «Çамрăксен сăввисем», «Октябреноксен страници» ярăмсенче вырăн параççĕ. 1940 çулта редакци «Пионер сасси» тухма пуçланăранпа 10 çул çитнĕ ятпа ачасем çырнă хайлавсен конкурсне ирттерме йышăнать. Пыра-киле чи талантлă çамрăк авторсем, хаçатри ăсталăх сунталĕ çинче туптанса, профессиллĕ писательсем таран çĕкленеççĕ. Çавсем хушшинче: Василий Васькин, Ваçлей Давыдов-Анатри, Петр Тихонов (Ялкир), Геннадий Пласкин, Иван Ара т. ыт. те.

Хаçатра тăтăшах тăван халăхăн ятлă-сумлă çыравçисен К. Ивановăн, Çеçпĕл Мишшин, Н. Полоруссов-Шелепин, Н. Ваçанккан тата ыттисен сăввисем пичетленеççĕ. Çавăн пекех тĕнче тата совет

ача-пăча классикĕсен Г. Гейнен, Т. Шевченкон, Ш. Руставелин, Джамбулăн, Т. Сатылгановăн, Л. Толстойăн, Н. Некрасовăн, В. Короленкон, Л. Кассилĕн, С. Маршакăн, В. Дуровăн, С. Михалковăн тата ыттисен чăвашла куçарнă хайлавĕсем çапăнса пыраççĕ. Чăваш çыравçисен ачасене халалланă кĕнекисене хаклакан рецензисем те тухсах тăраççĕ. Вĕсен авторĕсем: А. Бачков (А. Алка), К. Тимĕркке, Мишкай, М. Еник. Çаксем вĕсем пурте мĕнпур вулакансемпе пĕрлех çамрăк çыравçăсене те пысăк усă кӳнĕ, вĕсемшĕн хăйне евĕрлĕ ăсталăха ӳстермелли шкул пулса тăнă.

Пĕтĕмлетсе çавна каламалла. 30-мĕш çулсенче «Пионер сасси» хаçата та, «Хатĕр пул» журнал пекех, партипе совет идеологийĕ арман чулĕ евĕр хытă пусса тăрать. Материалсенчен чылайăшĕ вăл хистенине, социализмла реализм хушнине тивĕçтерес тесе çырнăскерсем. Вĕсенче хăй тĕнчинче хăй еккипе пурăнакан ача вырăнне политика сĕрĕмĕпе минренĕ манекен евĕрлĕ шаблонлă-схемăллă ача мала тухса тăрать. Çак çамрăк çыннăн турă пек «ырă ашшĕ» пур. Вăл – çĕр-шыв пуçлăхĕ Сталин.

Çав вăхăтрах кунашкал политика туртăмĕллĕ сăвă-калавпа юнашарах хаçатра мал ĕмĕтлĕ çыравçăсен чăн пурнăç ӳкерчĕкĕсемлĕ, чăн-чăн ача сăнарĕсемлĕ пахалăхлă хайлавĕсем те тухаççĕ. Чи кирли, чи пĕлтерĕшли çакă: «Пионер сасси» пур сыпăкри ачасем валли те хайлавсем кăларса пынă. Хаçат, хăйĕн спецификине кура, вăтам çулхисем валли ытларах пичетленĕ, аслăраххисемпе кĕçĕннисем валли вара – сахалтарах. Жанрсен шучĕ сарăлнă, сăвă-калавпа юмахсем çумне çĕннисем хутшăннă: ӳкерчĕклĕ сăвă, юрă, поэма, тĕрленчĕк, калав-очерк, суд очеркĕ, повесть сыпăкĕ. Проза ачасемшĕн кирлĕ пахалăх туяннă: приключенипе фантастика тата детектив енне сулăннă,

психологилĕх сĕмĕ илнĕ. Хайлавсен темисем нумайланнă: чăн пурнăçри сăнсем, хăй саманин ÿкерчĕкĕсем, тĕрлĕ ăрусен çыхăнăвĕ, ачасен ĕçĕ-хĕлĕ, вĕренĕвĕ, вăййи-кулли, шухăшĕ-ĕмĕчĕ, çут çанталăк, тăван тавралăх т. ыт. те. Хаçат, хăйĕн ĕçтешĕ-тантăшĕ «Хатĕр пул» журналпа танлаштарсан, çамрăк çыравçăсене ÿстерес ĕçе туллинрех те тĕплĕнрех туса пынă. Вăл тĕнче тата совет ача-пăча классикисен чи паха тĕслĕхĕсене чăвашсен çамрăк ăрăвĕ патне çитерес тĕлĕшпе пысăк тимлĕх кăтартнă. Çапла вара, «Пионер сасси» 30-мĕш çулсенче тăван халăхăн ача-пăча литературине çĕнĕ сиплĕ варкăш вĕрсе кĕртнĕ, ăна малалла татăклă утăм тума пулăшнă. Хаçат витĕм кÿнипе çак çулсенче профессиллĕ ача-пăча сăмахлăхĕ хайлавсен шучĕпе те, жанрсен тĕрлĕлĕхĕпе те, илемлĕх пахалăхĕпе те ун умĕнхи тапхăртинчен чылай çÿлерех çĕкленнĕ.

### *Ыйтусемпе ĕçсем*

1. «Хатĕр пул» журналпа «Пионер сасси» хаçатăн чăваш ача-пăча литератури аталанăвĕнчи пĕлтерĕшне уçса парăр.
2. «Хатĕр пул» журналти илемлĕх тĕнчин палăруллă енĕсене каласа кăтартăр.
3. «Пионер сасси» хаçатăн çамрăк çыравçăсене хатĕрлес рольне еплерех куратăр?
4. Хаçатпа журнал чăваш ача-пăча литературине мĕнле çĕнĕ жанрсемпе пуянлатнă?

### *Усă курмалли литература*


Алексеева, М. Советские детские журналы 20-х годов / М. Алексеева ; под ред. проф. А. В. Западова. – М., 1982.

Арзамасцева, И. Н. Детская литература : учебник. – 3-е издание, переработанное и дополненное / И. Н. Арзамасцева, С. А. Николаева. – М. : Изд. центр «Академия», 2005. – С. 266–267; 289–292.

Мефодьев, А. И. Ача-пăча тĕнчи / А.И. Мефодьев // Тăван Атăл. – 2008. – 11№.

Мефодьев, А. И. «Хатĕр пул»: малтанхи тапхăрти илемлĕх тĕнчи / А. И. Мефодьев // Вестник ЧГПУ им. И. Я. Яковлева. – 2009. – №1(61). – С. 139–152.

Данилов, А. П. Чăваш публицистики : вĕренӳ пособийĕ / А. П. Данилов. – Шупашкар, 1991.

Петров, К. К. История чувашской журналистики / К. К. Петров. – Чебоксары, 1987.

# ХЫÇÇĂМАХ

20–30-мĕш çулсенчи чăваш ача-пăча литературин аталанăвне пĕтĕмлетсе çакнашкал чăнлăхлă пулăмсемпе сăлтавсене палăртма пулать. Унăн утăмĕсем пурнăçпа, хăй саманипе тачă çыхăннă. Вăл, пĕтĕмĕшле чăваш литературин тата çĕр-шыври ача-пăча литературин уйрăлми пайĕ шутланнă май, вĕсен ырă енĕсене те, кăлтăкĕсене те хытă туйса тăнă. Ĕмĕр юххипе вăхăт таппи ăна хăйĕн витĕмне кӳнĕ. Партипе патшалăх, культурăна ертсе пыраssине пĕтĕмпех хăйсен аллине ярса илнĕскерсем, ачасен литературине те «класлăх идейипе» тата «социализмла реализм меслечĕпе» çирĕп çăварлăхланă, ăна хăйсене мĕнле кирлĕ çавăн пек авкаланă, пăркаланă. Ача-пăча литературин Сталин кульчĕ пусса тăнине те тӳссе ирттерме тивнĕ. Чылай хайлавне схемăлăх, шаблонлăх, декларативлăх, риторика хĕссе тăнă. Вĕсенче çыравçăсем саманари çивĕч конфликтсене хускатайман, психологилле тарăн тишкерӳсем тăвайман. Çак тапхăрта шкул çулне çитичченхисем валли хайлавсем питĕ сайра тухаççĕ. Ача-пăча пьесисем те сахал-ха.

Çав вăхăтрах, идеологи тем пек пусмăрласа тăнă лару-тăрура та, ачасемпе çамрăксен литературинче ырă туртăмсем пулман мар. Пĕрремĕшĕнчен, политика шухăшĕллĕ нумай хайлавсемех сăнарлăх шайĕ пысăк пулнипе уйрăлса тăнă. Иккĕмĕшĕнчен, çав вăхăтрах политика тулашĕнче тăракан, ачасен ачалăхне çутатакан пахалăхлă япаласем те тухса пынă. Вĕсен авторĕсемшĕн тăван халăхăн пултарулăхĕпе вырăс тата тĕнче классикисем поэтика ăсталăхĕн çăл куçĕсем пулса тăнă. Виççĕмĕшĕнчен, литература юмах кĕнекисемпе, ют чĕлхесенчен куçарнă йышлă паха хайлавсемпе пуянланнă.

30-мĕш çулсенче ачасем валли çырас ĕçре революцичченех палăрнă Н. Полоруссов-Шелепипе,

Н. Шупуççыннипе, С. Элкерпе, Трубина Мархвипе тата 20-мĕш çулсенче ят илнĕ Хумма Çеменĕпе, М. Данилов-Чалтунпа пĕрле çамрăк талантсем те йышлăн хутшăнаççĕ. Çавсем хушшинче: И. Ивник, Н. Янкас, Ухсай Яккăвĕ, Мĕтри Васлейĕ, Уйăп Мишши, П. Хусанкай, Н. Пиктемир сăвăçсем, Л. Агаков, А. Талвир, Иван Мучи, К. Чулкаç, Е. Еллиев, С. Ялавин, С. Шăпчăк прозаиксем, В. Алакĕр, Хĕв. Çитта, М. Нямань драматургсем тата ыт. те. Писательсем, оригиналлă хайлавсем çырнипе пĕрлех, тăлмач тивĕçне те хастарлăн пурнăçлаççĕ. Вĕсем тимленипе чăваш ачисем вырăс, совет тата тĕнче ача-пăча классикĕсен 100 кĕнекине тăван чĕлхепе вулама май илеççĕ. Çав литературăн пĕтĕмĕшле тиражĕ 540100 экземпляра çитет. Куçарнă хайлавсем çамрăк вулакансене кăмăл-сипет тата культурăпа эстетика тĕлĕшĕнчен ӳсме ырă витĕм кӳреççĕ. Çавăн пекех вĕсем чăваш ача-пăча литературине илемлĕх формисем тĕлĕшĕнчен пуянлатма пулăшаççĕ, унăн жанрпа тематика картине анлăлатма май параççĕ.

20-30-мĕш çулсенчи чăваш ача-пăча литературин кунçулĕнче вырăс тата совет классикĕсен, уйрăмах А. М. Горькин тӳпи пысăк. Горькин нумай енлĕ пултарулăхĕ, вăл чăваш писателĕсемпе тытнă çыхăнусем, литература пурнăçĕн тĕрлĕ-тĕрлĕ ыйтăвĕсемпе панă сĕнӳсемпе канашсем наци ача-пăча çыравçисемшĕн пысăк пулăшу пулнă. Унăн автобиографиллĕ повеçĕсем чăваш прозаикĕсемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăнă. Вĕсем пирĕн çыравçăсемшĕн ăсталăха туптамалли, уйрăм çын шăпипе кунçулне обществăпа истори пулăмĕсемпе мĕнле çыхăнтармаллине вĕренмелли хăйне евĕрлĕ паха шкул шутланнă. Çакна Хумма Çеменĕн, С. Элкерĕн, Трубина Мархвин тата ытти наци писателĕсен калавĕсемпе повеçĕсен автобиографилĕхĕнче, документлăхĕнче уççăн туйса илетĕн.

В. Я. Канюков хăйĕн ăслăлăх ĕçĕнче 30-мĕш çулсенчи ача-пăча литературинче «уйрăмах поэзи вăйлă аталаннине»[1] палăртать. Çапах та çак тапхăрта проза кĕнекисем, сăвăласа çырнисемпе танлаштарсан, икĕ хут ытларах тухни (26 кĕнеке), вĕсен пахалăхĕ пысăкланни литературăн çак ĕретне поэзирен маларах лартма хистет. 30-мĕш çулсенче, уйрăмах унăн иккĕмĕш çурринче, ача-пăча прозинче тематикăпа жанр тата стиль формисен енĕпе палăруллă улшăнусем пулса иртеççĕ. Çыравçăсене пултарулăхра ăнăçусем тума тăван литературăпа фольклорăн наци традицийĕсем çине таянса ĕçлени нумай пулăшать. Вĕсем халĕ 20-мĕш çулсенчи прозăри дидактикăлăхпа иллюстрацилĕхрен пĕчĕккĕн хăтăлса пыраççĕ. Прозаиксен ăсталăхĕ ӳсет. Вĕсем хайлава илемлĕхпе витĕмлĕх кӳмелли майсемпе тата хатĕрсемпе туллинрех усă курма тытăнаççĕ.

Очерк жанрĕ малалла çул хывать (Уйăп Мишшин «Машинăсем кĕрленĕ çĕрте», «Ачасем патĕнче хăнара», С. Элкерĕн «Унтри», Хумма Çеменĕн «Çĕтĕк сăкман» хайлавĕсем). Çĕнĕ повеçсем çураласçĕ (М. Данилов-Чалтунăн «Малинкин», Л. Агаковăн «Пĕрре çуркунне», Трубина Мархвин «Мучар» повеçĕсем). Прозăра вăрçă çинчен çырасси мала тухса тăрать (М. Данилов-Чалтун, Митта Петĕрĕ, С. Ялавин), приключенипе детектив туртăмĕ вăйланать (М. Данилов-Чалтун, Л. Агаков, С. Ялавин).

30-мĕш çулсен вĕçнелле ача-пăча прозаикĕсенчен чылайăшĕн жанрпа стиль уйрăмлăхĕсем палăрса çитеççĕ. Трубина Мархвин пултарулăхĕ çӳллĕрех шая çĕкленет. Вăл жанрпа тематика тĕрлĕенлĕхĕпе пуянланать. Унăн эткерлĕхĕнче ача сăнарĕ, творчествăлла ĕç, кăмăл-сипет ыйтăвĕсем мала тухса тăраççĕ. Хайлавĕсем композици тĕлĕшнчи пиçĕлĕхпе, тăпăл-тăпăллăхпа палăрма пуçлаççĕ.

---

[1] Канюков В. Я. Основные этапы развития чувашской детской литературы: автореферат дис. – М., 1954. – 12 с.

В. Родионов профессор ун пирки питĕ тĕрĕс калать: «Вăл хăйĕн проза хайлавĕсене çĕнĕ, хытарса çитернĕ эстетика виçисемпе пăхса-хакласа çырать. Пурнăçа лайăх пĕлни унăн сăнарĕсенчи чĕрĕлĕхпе кăткăслăха ăсталама май парать»[1]. «Арçури», «Аякри тăвансем валли», «Ĕлĕк вĕренни», «Хăнаран» тата ытти калавĕсем прозаик ĕлĕкхи пулăмсемпе çав вăхăтри пурнăç çинчен ансат та ĕнентерӳллĕ çырма пĕлнине çирĕплетсе параççĕ.

30-мĕш çулсен вĕçнелле Л. Агаковпа М. Данилов-Чалтунăн та çырас ăсталăхĕ палăрмаллах ӳсет. Пĕрремĕшĕ ĕç-пуçа реалистла типласа, сăнарсене индивидуализацилесе сăнлас меслете алла илсе пырать («Пĕрре çуркунне»). Иккĕмĕш писателĕ пĕчĕк калавсене ансат та асра юлмалла калăплас енĕпе палăрать («Шахтăра», «Якку»). С. Ялавинпа («Хисеплĕ Кĕçтенкки») С. Шăпчăк («Ваççа») калав картинче уйрăм ача шăпине уçса парас тĕлĕшпе ăнăçусем тăваççĕ. Иван Мучи ача-пăча прозине кулăш туртăмĕллĕ хайлавсемпе («Кулă-юмах – çулă çăмах» кĕнеке) вăйлатать. Çамрăк ăру К. Чулкаçăн «Сунарçă халапĕсем» ярăмне, унăн хăюллă та харсăр геройне, аптраман чăваша Лапшу Çтаппанне ăшпиллĕн йышăнать.

30-мĕш çулсенче ача-пăча поэзийĕ те ăнăçлă утăмсем тăвать. Ухсай Яккăвĕ хăйĕн «Пуканесен бригади» поэмипе ырă йĕр хăварать, литература конкурсĕнче 3-мĕш премие тивĕçет (1935). Поэтсем сăвăлла юмах жанрне малалла аталантараççĕ (Ухсай Яккăвĕн «Кăмака çинчи Иванĕ», «Телей юмахĕ», И. Ивникăн «Телей çулĕ», В. Бараевăн «Али-паттăрĕ»). Н. Полорусов-Шелепи, С. Элкер, Ухсай Яккăвĕ, П. Хусанкай, И. Ивник, Н. Янкас, Уйăп Мишши, Г. Краснов-Кĕçĕнни, Мĕтри Васлейĕ, Н. Пиктемир тата

---

[1] Родионов В. Чăваш литератури. 1917–1930-мĕш çулсем. – Шупашкар, 2008. – 259 с.

ыттисем ачасене, уйрăмах кĕçĕн тата вăтам çулхисене, паха сăвăсем парнелеççĕ. Çав хайлавсенче паттăрлăхпа патриотлăх туртăмĕсем, пурнăçри чăнлăхлă пулăмсем, тăван тавралăх, йывăç-курăкпа чĕр чун тĕнчи, пĕчĕк туссен витĕмлĕ сăнарĕсем тĕп вырăнта. Н. Полорусов-Шелепин, И. Ивникăн тата Ухсай Яккăвĕн сăввисене халăхлăх, классикăлла наци поэзийĕн традицийĕсем витерсе тăраççĕ. Çак тапхăрта сăпка юррисем тăтăш пичетленеççĕ (П. Хусанкай, С. Константинов, И. Ивник, Уйăп Мишши). Ытти чĕлхесенчен куçарнисем те çук мар (Джамбул, М. Лермонтов).

Вăрçă умĕнхи вунăçуллăхра, унчченхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, ачасем валли çырнă пьесăсен шучĕ кăштах ӳсет. Ача-пăча литература критики çуралать. Хаçат-журналта Н. Дедушкин, Л. Агаков, Уйăп Мишши, И. Викторов, Е. Романова, И. Яковлев, М. Митрофанов тата ытти тĕпчевçĕсен статйисем пичетленеççĕ.

Çак хутлăхра ача-пăча хайлавĕсен тĕп геройĕсем ачасем хăйсем пулса тăма тытăнаççĕ. Писательсем пур сыпăкри ачасене те асра тытса ĕçлеççĕ. Издательство вĕсен ӳсĕмне кура кĕнекесене ятарласа библиотекăсемпе кăларать. Шкул çулне çитиччченхисемпе кĕçĕн классене çӳрекенсене ытларах сăвăсем, вăтам сыпăкрисене калавсемпе повеçсем, аслă классенче вĕренекенсене повеçсемпе поэмăсем халалаççĕ.

Жанр енĕпе тĕрлĕ енлĕ пулни 30-мĕш çулсенчи ача-пăча литературине сăнарлăх тĕлĕшпе малалла кайма пулăшать. Унăн обществăлла пĕлтерĕшĕ, илемлĕх шайĕ палăрмаллах ӳсет. Çак çулсенче çамрăк ăрăвăн ĕлĕкхи тата хальхи пурнăçне, çĕр-шыври лару-тăрăва, уйрăм ачасен шăпине чăнлăхлă сăнласа паракан хайлавсем çуралаççĕ. Литература çамрăк вулаканпа çывăхланать, ăна кăсăклантаракан ыйтусене хастарлăрах хускатма тытăнать. Çыравçăсем ачасен чун-чĕрине туярах,

психологине ăнланарах ĕçлеме пуçлаççĕ.

Наци ача-пăча литературин 30-мĕш çулсенче тунă ӳсĕмĕнче ача-пăча пичечĕн – «Хатĕр пул» журналпа «Пионер сасси» хаçатăн тӳпи пысăк.

## ТУПМАЛЛИ


УМСĂМАХ ........................................................................ 3

I сыпăк. 20-МĔШ ÇУЛСЕНЧИ АЧА-ПĂЧА ЛИТЕРАТУРИН АТАЛАНУ УЙРĂМЛĂХĔСЕМ ....... 11

Поэзи ........................................................................ 16
Проза ........................................................................ 27
Драматурги ........................................................................ 42
Ыйтусемпе ĕçсем ........................................................................ 44
Усă курмалли литература ........................................................................ 44

II сыпăк. 30-МĔШ ÇУЛСЕНЧИ АЧА-ПĂЧА ЛИТЕРАТУРИНЧИ ЖАНРПА СТИЛЬ ШЫРАВĔСЕМ ........................................................................ 46

Поэзи ........................................................................ 49
Проза ........................................................................ 64
Драматурги ........................................................................ 82
Критика ........................................................................ 89
Ыйтусемпе ĕçсем ........................................................................ 94
Усă курмалли литература ........................................................................ 94

III сыпăк. НИКОЛАЙ ПОЛОРУССОВ-ШЕЛЕПИ 96

Ыйтусемпе ĕçсем ........................................................................ 102
Усă курмалли литература ........................................................................ 103

IV сыпăк. АЧА-ПĂЧА ЖУРНАЛĔПЕ ХАÇАЧĔ 104

«Хатĕр пул» журнал ........................................................................ 104
«Пионер сасси» хаçат ........................................................................ 118
Ыйтусемпе ĕçсем ........................................................................ 137
Усă курмалли литература ........................................................................ 137

ХЫÇСĂМАХ ........................................................................ 138

Учебное издание

Мефодьев Александр Иванович

# ЧУВАШСКАЯ ДЕТСКАЯ ЛИТЕРАТУРА

## 20–30-Е ГОДЫ

Учебное пособие

Подписано в печать 26.03.2010.
Формат 60х84/16. Бумага писчая. Печать оперативная.
Усл. печ. л. 9,0. Тираж 100 экз. Заказ №        .

ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический
университет им. И. Я. Яковлева»
428000, Чебоксары, ул. К. Маркса, 38

Отпечатано в отделе полиграфии
ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический
университет им. И. Я. Яковлева»
428000, г. Чебоксары, ул. К. Маркса, 38